Т. М. МАТВЕЙĔВ, Ф. Т. ТИМОФЕЙĔВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

## МОРФОЛОГИ

5-мĕш вĕрену çулĕ

…аке 1 тенкĕ
Переплĕт 35 п

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТЕЛСТВИ
ШУПАШКАР — 1933

Ас(чув
К М33

Чув
3-157/1а

Т. М. МАТВЕЙЁВ, Ф. Т. ТИМОФЕЙЁВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

## *МОРФОЛОГИ*

*5-МĔШ ВĔРЕНŸ ÇУЛĔ*

ЧАССР Халăх çутĕç комиссариачĕн коллегийĕ çирĕплетнĕ

Г.П.Б. в Лнгр.
Ц 1934 г.
Акт. № 342

Инв. № 703

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР □ 1933

ПРОВЕРЕНО 07

Отпечатано в типографии, №1
Чувашгиза г. Чебоксары,
Канашская, 16.

28321-чув.
Республиканская
библиотека
им. А. Горького
Чувашской АССР

## КӐРТЕМ.

Епӗр хамӑрӑн шухӑшсене, ӑнланусене чӗлхепе тӗрлӗ пуплевсем, сӑмахсем каласа пӗлтеретпӗр. Шухӑшсене, ӑнланусене пӗлтерме чӗлхенӗн хӑйӗн йӗрки, саккунлӑхӗсем пур. Чӗлхен йӗркине, саккунлӑхӗсене вӗренекен ӑслӑлӑха грамматикӑ теҫҫӗ.

Грамматикӑ икӗ пысӑк пайа уйӑрӑлса тӑрать. Пӗр пайӗ—морфологи. Вӑл сӑмахсен пӗлтерӗшлӗ пайӗсем ҫинчен, вӗсем калаҫура мӗнле улшӑнни ҫинчен вӗрентет. Иккӗмӗш пайӗ—ҫинтӑкҫис. Ҫинтӑкҫис вӑл сӑмахсем пуплевре йепле сыхӑнса тӑни ҫинчен, тата пуплевсем хӑйсем пӗр-перинпе йепле ҫыхӑнса тӑни ҫинчен вӗрентет. Шкулта вӗрентекен грамматикӑ кӗнекинче тата фонетикӑ ҫинчен—сасӑсен уйрӑмлӑхӗсем ҫинчен—калаҫҫӗ. Фонетикӑран хӑшпӗр пӗлӳсене вӗренни морфологийе, орфографийе ӑнланма пулӑшать.

Орфографи тесе сӑмахсене мӗнле ҫырмалине кӑтартса паракан правилӑсен йӗркине калаҫҫӗ.

Шкулта тата чарӑну паллисене (пӑнча, ыйту паллине, кӑшкӑру паллине, хӳрелӗ пӑнча, т. ыт. те) йепле лартмалине вӗренеҫҫӗ. Вӗсене тӗрӗс лартни ҫырнине тӗрӗс ӑнланма пулӑшать. Вӗсене йепле лартмалин йӗркине пунктуаци теҫҫӗ.

Грамматикӑна вӗренни пире тӗрлӗ йенчен кирлӗ. Ӑна вӗренсе, епӗр:

1) чӗлхенӗн саккунлӑхӗсене ӑнланатпӑр,
2) калаҫупа ҫыру чӗлхине лайӑхрах ӑталантаратпӑр,
3) хамӑрӑн ӑс-тӑна ытларах уҫатпӑр.

Орфографипе пунктуацийе вӗренни ҫырнине тӗрӗс вулама, хӑвӑрт ӑнланма пулӑшать, тата хамӑра ҫӑмӑл, тӗрӗс ҫырма вӗрентет.

## ПУПЛЕВ.

### I §. Пуплев ҫинчен кӗскен калани.

Етем хӑй мӗн шухӑшланине, мӗн пӗлнине, мӗн тӑвас тенине ытти ҫынна сӑмахпа каласа парать. Шухӑша пӗр сӑмахпа та, темиҫе сӑмахпа та калама пулать.

Тӗслӗх. Уйра трактӑрсем кӗрлеҫҫӗ. Ҫӗр айӗнчен тимӗртӑмӑрсене кӑларатпӑр. Савӑт. Корпуссем чӗтреҫҫӗ.

Кунта малтанхи шухӑша виҫӗ сӑмахпа, иккӗмӗшне тӑватӑ сӑмахпа, виҫҫӗмӗшне пӗр сӑмахпа, тӑваттӑмӗшне икӗ сӑмахпа каланӑ.

Уйрăм шухăша пĕлтерекен пĕр сăмаха йе темиçе сăмаха п у п л е в теççĕ.

Хапрăк трупи кăшкăртрĕ. Рабочисем ĕçлеме тытăнчĕç. Машинăсем çавăрăнаççĕ. Машинăсем аван ĕçлеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене рабочисем тирпейлĕ тытаççĕ, тата пĕлсе ĕçлеççĕ.

Кунта епĕр тăватă пуплев куратпăр.

Калаçу чĕлхинче пуплевсене пĕр-иĕринчен уйăрма йăвăр мар: пуплев вĕçĕнче сасă анаť, тата епĕр кашни пуплев хыççăн кăшт чарăнса тăратпăр.

Пуплев тăвакан сăмахсем, шухăша пĕлтерме, пĕр-пĕринпе грамматикă саккунĕсем тăрăх çыхăнса тăраççĕ: пуплеври сăмахăн кашнин хăйĕн вырăнĕ пулаť, хăш сăмах сыпăк йышăнаť, хăшĕ йышăнмасť, тата çыхăну тума пуплевре пĕтĕçтерӳсем пулма пултараççĕ.

Пуплеври сăмахсен çыхăнăвне ыйтусем тăрăх та пĕлме пулаť.

Т ĕ с л ĕ х. *Урамра хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшеççĕ.* Кунта мĕн çинчен каланă? *Йалавсем* çинчен. Йалавсем мĕн тăваççĕ? *Йалавсем вĕлкĕшеççĕ.* Мĕнле йалавсем вĕлкĕшеççĕ? *Хĕрлĕ йалавсем.* Ăçта вĕлкĕшеççĕ? *Урамра вĕлкĕшеççĕ.*

*Ачасем шкулра грамматикă вĕренеççĕ.* Ачасем мĕн тăваççĕ? *Ачасем вĕренеççĕ.* Мĕн вĕренеççĕ? *Грамматикă вĕренеççĕ.* Ăçта вĕренеççĕ? *Шкулра вĕренеççĕ.*

Пуплеври сăмахсен çыхăнăвне схемă туса кăтартма пулаť.




## 2 §. Пуплев уйрăмĕсем.

1. Пуплевпе епĕр мĕн çинчен те пулин калатпăр, пĕлтеретпĕр пулсан, ун пек пуплеве к а л у л ă пуплев теççĕ. Калулă пуплев вĕçĕнче сасă анаť.

Т ĕ с л ĕ х. Епĕр пит йăвăр ĕçсене турăмăр. Епĕр капиталисăма çĕмĕрсе тăкрăмăр. Епĕр влаçа хамăр алла илтĕмĕр. Епĕр шултăра социалисăмлă индустри турăмăр. Епĕр вăтам хресчене социалисăм çулĕ çине çаварса йатăмăр. *(Сталин).*

2. Ыйтса каланă пуплеве ы й т у л ă п у п л е в теççĕ.

Ыйтулă пуплевре ыйту сăмахĕсем (*кам? мĕн? кама? мĕне? мĕнле? миçе? хăçан?* йышши сăмахсем), тата ыйту таттисем (*и. ши* татăсем) пулма пултараççĕ. Кунсăр пуçне тата ыйтулă пуплевĕн уйрăм интонаци—ыйту интонацийĕ пур.

**Тĕслĕх.** Сиртен кам ударник? Епĕр малтанхи пилĕкçуллăха миçе çулта тултартăмăр? Епĕр пайан клуба кайатпăр-и? Пухăва пурте пуçтарăнăпăр-ши?

3. Пуплеве (тĕлĕннĕ чухне, хăранă чухне, çиленнĕ чухне, чĕннĕ чухне) вăйлăн, кăшкăрса калатпăр пулсан, ун пек пуплеве **кăшкăрулă пуплев** теççĕ.

Кăшкăрулă пуплевре чĕвĕсем (*ах, ех, ой, ай, уй* йышши сăмахсем) пулма пултараççĕ.

**Тĕслĕх.** Ну, ĕçлерĕмĕр те! Ай-уй, мĕн хăтланнă есĕр! Çитет! Тăрăр часрах! Ей, пулемйот хатĕрле!

### 3 §. Пуплевсем хыççăн чарăну палли лартасси.

1. Калулă пуплев хыççăн пăнчă (.) лартаççĕ.
2. Ыйтулă пуплев хыççăн ыйту палли (?) лартаççĕ.
3. Кăшкăрулă пуплев хыççăн кăшкăру палли (!) лартаççĕ.
4. Хăш чухне каласа пĕтермен пуплеве çырма тивет. Каласа пĕтермен пуплев хыççăн нумайпăнчă (...) лартаççĕ.

**Тĕслĕх.** **Сасă.** Ачу пурнат-ха. Хуŋаму панче.

**Чакка.** Иљуш ман!.. Çав çех... Ăçта-ши вĕсем?

**Сасă.** Килмен-ха. Вĕсем Хумпуç йалĕнче... (*Елк.*).

### 4 §. Пуплевĕн хуçипе калавĕ.

Пуплевре шухăшăн тĕп йапалине пĕлтерекен—*кам? мĕн?* тесе ыйтăнакан сăмаха **пуплев хуçи** теççĕ.

**Тĕслĕх.** *Председатĕл ларăва уçрĕ.* Кам уçрĕ? Председатĕл. *Председатĕл*—пуплевĕн хуçи. *Йăвăç çатăртатса ӳкрĕ.* Мĕн ӳкрĕ? Йăвăç. *Йăвăç*—пуплевĕн хуçи. *Чул выртат. Лаша—выљăх. Хурçă çирĕп.* Ку пуплевсенче хуçасем *чул, лаша, хурçă* сăмахсем пулаççĕ.

Пуплевре хуçа мĕн тунине, йе вăл мĕн иккенне, йе мĕнлине кăтартакан сăмаха **пуплевĕн калавĕ** теççĕ.

а) Калав хуçа мĕн тунине пĕлтерет—*мĕн тăват? мĕн тăваççĕ? мĕн турĕ?* тесе ыйтăнат.

**Тĕслĕх.** *Машинăсем пĕр чарăнмасăр çаврăнаççĕ.* Машинăсем мĕн тăваççĕ? Çаврăнаççĕ. *Çаврăнаççĕ*—калав. *Çĕнĕ хуласем шăтса тухаççĕ.* Хуласем мĕн тăваççĕ? Шăтса тухаççĕ. *Шăтса тухаççĕ*—калав.

б) Калав хуçа мĕн иккенне кăтартса тăрат, *мĕн вăл?* тесе ыйтăнат. *Ыраш—тырă.* Мĕн вăл ыраш? Тырă. *Тырă*—калав. *Трактăр—машинă.* Мĕн вăл трактăр? Машинă. *Машинă*—калав.

в) Калав хуçа мĕнлине кăтартса тăрат, *мĕнле?* тесе ыйтăнат. *Кĕрхи кун кĕске.* Кĕрхи кун мĕнле? Кĕске. *Кĕске*—калав. *Кăранташ çĕнĕ.* Кăранатш мĕнле? Çĕнĕ. *Çĕнĕ*—калав.

Пуплевре хуçа пулакан сăмах—йат, вĕçлевĕнчи сăмах: *Студент* кĕнеке вулат. Епĕ çыру çыратăп. *Студент, епĕ* сăмахсем кунта хуçа пулаççĕ.

Пуплевре калав пулакан сăмах—ĕçхĕл, йат вĕçлевĕнчи йапала йачĕ, паллă йачĕ: Лаша вутă *турттарат.* Лаша—*выљăх.* Лаша—*вăйлă. Турттарат, выљăх, вăйлă* сăмахсем кунта калав пулаççĕ.

### 5 §. Ăнлантару сăмахĕсем.

Пуплевре, хуçапа калавсăр пуçне, тата **ă н л а н т а р у  с ă м а х ĕ с е м** пулма пултараççĕ. Ăнлантару сăмахĕсем хуçана, калава ăнлантарса параççĕ.

Т ĕ с л ĕ х. *Хулара пысăк демонстраци пулчĕ.* Кунта *пысăк* сăмахпа *хулара* сăмах ăнлантару сăмахĕсем пулаççĕ. Мĕнле демонстраци? Пысăк демонстраци. *Пысăк* сăмах хуçана ăнлантарса парать. Ăçта пулчĕ? Хулара пулчĕ. *Хулара* сăмах калава ăнлантарса парать.

*Ударниксем ăмăртса ĕçлеççĕ.* Кунта *ăмăртса* сăмах—ăнлантару сăмахĕ, калава ăнлантарса парать. Ударниксем мĕнле ĕçлеççĕ? *Ăмăртса* ĕçлеççĕ.

Хăш пуплевре тата ăнлантару сăмахĕн хăйĕн ăнлантару сăмахĕ пулма пултарать.

Т ĕ с л ĕ х. *Епĕ çĕнĕ кĕнеке илтĕм.* Ку пуплевре *кĕнеке* сăмах ăнлантару сăмахĕ, *çĕнĕ* сăмах ăнлантару сăмахĕн ăнлантарăвĕ пулса тăрать.

### 6 §. Пуплеври сăмахсен çыхăнăвĕ.

Хуçана, калава, ăнлантару сăмахне **п у п л е в  ч л е н ĕ с е м** теççĕ.

Хуçапа калава **а с л ă  ч л е н** теççĕ, ăнлантару сăмахне **к ĕ ç ĕ н  ч л е н** теççĕ.

Пуплеври членсем пĕр-пĕринпе **к и л ĕ ш ӳ  й ĕ р к и п е**, **т ы т ă м  й ĕ р к и п е**, тата **ç у м  й ĕ р к и п е** çыхăнса тăраççĕ.

1. *Епĕ* утă *çултăм.* — *Есĕ* тырă *вырăн.*
   *Епĕр* утă *çултăмăр.* — *Есĕр* тырă *вырăр.*
   *Лаша* (*вăл*) улăхра *çӳрерĕ.*
   *Лашасем* (*вĕсем*) улăхра *çӳрерĕç.*

Çак тĕслĕхсенче епĕр акă мĕн куратпăр: Хуçа пĕррелĕ хисепре пулсан, калавĕ те пĕррелĕ хисепре пулать. Хуçа нумайлă хисепре пулсан, калавĕ те нумайлă хисепре пулать. Хуçа пĕрремĕш сăпатра пулсан, калавĕ те пĕрремĕш сăпатра пулать. Хуçа иккĕмĕш сапăтра пулсан, калавĕ те иккĕмĕш сăпатра пулать.

Ĕçхĕл хаљхи вăхăтра, пулас вăхăтра, курса иртнĕ вăхăтра пулсан, хуçапа калав сăпат йенчен, хисеп йенчен килĕшсе тăраççĕ. Çавăн пек çыхăнăва **к и л ĕ ш ӳ  ç ы х ă н ă в ĕ** теççĕ.

2. Ачасем *вăлтапа* пулă *тытаççĕ.* Рабочисем *савăта кайрĕç.* Рабочисем *савăтран таврăнчĕç.*

Кунта *вăлтапа, савăта, савăтран* сăмахсем калава ăнлантарса тăраççĕ. *Тытаççĕ* сăмах, мĕнпе тытнине кăтартма, пĕрпулу вĕçлевне ыйтать, вара *вăлта* сăмах пĕрпулу вĕçлевĕнче пулать: *вăлтапа тытаççĕ. Кайрĕç* сăмах, ăçта кайнине кăтартма, пару вĕçлевне ыйтать, вара *савăт* сăмах пару вĕçлевĕнче пулать: *савăта кайрĕç. Таврăнчĕç* сăмах, ăçтан таврăннине кăтартма, туху вĕçлевне ыйтать, вара *савăт* сăмах туху вĕçлевĕнче пулать: *савăтран таврăнчĕç.*

*Тытаççĕ, кайрĕç, таврăнчĕç*—т ы т с а т ă р а к а н с ă м а х с е м, *тытапа, савăта, савăтран*—т ы т ă н с а т ă р а к а н с ă м а х с е м. Тытăнса тăракан сăмахсен форми тытса тăракан сăмахсенчен килет.

Пуплевре пĕр сăмахĕ тытса тăраканни пулаť пулсан, тепĕри тытăнса тăраканни пулаť пулсан, ун пек çыхăнава т ы т ă м ç ы х ă н ă в ĕ теççĕ.

Тытăм йĕркипе пуринчен ытла ĕçхĕлпе йатмар вĕçлевсенчи йапала йачĕсем çыхăнса тăраççĕ. Ĕçхĕлсем т ы т с а т ă р а к а н н и с е м, йатмар вĕçлевсенчи сăмахсем т ы т ă н с а т ă р а к а н н и с е м, кĕскереххĕн каласан, т ы т ă н с а т ă р а н с е м пулаççĕ.

| | | |
|---|---|---|
| Т ĕ с л ĕ х с е м: | вăрмана кайнă | хачăпа касаççĕ |
| | вăрманта ĕçлет | кĕпене çĕлеççĕ |
| | вăрмантан килнĕ | Уçăпăн (тетраť) пĕтнĕ |

3. Епĕ *çĕнĕ кĕнеке* вулатăп. *Çĕнĕ кĕнекесенче* картинă пур. Епĕ хулана *пайан кайрăм*. Вĕсем хуларан *пайан таврăнчĕç*.

Кунта *çĕнĕ* сăмахпа *кĕнеке* сăмах, *çĕнĕ* сăмахпа *кĕнекесенче* сăмах, *пайан* сăмахпа *кайрăм* сăмах, тата *пайан* сăмахпа *таврăнчĕç* сăмах çыхăнса тăраççĕ.

Кунта çак сăмахсем килĕшнине те, тытăмлă пулнине те курмастпăр. Кунта *çĕнĕ* сăмахпа *пайан* сăмах хăйсем ăнлантарса паракан сăмах умĕн кăна тăраççĕ, хăйсен формисене пĕртте улăштармаççĕ. Çакăн пек çыхăнава ç у м ç ы х ă н ă в ĕ теççĕ.

Çум йĕркипе пуринчен ытла паллă йачĕсемпе йапала йачĕсем, тата ĕçхĕл çумĕсемпе ĕçхĕлсем çыхăнса тăраççĕ. Паллă йачĕсемпе ĕçхĕл çумĕсем кунта ç у м с е м пулаççĕ, йапала йачĕсемпе ĕçхĕлсем ç у м й ы ш ă н а к а н н и с е м пулаççĕ. Тĕслĕхсем:

| | |
|---|---|
| хĕрлĕ кĕтес | час килчĕ |
| çемçе курăк | аран çитрĕ |
| пысăк çурт | унта ӳсет |

## 7 §. Тулли пуплевпе тулли мар пуплев.

Хăш чухне шухăша пуплевĕн хăшпĕр членне каламасăрах ăнланма пулаť. Ун пек член тухса ӳкме пултараť. Анчах çав тухса ӳкнĕ члена йăнăшмасăрах тĕрĕс тупма пулаť.

*Çанталăк ăшă-и? Ăшă.* Кунта, иккĕмĕш пуплевре хуçи (*çанталăк*) çук.

*Кам килчĕ? Иичче.* Кунта, иккĕмĕш пуплевре, калавĕ (*килчĕ*) çук.

*Пайан физикă пулат-и? Пулат.* Кунта хуçине (*физикă*), тата ăнлантару сăмахне (*пайан* сăмаха) каламан.

*Есĕ киле хăçан кайатăн? Ыран.* Кунта хуçи (*есĕ*), калавĕ (*кайатăн*), тата пĕр ăнлантару сăмахĕ (*киле*) çук. Епĕр кунта шухăша хуçипе калавне, тата пĕр ăнлантару сăмахне каламасăрах тĕрĕс ăнланатпăр.

Пуплевре пур член та пулсан, ăна т у л л и п у п л е в теççĕ. Пуплевре пĕр-пĕр членне каламан пулсан, анчах ăна тĕрĕссипех тупма пулаť пулсан, ун пек пуплеве т у л л и м а р п у п л е в теççĕ.

Туллимар пуплевсене пуринчен ытла калаçнă чухне: пĕрн ыйтнă чухне, тепĕри ответ панă чухне калаççĕ.

## 8 §. Хуçалă пуплевпе хуçасăр пуплев.

Хăшпĕр пуплевĕн хуçи пулмасть. Анчах ăна тупма пулать. *Мĕнле пурăнатăн? Аван пурăнатăп.* Çак пуплевсенче хуçине каламан, анчах вĕсем каламасăрах паллă: малтанхи пуплевĕн хуçи—*есĕ* сăмах, иккĕмĕш пуплевĕн хуçи—*епĕ* сăмах. Çак сăмахсемсĕр пуçне, урăх нимĕнле сăмах та кунта хуçа пулма пултараймасть.

Хăшпĕр пуплевĕн хуçи пулмасть, тата ăна тупма та çук. *Трактăрпа сухалаççĕ. Тыра выраççĕ. Ачасен киле каймала.*

Камсем „*трактăрпа сухалаççĕ*", камсем „*тырра выраççĕ*": колхозниксем-и, трактористсем-и, çынсем-и, ачасем-и, вĕсем-и, çавсем-и, кĕсем-и— епĕр çавна чăн тĕрĕссипе калама пултараймастпăр: вĕсем паллă мар.

Пуплевре хуçи çук пулсан, ăна тупма та çук пулсан, ун пек пуплеве **хуçасăр пуплев** теççĕ.

Хуçи пулсан, йе ăна пĕр йăнăшсăрах тупма пулать пулсан, ун пек пуплеве **хуçалă пуплев** теççĕ.

## 9 §. Йат пуплев.

Хăш пуплевре хуçи пулать, анчах калавне нийепле те тупма пулмасть.

Ун пек пуплеве **йат пуплев** теççĕ.

*Атăл. Ваңукпа иксĕмĕр пăрахутпа пыратпăр.* Кунта малтанхи пуплевре калавĕ çук, ăна тупма та çук. *Атăл*—йат пуплев пулать.

*Хĕвеллĕ кун. Савăт ĕçлет, йурлать вăл, савăнать.* Кунта та малтанхи пуплев—йат пуплев.

Йат вĕçлевĕнче ларакан кĕнеке-хаçат йачĕсем, статйа йачĕсем, учреждени йачĕсем—йат пуплевсем пулаççĕ. Тĕслĕхсем:

| | |
|---|---|
| Иванов, „Нарспи". | Епĕ Мускаври вĕренни. |
| Ваçанкка, „Октабĕр çулĕ". | Çутĕç комиссариачĕ. |

## 10 §. Хутсăр пуплевпе хутлă пуплев.

Икĕ шухăш йе темиçе шухăш пĕрлешсе пĕр пысăкрах шухăш—хутлă шухăш пулса ларма пултарать. Хутлă шухăша **хутлă пуплевпе** калатпăр. Хутлă пуплев **ахаль (хутсăр)** пуплевсенчен пулать. Кашни хутсăр пуплевĕн хăйĕн хуçи хăйĕн калавĕ пулать.

| Хутсăр пуплевсем. | Хутлă пуплевсем. |
|---|---|
| 1. Пĕлĕт айĕнчен хĕвел курăнчĕ. Пуринĕн те сăнĕсем çуталса кайрĕç. | Пĕлĕт айĕнчен хĕвел курăнчĕ, пуринĕн те сăнĕсем çуталса кайрĕç. |
| 2. Хапрăк трупи кăшкăртрĕ. Рабочисем ĕçлеме тытăнчĕç. | Хапрăк трупи кăшкăртрĕ те, рабочисем ĕçлеме тытăнчĕç. |
| 3. Пулăçăсем пулă тытаççĕ. Ачасем шыва кĕреççĕ. Хурсем, кăвакалсем ишсе çӳреççĕ. | Кӳлĕре пулăçăсем пулă тытаççĕ, ачасем шыва кĕреççĕ, тата хурсем, кăвакалсем ишсе çӳреççĕ. |

Хутла пуплев—пĕр пĕтĕм пуплев: унăн пĕр пĕтĕм шухăш, пĕр пĕтĕм интонаци. Хутлă пуплев хыççăн каласура пĕр чарăну тăватпăр, çырура—пĕр пăнчă лартатпăр.

### 11 §. Хутлă пуплевсене тĕрĕс çырасси.

1. Хутлă пуплеври ахаљ (хутсăр) пуплевсем хушшине хўрелĕ пăнчă лартаççĕ.

2. Хутлă пуплевĕн йулашки ахаљ пуплевĕ умĕнчи пуплеве ăнлантарса парать пулсан, ăнлантарса паракан пуплев умĕн икĕ пăнчă лартаççĕ.

Пурте урама: Майăн пĕрремĕшĕ пайан! Студентсем кĕреçе йатнă: вĕсем çул йусама кайаççĕ.

## СĂМАХСЕМ.

### 12 §. Сăмахсен пĕлтерĕшĕ.

Епĕр шухăша пуплевпе калатпăр. Пуплевре пĕр сăмах йе темиçе сăмах пулать. С ă м а х тесе пĕр-пĕр ăнланăва пĕлтерекен сасăсен пĕрлелĕхне калатпăр.

1. Кашни сăмахăн хăйĕн уйрăм пĕлтерĕшĕ пур.

*Манăн алăра симĕс кăранташ пур*. Çак пуплевре пилĕк сăмах—пилĕк пĕлтерĕш.

Сăмахăн пĕлтерĕшĕ пĕрре мар, темиçе те пулма пултарать.

Сăмахран, *шыв* сăмах *ĕçекен шыва* та, *йухан шыва* та пĕлтерет: Епĕ шыв ĕçрĕм. Атăл Йевропăри шывсенчен чи пысăкки.

*Хура* тени *хура тĕсе* пĕлтерет: хура пустав; тата *таса маррине* те пĕлтерет: хура кĕпе, кĕпе хуралчĕ.

*Çĕр* тени *çĕре, тăпрана* пĕлтерет: Çĕр айĕнчен тимĕр чулĕсем кăлараççĕ; *вырăна* пĕлтерет: Есĕ пĕр *çĕре* пыр-ха; *вăхăта* пĕлтерет: Епĕ пынă *çĕре* пурте пуçтарăнса çитнĕ.

*Çын* тени *çын, етем* тенине пĕлтерет: Епĕ—çын. *Йут çын* тенине пĕлтерет: Çын умĕнче апла ан хăтлан. *Лайăх пурăнакан çын* тенине пĕлтерет: Вăл *çын* пулчĕ.

2. Сăмахăн, тĕп пĕлтерĕшĕсĕр пуçне, куçăмлă пĕлтерĕшĕ пулма пултарать.

*Хура* кун—*йăвăр* кун: Çавă хура кунсенче йашă, çамрăк пуçăма уcса йатăм пĕтĕмпех (*„Бурлак“*). *Хура* хăма—*намăс* хăми: Ударлă ĕçлекенсене хĕрлĕ хăма, услапсене—хура хăма (*Ф. Б.*). *Хура* кĕр—*йăвăç-курăк хытса ларнă* кĕр: Иртет хура кĕр—çитет сивĕ хĕл (*Ел.*).

*Çунать, касать, хыпать*—пĕр-пĕр ĕçе пит тăвасшăн тăрăшать: Петĕр хулана кайасшăн çунать.

*Ухват—кукăр*: Ухват урисемпе ыткăнтарса пырать. *Кайăк—пытанса çўрекен çын*: таркăн, вăрă: Ун патĕнче кайăк пур, тет. *Кайăк—шăши*: кушак кайăкĕ.

3. Хăш сăмахсем пĕлтерĕшĕ йенчен пĕр-пĕринпе пит çывăх пулаççĕ. Ун пек сăмахсене ç и н о в и м с е м теççĕ.

*Куљан* тенипе *хуйхăр* тени çинонимлă сăмахсем. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр майлă пулăма пĕлтереççĕ. *Хуйхăр* сăмах *куљан* сăмахран вăйлăрах пулăма пĕлтерет.

*Ĕçле, ту*—çинонимлă сăмахсем. *Ĕçле* тени пĕтĕмлĕрех калани пулаť, *ту* тени уйрăм йапалана, уйрăм ĕçе тумалине пĕлтерсе калани пулаť.

Тата çак сăмахсене илер: *нумай—чылай*. *Чылай* тени *нумай* тенинчен сахалтарах.

*Етем—çын, чылай—пайтах,* йе *çунаť—касаť—хыпаť*—çакăн пек çинонимлă сăмахсен пĕлтерĕшĕсене уйăрса калама йăвăр.

*Аван—лайăх, аш—какай*—пĕр пĕлтерĕшлĕ çинонимлă сăмахсем.

4. Хăш сăмах пĕлтерĕшĕсем тĕлме хирĕçлĕ пулма пултараççĕ: *чухăн—пуйан, ватă—çамрăк, хытă—çемçе, кĕр—тух, пар—ил.*

5. Икĕ сăмах сасăсем йенчен пĕр пекех, анчах пĕлтерĕшĕ йенчен пĕтĕмпех урăхла пулма пултараť.

*Пăрçа*—тырă йачĕ, *пăрçа*—çыртакан пăрçа.

*Çу*—апат çине йараканни, *çу*—çулталăк пайĕ, *çу*—шывпа çуни.

*Çĕр*—хисеп йачĕ (вунă вуннă), *çĕр*—ĕçхĕл йачĕ (пĕрене çĕрсе кайнă), *çĕр*—йапала йачĕ (икĕ çĕр каçрăм).

Икĕ ăнланăва пĕлтерекен, анчах пĕр пекех илтĕнекен сăмахсене **о м о н и м с е м** теççĕ.

Темиçе пĕлтерĕшлĕ пулнипе, куçăмлă пĕлтерĕшлĕ пулнипе, тата хăш пĕр пек илтĕнекен сăмахах тĕрлĕ йапалана пĕлтернипе, сăмаха ăнланасси—вăл ытти сăмахсемпе мĕнле çыхăнса тăнинчен (контекстран) килет. Контекста пăхса анчах, епĕр сăмаха тĕрĕс ăнланма пултаратпăр.

6. Хăш сăмах пĕр йышши йапала йатне пĕлтерет: çын, йуман, çырма, чăваш. Хăш сăмах пĕр уйрăм йапаланăн хăйĕн йатне анчах пĕлтерет: Петĕр, Иван Васильев, Атăл, Сăрă, Дон, Шупашкар, Мускав, Берлин, Америкă, Аврорă, Алтăр çăлтăр.

Пĕр йышши йапаласем хушшинче кашни йапалана хăйне уйрăм йат параççĕ пулсан, çавăн пек сăмахсене **п а й ă р й а т с е м** теççĕ.

Хăш ахаљ сăмахах пайăр йат пулма пултараť. Сăмахран, *чĕкеç*—кайăк йачĕ, анчах *Чĕкеç*—хĕр йачĕ, тата хушамат пулма та пултараť.

## 13 §. Сăмахсен пĕлтерĕшлĕ пайĕсем.

Сăмахăн **т ĕ п ĕ** пулаť, тата **с ы п ă к ĕ** пулма пултараť. *Çын, алă, пуç* сăмахсем пĕр вăхăтрах сăмахсем те, сăмах тĕпĕсем те пулса тăраççĕ.

*Çынсăр, алăлă, пуçлă* тесен, кунта *çын, алă, пуç* тенисем сăмах тĕпĕсем пулаççĕ; *сăр, лăх, лă* тенисем сыпăкĕсем пулаççĕ.

1. Тĕпĕсене пăхса, сăмахсене тăватă пайа уйăраççĕ: **х у т с ă р с ă м а х с е м, и к х у т к а л а к а н с ă м а х с е м, м ă ш ă р с ă м а х с е м, х у т л ă с ă м а х с е м.**

а) **Х у т с ă р с ă м а х** тесе пĕр тĕплĕ сăмаха калаççĕ. Ура, йуман, пулă, пулăçă, кай, кайакан сăмахсем хутсăр сăмахсем пулаççĕ.

б) **И к х у т к а л а н а к а н с ă м а х с е м** пĕр сăмахах икĕ хут каланипе пулаççĕ: кам-кам, аран-аран, час-час, кайа-кайа, çыра-çыра, ăçта-ăçта.

Кам-кам, кама-кама, мĕнрен-мĕнрен, ăçта-ăçта йышши сăмахсем хисеплесе тухмалине пĕлтереççĕ.

Çыра-çыра, кайа-кайа йышши сăмахсем ĕç темиçе хут пулнине пĕлтереççĕ.

Шăтăклă-шăтăклă, йăрăмăн-йăрăмăн йышши сăмахсем нумаййине (нумай шăтăклине, нумай йăрăмлине) пĕлтереççĕ.

Кунĕ-кунĕпе, курки-куркипе, йалĕ-йалĕпе йышши сăмахсем нумаййине, пĕтĕмĕшпе виçсе каланине пĕлтереççĕ.

Çырнă-çырнă—çырса пĕтерес. Вырнă-вырнă—лайăхрах вырăр. *Çырнă-çырнă, вырнă-вырнă* ик хут каланакан сăмахсем кунта „пĕрре çырма тытăннă пулсан", „пĕрре вырма тытăннă пулсан" сăмах майлашăвĕсем вырăнне пулаççĕ.

в) Мăшăр сăмахсем икĕ пĕр йышши сăмах пĕрлешнипе пулаççĕ: çăкăр-тăвар, сĕт-çу, хурт-кăпшанкă, тырă-пулă, ача-пăча, хуйхă-суйхă.

Мăшăр сăмахсем икĕ пĕрлешнĕ сăмах кашнийĕ уйрăм пĕлтернинчен пысăкрах йăпалана пĕлтереççĕ. Сăмахран, кĕнеке-хаçат шутне кĕнекепе хаçат анчах мар, унта шурнал та, альманах*) та кĕрет.

Ача-пăча, хуйхă-суйхă тени ачасен таврашне, хуйхă таврашне пĕлтерет.

Пиллĕк-улттă, утмăл-çитмĕл йышши мăшăр сăмахсем çывăхартса каланине пĕлтереççĕ.

Пиçнĕ-пиçмен, тунă-туман, килнĕ-килмен йышши мăшăр сăмахсем ĕç пĕтĕмпех пулса çитменнине пĕлтереççĕ.

г) Хутлă сăмахсем тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ сăмахсем пĕрлешнипе пулаççĕ: анкарти ← авăн карти, лешекки ← леш айакки, Мăнал ← Мăн йал. Патĕрйел ← Патăр йалĕ, çăраççи ← çăра уççи.

д) Хăш хутлă сăмахсем йури кĕскетсе тунипе пулаççĕ. Обком—партин Облăçри комитечĕ, ЧАССР—Чăвашсен автономлă социалисăмлă совет республикĕ, ЕХИ—ĕçлекенсемпе хресчевсен инспекцийĕ, йалкор—йалти кореспондент, МТС политпайĕ—машинăпа трактăр станцисен политикă пайĕ.

2. Сыпăкĕсене пăхса, сăмахсене икĕ пысăк пайа уйăраççĕ: сыпăксăр сăмахсем, сыпăклă сăмахсем.

Нимĕнле сыпăк та хушăнман сăмаха сыпăксăр сăмах йе пуçламĕш сăмах теççĕ. Сыпăксăр сăмах çав вăхăтрах тĕп сăмах пулса тăрать. Пулă, йуман, хура, пин, кай, кил сăмахсем сыпăксăр йе тĕп сăмахсем пулаççĕ.

Сыпăксăр сăмах çумне пĕр-пĕр сыпăк хушăннă пулсан, вăл сыпăклă сăмах пулать. Пулăçă, хастарлăх, кайăп, килĕп сăмахсем сыпăклă сăмахсем пулаççĕ.

Сыпăклă сăмахсем тĕрлĕ пулаççĕ.

Хăш сыпăксем пĕр сăмахран тепĕр сăмах, çĕнĕ сăмах, урăх ăнлава пĕлтерекен сăмах тăваççĕ. Хăш сыпăксем çĕнĕ сăмах тумаççĕ, сăмах формине, вĕçне анчах улăштараççĕ.

Пулăçă, хастарлăх, парăм, ларчăк, шухăшла сăмахсенчи çă, лăх, ăм, чăк, ла сыпăксем урăх сăмах тăвакан сыпăксем пулаççĕ.

---

*) Альманах — кĕнеке. Альманахра темиçе автăр произведенийĕсем пĕр кĕнеке пулаççĕ. Альманах вăхăтран вăхăта тухса тăрать.

Урăх сăмах тăвакан сыпăк хушăннă сăмахсене **иккĕмĕшле сăмахсем** теççĕ. Пулăçă, шурлăх, пару, тытăм, вĕçкĕн, шанчăк, сăмахла, кăвакар, çĕнел сăмахсем иккĕмĕшле сăмахсем пулаççĕ.

Пулăпа, вăрмантан, çырăп, çырăн, çырччăр сăмахсенчи **па, тан, ăп, ăн, чăр** сыпăксем çĕнĕ сăмах тумаççĕ, **сăмахăн формине вĕçне анчах улăштараççĕ.** Формăна улăштаракан сыпăксем сăмахсем вĕçленнĕ чухне, сăпатланнă чухне тĕл пулаççĕ.

3. Кашни сыпăкăн хăйĕн пĕлтерĕшĕ пур. Сăмахран, **çă-çĕ** сыпăк кам мĕнле ĕçпе пурăннине пĕлтерет: пулăçă—пулă тытакан, кĕтӳçĕ—кĕтӳ пăхакан; **кăн-кĕн** сыпăк ырăламан йапалана пĕлтерет: тыткăн, чупкăн, вĕçкĕн.

Хăш сыпăкăн пĕлтерĕшĕ темиçе те пулма пултарать. Сăмахран, **çă-çĕ** сыпăк мĕнле ĕçпе пурăнакана анчах мар, йапала мĕнлине те пĕлтерет: хăравçă—хăракан çын. Сем сыпăк нумайăйине пĕлтерет: ачасем; ушкăна пĕлтерет: Ивансем (Ивансем патне кайнă); ушкăнри йапаласенчен пĕрне пĕлтерет: елĕксем (елĕксем килчĕ): тĕрлĕ майлине пĕлтерет: пурăнăçсем (пурăнăçсем мĕнле унта?); хисепленине пĕлтерет: хĕрсем (Улҕки хĕрсем килчĕ).

## 14 §. Сăмахсене тĕрĕс çырасси.

1. Ик хут калакан сăмахсене, мăшăр сăмахсене кĕске йĕрпе сыпăçтарса çыраççĕ: лара-лара, час-час, тăла-çăпата, кĕнеке-хаçат.

2. Хутлă сăмахсене пĕрле çыраççĕ: асанне, улмуççи, çуркунне, чĕркĕмĕл, çĕрçырли.

3. Пайăр сăмахсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ: Хĕветĕр, Çергей, Иван Павлăвич, Александр Çергейĕвич Пушкин, Атăл, Çавал, Шупашкар, Мускав, Дубитĕл, Йединствă.

# ФОНЕТИКĂ.

## 15 §. Сасăсем. Алфавит.




1—сăмса хăвăлĕ, 2—тутасем, 3—шăлсем, 4—çăвар хăвăлĕ, 5—кĕçĕн чĕлхе, 6—чĕлхе, 7—карланкă.

Сăмахсем сасăсене уйăрăлса тăраççĕ. Кашни сăмахра темиçе сасă. *Етем* сăмахра тăвата сасă: е, т, е, м; *ан* сăмахра икĕ сасă: а, н.

Сасăсем тухчăр тесен, епĕр ӳпкерен сывлăш сывласа кăларатпăр. Ӳпкерен тухакан сывлăш хăйĕн çулĕ çинче: карланкăра, çăварта тĕрлĕ калаçу оргăнĕсене—**пыр чĕлĕхне, кĕçĕн чĕлхене, чĕлхене, шăлсене, тутасене** тĕл пулать. Мĕнле сасă тухни мĕнле сăмах каланинчен, тата çав калаçу оргăнĕсем мĕнле майлашса ĕçленинчен килет.

Чĕлхери сасăсене çырура уйрăм паллăсемпе çыраççĕ. Çавăн пек саспалли чăваш чĕлхинче 33. Саспаллисен çиçтемине **алфавит** теççĕ.

Чăваш çырăвĕнчи саспаллисен йĕрки çапла: а, ă, б, в, г, д, е, ĕ, ж, з, и, й, к, л, љ, м, н, њ, о, п, р, с, ç, т, ť, ч, у, ӳ, ф, х, ц, ш, ы.

Б, г, д, ж, з, ф, ц, о саспаллисене чăвашсен çырулăх чĕлхинче ытти чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсенче кăна çыраççĕ.

## 16 §. Уçă сасăсемпе хупă сасăсем.

Сасăсене икĕ пайа уйăраççĕ: у ç ă  с а с ă с е м, тата х у п ă  с а с ă с е м.




Хăшпĕр уçă сасăсене каланă чухне чĕлхе-çăвара мĕнле тытни.

А, у, о, ы, ă, е, ӳ, и, ĕ сасăсем у ç ă  с а с ă с е м пулаççĕ. Ытти сасăсем пурте х у п ă  с а с ă с е м пулаççĕ. Уçă сасăсем пурĕ—9, хупă сасă—24.

Уçă сасăсене каланă чух, епĕр çăвара хупă сасăсене каланă чухнехинчен ытларах уçатпăр. Хупă сасăсене каланă чух, аплах уçмастпăр. Уçă сасăсене каланă чух, сывлăш çăвартан ирĕккĕн тухаť. Хупă сасăсене каланă чух, калаçу органĕсем пĕр-пĕрне




Хăшпĕр хупă сасăсене каланă чухне чĕлхе мĕнле пулни.

перĕнсе, сывлăша ирĕккĕн тухма чараççĕ, йе сывлăш тухма пĕчĕк уçă вырăн анчах хăвараççĕ, йе сывлăш çулне пĕтĕмпех хупса лартаççĕ. Кун пек чух сывлăш çав пĕчĕк уçă вырăнтан сĕртĕнсе тухса кайаť, йе хупăннă çула пырса çапăнса уçса тухса кайаť.

Илтĕнессе уçă сасăсем таса, уçă илтĕнеççĕ. Хупă сасăсем вĕçем пекех таса, уçă илтĕнмеççĕ.

## 17 §. Сăмахри сасăсен килĕшĕвĕ.

### 1. Хытă уçă сасăсемпе çемçе уçă сасăсем.

Илтĕннине пăхса, уçă сасăсене икĕ пайа уйăраççĕ: а, у, ы, ă сасăсем хытă уçă сасăсем пулаççĕ; е, ӳ, и, ĕ сасăсем çемçе уçă сасăсем пулаççĕ.

Уçă сасăсен таблици.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Хытă уçă сасăсем | а | у | ы | ă |
| Çемçе уçă сасăсем | е | ӳ | и | ĕ |

Асăрхамали. Чăваш литератури чĕлхинче о сасă ытти чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче кăна тĕл пулать. Епĕр кунта ун пек сăмахри уçă сасăсем çинчен каламастпăр. Çавăнпа кунта уçă сасăсен хытăлăхпа çемçелĕх таблицине о сасса кӳртмен.

### 2. Хытă сăмахсемпе çемçе сăмахсем.

а) Çак сăмахсенче уçă сасăсем мĕнлине асăрхар:

| | | | |
|---|---|---|---|
| лаша | ыраш | вĕрене | сӳре |
| сурăх | тулă | çĕмĕрт | итле |

Пĕр сăмахра уçă сасăсем йе пурте хыттисем пулаççĕ, йе пурте çемçисем пулаççĕ.

б) Хупă сасăсем хытă уçă сасăлă сăмахсенче мĕнле илтĕннине асăрхар, тата çемçе уçă сасăлă сăмахсенче мĕнле илтĕннине асăрхар:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| тылă | вăрман | пар | кул | тат |
| тилĕ | вĕрене | пер | кӳл | тет |

Хытă уçă сасăлă сăмахсенче хупă сасăсем хытă илтĕнеççĕ, çемçе уçă сасăлă сăмахсенче çав хупă сасăсемех çемçе илтĕнеççĕ.

Хытă уçă сасăлă сăмахсене хытă сăмахсем теççĕ, çемçе уçă сасăлă сăмахсене çемçе сăмахсем теççĕ.

Вăрман, йуман, хурăн, кас сăмахсем хытă сăмахсем пулаççĕ. Вĕрене, пилеш, çĕмĕрт, йешĕл, ӳс сăмахсем çемçе сăмахсем пулаççĕ.

Хăш сăмахсенче, пуринчен ытла ытти чĕлхерен кĕнĕ сăмахсенче, хытă уçă сасă та, çемçе уçă сасă та пулма пултарать. Ун пек сăмахсене хутăш сăмахсем теççĕ.

Кĕркури, Верук, Иљуш, Митук, хăваттер пек сăмахсем, тата: атте, анне, путене, пурне сăмахсем хутăш сăмахсем пулаççĕ.

в) Сыпӑксем сӑмах тӗпӗпе килӗшеҫҫӗ: сӑмах тӗпӗ хытӑ пулсан, сыпӑксем те хытӑ пулаҫҫӗ; сӑмах тӗпӗ ҫемҫе пулсан, сыпӑксем те ҫемҫе пулаҫҫӗ. Тӗслӗхсем:

| | | | |
|---|---|---|---|
| пулӑ-ҫӑ | ҫыр-у | лаша-па | кай-атпӑр |
| тимӗр-ҫӗ | пӗл-ӳ | ӗне-пе | кил-етпӗр |

Нумайлӑх сыпӑкӗ **сем** (**сен**); виҫҫӗмӗш сӑпат сыпӑкӗ **ӗ**, **и**; умӗн пулнине пӗлтерекен **чӗ** сыпӑк, **иччен** сыпӑк, йӗрке сыпӑкӗ **мӗш**, тата **скер**, **серен** сыпӑксем сӑмах тӗпӗпе килӗшмеҫҫӗ, йалан ҫемҫе пулаҫҫӗ: лаша-сем, сурӑх-ӗ, лаш-и, пурччӗ, аванччӗ, кайиччен, тӑватӑмӗш, хураскер, каймассерен.

Ҫемҫе сыпӑк хыҫҫӑн литературӑ чӗлхинче йаланах ҫемҫе сыпӑксем хушӑнаҫҫӗ: лаша-сем-пе, лаша-сен-чен, сурӑх-ӗ-пе, сурӑх-ӗн-че, ани-не, ани-сен-е.

### 3. Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ.

Ҫак сӑмахсен сыпӑкӗсенчи уҫӑ сасӑсене танлаштарса пӑхар: кунта епӗр хытӑ сыпӑксенчи **а** вырӑнне, **у** вырӑнне, **ӑ** вырӑнне ҫемҫе сыпӑксенче мӗнле уҫӑ сасӑсем куратпӑр?

| | | | |
|---|---|---|---|
| йуман-ран | лаш-у | ҫыр-атпӑр | ҫыр-сассӑн |
| ҫӗмӗрт-рен | ӗн-ӳ | ӳкер-етпӗр | ӳкер-сессӗн |

Хытӑ сыпӑксенчи **а** вырӑнне ҫемҫе сыпӑксенче **е**, **у** вырӑнне **ӳ**, **ӑ** вырӑнне **ӗ** пулать.

Халӗ хӑш сӑмахсене тӗрлӗ калаҫура мӗнле каланине илер те вӗсен уҫӑ сассисене танлаштарса пӑхар:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| ҫемҫе | тӑрна | сехет | шит | ула | иш |
| ҫамҫа | тӗрне | сахат | шыт | ӳле | ыш |

Кунта та епӗр **а** вырӑнне **е**, **у** вырӑнне **ӳ**, **ӑ** вырӑнне **ӗ** пулнине куратпӑр, тата **ы** вырӑнне **и** пулнине куратпӑр.

**А** сасӑпа **е** сасӑ, **у** сасӑпа **ӳ** сасӑ, **ы** сасӑпа **и** сасӑ, **ӑ** сасӑпа **ӗ** сасӑ пӗр-пӗринпе мӑшӑрлӑ: вӗсем пӗр-пӗрин вырӑнне пулма пултараҫҫӗ.

Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑх таблици.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Хытӑ уҫӑ сасӑсем | а | у | ы | ӑ |
| Ҫемҫе уҫӑ сасӑсем | е | ӳ | и | ӗ |

Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ тӑрӑх, епӗр сӑмах вӗҫӗнче пулакан сыпӑка, тӗпне пӑхса, хыттӑн та, ҫемҫен те калама пултаратпӑр, тата вӗсене пӗр сыпӑк вырӑнне шутлатпӑр. Сӑмахран, хытӑ сӑмахра **нӑ** сыпӑк пулсан (сурӑх-ӑн, ҫемҫе сӑмахра **ӗн** пулать (кӗрӗк-ӗн); йе хытӑ сӑмахра **на** сыпӑк пулсан (лаша-на), ҫемҫе сӑмахра **не** сыпӑк пулать (ӗне-не). Ҫав **ӑн** сыпӑкпа **ӗн** сыпӑк, йе **на** сыпӑкпа **не** сыпӑк пӗр сыпӑках пулаҫҫӗ.

4. Хупă сасăсен хытăлăхпа çемçелĕх мăшăрлăхĕ.

Хупă сасăсем хытă сăмахра хытă, çемçе сăмахра çемçе илтĕнни хупă сасăсен хытăлăхпа çемçелĕх мăшăрлăхĕ пулса тăрать.

Р, л, н, м, в, п, к, х, ш, т сасăсем çак саккуна пĕтĕмпех пăхăнса тăраççĕ: вĕсем йаланӑх хытă сăмахра хытă, çемçе сăмахра çемçе илтĕнеççĕ: пар—пер, кул—кӳл, хура—хӳре, шал—шел, мăк—мĕк, панă—пенĕ.

С сасă йалан хытă илтĕнет (çемçе сăмахсенче кăшт çемçелет пулсан та, çемçелни тӳрех сисмеле палăрмасть): сар, сир, сут, сĕт, серте, сӳре.

Ç, ч сасăсем йалан çемçе илтĕнеççĕ—хытă сăмахра та, çемçе сăмахра та: çапă, çӳпĕ, çак, çеклĕ, çук, çӳхе, чакак, чĕрĕп.

Й сасă та йалан çемçе илтĕнет. Хăй тухса ӳкнĕ чух, вăл час-часах йунашар хупă сасăсене çемçетсе хăварать: айта—ать.

Й, ç, ч сасăсем çемçе сăмахсенче, çемçе татăксенче тата çемçерех илтĕнеççĕ: кайатăп—çийетĕп, çапă—çеклĕ, чар—чир.

Љ, њ, ть сасăсем те йаланах çемçе илтĕнеççĕ, анчах вĕсене хытă сăмахра, хытă татăкра кăна çыраççĕ: выља, мăкăњ, Иљуш, выљăх.

Ç, ч, љ, њ, ть, й сасăсене, йалан çемçе илтĕннĕрен, **çемçе хупă сасăсем** теççĕ.

---

Сасăсем сăмахра хытăлăхпа çемçелĕх йенчен пĕр-пĕринпе майлашса тăнине **сасăсен килĕшĕвĕ** йе **çингармонисăм** теççĕ.

Ку саккун тăрăх:

а) Сăмахра уçă сасăсем йе пурте хыттисем, йе пурте çемçисем пулаççĕ.

б) Хупă сасăсем хытă сăмахра, хытă татăкра хытă илтĕнеççĕ; çемçе сăмахра, çемçе татăкра çемçе илтĕнеççĕ.

в) Хытă тĕп хыççăн хытă сыпăксем, çемçе тĕп хыççăн çемçе сыпăксем пулаççĕ.

г) Уçă сасăсен мăшăрлăхĕ те, хупă сасăсен хытăлăхпа çемçелĕх мăшăрлăхĕ те çак тĕп саккунранах килет.

Чăваш чĕлхинчи сасăсем хăшпĕр тĕлсенче çингармонисăм саккунне пăхăнса тăмаççĕ. Çавăнпа епĕр чăваш чĕлхинче хутăш сăмахсем, тата хăшпĕр сыпăксем йалан çемçе пулнине куратпăр.

### 18 §. Йанăракан хупă сасăсемпе йанăраман хупă сасăсем.

Çак сасăсене йепле каланине сăнаса пăхар. Б, г, д, ж, з сасăсене каланӑ чух, пыр чĕлĕхĕсем карăнса тăраççĕ. Ӳпкерен тухакан сывлăш çав карăнса тăракан чĕлĕхсене пырса перĕнет те, чĕлĕхсем чĕтренеççĕ. Çавăнпа сасăсем йанăракан пулаççĕ. **П, к, т, ш, с** сасăсене каланӑ чух, пыр чĕлĕхĕсем лăнчă тăраççĕ, сывлăш вĕсем хуçшинчен ирĕккĕн, вĕсене пырса перĕнсе чĕтрентермесĕр тухса кайать. Çавăнпа, кун пек каласан, сасăсем йанăрамаççĕ.

Йанăраса илтĕнекен б, г, д, ж, з сасăсене йанăракан хупă сасăсем теççĕ. П, к, т, ш, с сасăсене йанăраман хупă сасăсем теççĕ.

Асăрхамали. Чăваш чĕлхинче тулли йанăраса илтĕнекен б, г, д, ж, з сасăсем ытти чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсенче кăна тĕл пулаççĕ: большевик, батрак, гектар, дежурни, инженер, зайом, задачă. т. ыт.

1. Чăваш чĕлхинчи п, к, х, с, ç, ш, т, ť, ч сасăсем йанăраман хупă сасăсем, анчах вĕсем икĕ уçă сасă хушшинче пулсан, йанăранă майлăрах—б, г, з, зь, ж, д, дь, джь майлăрах илтĕнеççĕ, х сасă вырăссен когда, богатый сăмахсенчи г сасă майлăрах илтĕнет. Тĕслĕхсем:

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| туп | тăк | тух | кас | каç | аш | çут | калаť | кулач |
| тупас | тăкăр | туху | касас | каçу | ашĕ | çутă | аťа | кулача |

Чăваш сăмахĕсенчи хупă сасăсене, йанăранипе йанăраманни тĕлĕшĕнчен пăхсан, çакăн пек таблицă туса уйăрма пулаť:

Хупă сасăсен йанăравлăх таблици.

| | | | | | | | | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Йанăраман хупă сасăсем | п | к | х | с | ç | ш | т | ť | ч | — | — | — | — | — | — | — | — |
| Йанăракан хупă сасăсем | б | г | г | з | зь | ж | д | дь | джь | й | р | л | љ | н | њ | м | в |

Ку таблицăна çапла ăнланмала:

а) П, к, х, с, ç, ш, т, ť, ч сасăсем икĕ тĕрлĕ илтĕнме пултараççĕ: хăш тĕлсенче йанăраççĕ, хăш тĕлсенче йанăрамаççĕ. Йанăрасан, п сасă б майлăрах, к сасă г майлăрах, х сасă когда сăмахри г майлăрах илтĕнет, т. ыт. çаплах. П-па б, к-па г, с-па з, т. ыт. пĕр-пĕрне мăшăрлă сасăсем пулаççĕ. Кун пек сасă пурĕ тăххăр.

Астăвас пулаť: йанăрасан та, çак тăхăр хупă сасă ытти чĕлхесенчен кĕнĕ б, г, д, ж, з сасăсем пекех вăйлă йанăрамаççĕ, вĕсенчен кайа йанăраççĕ.

б) Й, р, л, љ, н, њ, м, в хупă сасăсем—йалан йанăракан хупă сасăсем. Вĕсем йалан йанăраççĕ, йанăрамасăр нихăçан та илтĕнмеççĕ. Вĕсем мăшăрлă сасăсем мар. Кун пек сасă пурĕ саккăр.

2. П, к, х, с, ç, ш, т, ť, ч сасăсем икĕ уçă сасă хушшинче анчах мар, йалан йанăракан хупă сасăпа уçă сасă хушшинче пулсан та йанăраççĕ. Тĕслĕхсем:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| вăйсăр | Шупашкарта | килте | чулпа | лавпа | кăмпа |
| йунсăр | Самарта | кунта | вăйпа | лавсăр | кампа |

Çапла вара п, к, х, с, ç, ш, т, ť, ч сасăсене йанăравлă илтĕнме икĕ условирен пĕри кирлĕ: вĕсем йе икĕ уçă сасă хушшинче пулмала, йе йалан йанăракан хупă сасăпа уçă сасă хушшинче пулмала.

28321-чув
Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР

3. Халĕ çакăнта паллă тунă сасăсене пĕр-пĕринпе танлаштарса пăхар:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| пар | кил | çул | курак | аш |
| мана пар | кунта кил | мăн çул | курак ури | аш ил |

Кунта епĕр акă мĕн куратпăр. Сăмах пуçламĕшĕнчи, йе сăмах вĕçĕнчи хупă сасă, сăмахсене çыпăçтарса каланăран, икĕ уçă сасă хушшинче, йе йалан йанăракан хупă сасăпа уçă сасă хушшинче пулса тăрать те йанăравлă илтĕнекен пулать.

4. Çакăнта паллă тунă сасăсем, сăмаха татăкламасăр каласан тата татăкласа каласан, мĕнле илтĕннине сăнар:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| купа | пуртă | сăсăл | çăкасăр | лашапа | çыркалатăп |
| ку-па | пур-тă | сă-сăл | çă-ка-сăр | ла-ша-па | çыр-кала-тăп |

Йанăравлă илтĕнекен сасăсем, йанăравлăх условийĕ пĕтсен, йанăравсăр илтĕнекен пулаççĕ.

## 19 §. Сасăсем пĕрпекленни.

1. Чăваш чĕлхинче пĕр сăмахра (тĕпре) **с** сасăпа **с** сасă, **ç** сасăпа **ç** сасă, **ш** сасăпа **ш** сасă пулма туртăм пур; **с** сасăпа **ç** йе **ш** сасă, йе **ш** сасăпа **ç** йе **с** сасă питех тĕл пулмасть. Тĕслĕхсем:

**с—с**: сис, сӳс, сасă, сăвăс, сăсăл, сысна.

**ç—ç**: çиç, çӳç, çерçи, çеç, çеçке, çӳпçе.

**ш—ш**: шухăш, шăршă, шăши, шĕшкĕ, шăршăн, шушкă.

Сăмах пулăвĕ тăрăх, **с** сасă сăмахра **ш** сасăпа йунашар тăрать пулсан, вăл **ш** пек илтĕнет, **ç** сасăпа йунашар тăрать пулсан, **ç** пек илтĕнет. Тĕслĕхсем:

| Çыратпăр: | Калатпăр: |
|---|---|
| куçсем | куççем |
| чăрăшсем | чăрăшшем |
| каçса | каçça |
| тавлашса | тавлашша |
| тăвасшăн | тăвашшăн |
| турпасшăн | турпашшăн |
| лаçсăр | лаççăр |
| шухăшсăр | шухăшшăр |

2. **Т** сасă **п** сасă умĕн хăш формăра **п** сасса тухать: кайатпăр—кайаппăр, килетпĕр—килеппĕр.

3. **Н** сасă **л** сасă умĕн **л** сасса тухать (йалан мар): мĕнле-мĕлле, кунлен—куллен.

Пĕр сасă тепĕр сасăпа йунашар тăрса ун пек илтĕннине сасăсем пĕрпекленни, йе сасăсен аççимиляцийĕ теççĕ.

## 20 §. Çасăсен йунашарлăхĕ.

1. Уçă сасăсем чăваш чĕлхинче пĕр-пĕринпе йунашар тăмаççĕ. Сăмах пулăвĕ тăрăх пĕр-пĕр сăмахра икĕ уçă сасă йунашар тăмала пулсан, вĕсенчен пĕри тухса ӳкет, йе вĕсем хушшине

пĕр-пĕр хупă сасă кĕрсе ларса, вĕсене уйăрса тăрат. Тĕслĕхсем:

| | | | |
|---|---|---|---|
| тăр-ах | тăр-ăп | тăр-ас | сурăх-у |
| йăт-ах | йăт-ăп | йăт-ас | кĕрĕк-ӳ |
| ил-ех | ил-ĕп | ил-ес | лаш(а)-у |
| вул(а)-ах | вул(а)-ăп | вул(а)-ас | ĕн(е)-ӳ |
| кал(а)-ах | кал(а)-ăп | кал(а)-ас | ур(а)-у |
| çӳр(е)-ех | çӳр(е)-ĕп | çӳр(е)-ес | кĕлт(е)-ӳ |
| çи-й-ех | çи-й-ĕп | çи-й-ес | сӳр(е)-ӳ |

Вăйлатса калама епĕр ĕçхĕл тĕпĕ çумне ах-ех сыпăк хушатпăр, пулас вăхăт формине тума ăп-ĕп сыпăк хушатпăр, анчах сăмах тĕпĕ а-е сасăпа пĕтет пулсан, çав а-е сасă çак формăсенче уçă сасă умĕнче тухса ӳкет: кала-ах, çӳре-ех выранне, кал-ах, çӳр-ех тетпĕр; кала-ăп, çӳре-ĕп, выранне кал-ăп, çӳр-ĕп тетпĕр. Кунта а-е сасă тухса ӳкни икĕ уçă сасă йунашар тăма йураманран килет. Çавăн пиркийех вула-ас, çӳре-ес выранне вул-ас, çӳр-ес тетпĕр.

Тата çавăн пиркийех лаша-у, ĕне-ӳ выранне лаш-у, ĕн-ӳ тетпĕр; ура-у, кĕлте-ӳ, сӳре-ӳ выранне ур-у, кĕлт-ӳ, сӳр-ӳ тетпĕр.

Икĕ уçă сасă йунашар тăма йураманран вĕсем хушшине тепĕр сасă кĕрсе ларнине курма, и сасăпа пĕтекен тĕпсене илер. Епĕр кунта çи-ех выранне çи-й-ех тетпĕр, çи-ес выранне çи-й-ес, çи-ĕп выранне çи-й-ĕп тетпĕр. Й сасă кунта и сасăпа е сасă йунашар тăма йураманран пулат.

2. Сăмах пуçламĕшĕнче йе сăмах вĕçĕнче икĕ хупă сасă йунашар тăмаст. Çакăн пирки епĕр чăваш сăмахĕсенче сăмах пуçламĕшĕнче йе вĕçĕнче икĕ хупă сасă йунашар тăнине курмастпăр. Кун пекки пулсан та сайра пулат.

Çакăн пирки вырăс чĕлхинчен чăваш чĕлхине кĕнĕ сăмахсенче сăмах пуçламĕшĕнче икĕ хупă сасă йунащар пулнă пулсан, чăвашсем вĕсем хушшине ă-ĕ уçă сасă кĕртсе лартнă: стол—сĕтел, книга—кĕнеке, крупа—кĕрпе; йе умне ă-ĕ уçă сасă лартнă: школа—ăшкул, шкап—ăшкап, старик—ăстарик.

Чăваш чĕлхине вĕçĕнче икĕ хупă сасăлă вырăс сăмахĕ кĕнĕ пулсан, чăвашсем çав вĕçе улăштараççĕ: йе пĕр хупă сассине пăрахса хăвараççĕ, йе ă-ĕ уçă сасă хушаççĕ: область, промышленность, поезд выранне облăç, промышлĕннăç, пуйăс теççĕ, йе полк, банк, акт выранне полкă, банкă, актă теççĕ.

Хаљхи вăхăтра чăвашсем сăмах пуçламĕшĕнче икĕ хупă сасă та калама пултараççĕ: шкап, шкул, старик, стел теççĕ. Сăмах вĕçĕнчи хупă сасăсене те хăшĕсене тĕрĕсех калаççĕ: банк, полк, акт теççĕ.

## 21 §. Хупă сасăсем вăрăмланни.

Хупă сасăсем чăваш чĕлхинче нумай сăмахра йе нумай формăра вăрăмăн илтĕнеççĕ. Вăрăмăн илтĕннине икĕ пĕр пек саспаллипе çыраççĕ: тĕттĕм, атте, анне. Ахаљин тĕтĕм, ате, ане тесе вуламала пулат. Хупă сасăсем вăрăмланакан сăмахсем, тата формăсем хăшĕ çаксем пулаççĕ.

1. Пĕр сăмахрах хăш калаçура хупă сасса вăрăмлатаççĕ, хăшĕнче çук. Тĕслĕхсем: тутăр — туттăр, çăкăр — çăккăр, кукăль — куккăль, кукăр — куккăр, аӳи — атте, пичи — пичче, аки — акка.

2. Йапала йачĕ ă-ĕ сасăпа пĕтет пулсан, çав ă-ĕ умĕн пĕр хупă сасă пулсан, çав хупă сасă камăнлăхпа пару вĕçлевĕнче вăрăмланаӳ: алă — аллăн, алла; атă — аттăн, атта; сĕлĕ — сĕллĕн, сĕлле.

Çав хупă сасăсем 1, 2, 3-мĕш сăпатсенче те вăрăмланаççĕ: алă — аллăм, аллу, алли; атă — аттăм, атту, атти; сĕлĕ — сĕллĕм, сĕллӳ, сĕлли.

3. Паллă йачĕ хупă сасăпа йе ă-ĕ сасăпа пĕтет пулсан, çав ă-ĕ умĕн пĕр хупă сасă анчах пулсан, çав хупă сасă и сыпăк умĕн вăрăмланаӳ: начар — начарри, аван — аванни, пысăк — пысăкки, ырă — ырри, чĕрĕ — чĕрри, çĕнĕ — çĕнни.

Чăваш çырăвĕнче икĕ пĕр пек саспаллипе çырни сасă вăрăмланнинчен анчах мар, сăмах йепле пулнинчен те килет: тус-сем, кас-са, савăн-нă, курăн-нă, шăл-лă, сухал-лă, тус-сăр.

## 22 §. Сасăсем ылмашни.

Вала — вула, урам — ăрам, сăхман — сăкман, вăкăр — мăкăр: кунта епĕр а вырăнне у, у вырăнне ă, х вырăнне к, в вырăнне м куратпăр. Çавăн пек пулăма с а с ă с е м ы л м а ш н и теççĕ.

Сасăсем ылмашнине епĕр пуринчен ытла çыру чĕлхипе вырăнти чĕлхене танлаштарса пăхсан куратпăр. Тĕслĕхсем:

**а — у**: шап-шурă — шуп-шурă, вала — вула.
**а — ă**: амăрт кайăк — ăмăрт кайăк, тата — тăта, айак — айăк.
**у — ă**: нумай — нăмай, урам — ăрам, хулха — хăлха.
**ы — ă**: йывăç — йăвăç, йытă — йăтă, шыв — шăвар.
**и — ĕ**: епир — епĕр, есир — есĕр, пиç — пĕçер.
**ывă, ыв** вырăнне хăш калаçура **у** калаççĕ: ывăл — ул, сывă — су, шыв — шу. Çемçе сăмахсенче **ĕвĕ** вырăнне **ӳ** калаççĕ: çĕвĕçĕ — çӳçĕ, шĕвĕр — шӳреке.
**ăв** вырăнне **у** пулаӳ: ту-тăв, çу-çăв, çыру-çырăв, тӳ-тĕв. **У** вырăнне **ăв**, **ӳ** вырăнне **ĕв** калани сăмаха авалхи майлăрах калани пулаӳ.
**йĕ — и**: йĕтĕн — итĕн, йĕке — ике, йĕтем — итем.
**к — х**: сăкман — сăхман, шукăш — шухăш, никам — нихам.
**т — ч**: хут — хучĕ, апат — апачĕ, килтен — килсенчен.
**ч — ç**: минче — миçе, кăчкăр — кăçкăр, шалча — шалçа.
**н — м**: ылттăн — ылтăм, çăн атă — çăм атă.
**м — в**: мăкăр — вăкăр, малта — валта.

## 23 §. Сăмах татăкĕсем.

Сăмахсене калană чухне, епĕр ӳпкерен сывлăша пĕр тӳрĕ тăсăмлă кăлармастпăр, татăкăн-татăкăн кăларатпăр.

Хăш сăмаха кăларма пĕр татăк, хăшне ик татăк, хăшне виç татăк туса сывлатпăр. Сăнаман чухне, çак татăксем питех палăрмаççĕ. Ăна лайăххăн курас тесен, хăйă çутса ун çулăмĕ çине

сывласа калама пулаҫ. Ҫапла тусан, ҫулăм темиҫе хут тайăлаҫ. Миҫе хут тайăлни сăмах каланă чухнехи сывлăша миҫе татăк туса каланинчен килет. Миҫе татăкĕ сăмахра миҫе уҫă сасă пулнинчен килет. *Ула* сăмахра миҫе татăк, *трактăр* сăмахра та ҫавăн чухлĕ татăках, мĕншĕн тесен вĕсен уҫă сасăсен шучĕ пĕр пек: иккĕ.

Каланă чухнехи сывлăш татăкĕ ҫине килекен сăмах пайне с ă м а х т а т ă к ĕ теҫҫĕ. Сăмахра миҫе уҫă сасă, ҫавăн чухлĕ татăк. Ҫавăнпа сăмахсем пĕр татăклă (ут, кил, пар), икĕ татăклă (лаша, кирлĕ, апат ), виҫĕ татăклă (пашалу, чӳрече, калакан), тата нумайрах татăклă та пулаҫҫĕ.

## 24 §. Сăмах пусăмĕсем.

Епĕр сăмахри пур татăка та пĕр пек каламастпăр. Сăмахра темиҫе татăк пулсан, вĕсенчен пĕрне ыттисенчен вăйлăрах калатпăр. Сăмахран, *пăта* сăмаха илсен, кунта епĕр *та* татăка *пă* татăка каланинчен вăйлăрах калатпăр.

Сăмахра пĕр-пĕр татăка вăйлăрах каланине п у с ă м теҫҫĕ. Пусăм йышăнакан татăка п у с ă м л ă т а т ă к теҫҫĕ. Ыттисене п у с ă м с ă р т а т ă к теҫҫĕ.

Чăваш грамматикинче а, у, ы, е, ӳ, и уҫă сасăсене в ă р ă м у ҫ ă с а с ă с е м теҫҫĕ; ă, ĕ уҫă сасăсене к ĕ с к е у ҫ ă с а с ă с е м теҫҫĕ: вĕсем, малтанхисемпе танлаштарсан, нумай чух кĕскен илтĕнеҫҫĕ, ҫавăнпа час-часах тухса та ӳкеҫҫĕ. Вăрăм уҫă сасăлă татăксене в ă р ă м т а т ă к теҫҫĕ, кĕске уҫă сасăлă татăксене к ĕ с к е т а т ă к теҫҫĕ. *Тимĕр* сăмаха илсен, *ти* вăрăм татăк пулаҫ, *мĕр* кĕске татăк пулаҫ. Вăрăм татăкпа кĕске татăка пĕлни пусăмсен йĕркине вĕреннĕ чухне кирлĕ.

Чăваш чĕлхинче сăмахсенче пусăм тăвас йенчен хăйне йĕрке пур. Вăл йĕрке ҫакăн пек палăрса тăраҫ.

1. Сăмахра пур татăк та вăрăм пулсан, пусăм йалан йулашки татăкра пулаҫ: лашá, ҫӳрé, калá, каласàн, каламá, каламалá, каламасáн.

2. Сăмахра хăш татăкĕ вăрăм, хăш татăкĕ кĕске пулсан, пусăм йулашки вăрăм татăкра пулаҫ: пăтà, вăрмáн, вăрманá, курăкà, пушăтрàн, пилĕкрéн, ларáтпăр, лáрăр, ĕҫлéрĕм, ĕҫлекелéрĕм, хатĕрлéттĕм, хàтĕрлĕттĕм.

3. Сăмахра татăксем пурте кĕскисем пулсан, пусăм малтанхи татăкра пулаҫ: кéмĕл, тăгăмăр, пéлтĕмĕр.

А с ă р х а м а л и. Хăш калаҫусенче пусăма йалан йулашки татăкра тăваҫҫĕ: ҫӳрé, ĕҫлерĕмéр, кĕтĕмéр.

## 25 §. Сасăсен уйрăмлăхĕнчен килекен орфографи правилисем.

1. Хытă сăмахсенче, хытă татăксенче л, н, т ҫемҫен илтĕнсен, љ, њ, ҭ ҫыраҫҫĕ: Љава, ҭапкă, мăкăњ, супăњ, хураҭ, хуратмасҭ.

Апла ҫырмасан, епĕр сăмаха йăнăш вулама пултаратпăр. Љава ҭапкă, мăкăњ, супăњ, хураҭ вырăнне лава, тапкă, мăкăн, супăн хурат тесе вулама тивет.

2. Çемçе сӑмахсенче, тата çемçе татӑксенче хупӑ сасӑсене ахалех çемçе калаççӗ. Вуланӑ чухне вӗсене çемçе каласине йунашар тӑракан çемçе усӑ сасӑсем палӑртса тӑраççӗ.

Çавӑнпа çемçе сӑмахсенче, тата çемçе татӑксенче **л, н, т** çыраççӗ: тилӗ, тенкӗ, вӗрентекен.

3. **Ç**, ť, ч сасӑсем—çемçе хупӑ сасӑсем. Çав çемçе хупӑ сасӑсем хытӑ сӑмахра хӑйсем умӗнчи **л, н** сасса çемçетеççӗ: калча, анчах, Алťук, Панťӑк (йал йачӗ). Çав хупӑ сасӑсемех тата хытӑ сӑмахри хӑйсем хыçӗнчи **ы** сасса çемçетеççӗ. **Ы** сасӑ вара **и** майлӑ илтӗнекен пулаť: çырла, ťыха, чышкӑ.

а) Хытӑ сӑмахсенче ç, ť, ч сасӑ умӗн **л, н** çыраççӗ: калча, пакӑлчак, шанчӑк, Панťӑк, панťа.

б) Хытӑ сӑмахсенче çемçе хупӑ сасӑсем хыççӑн (ç, ť, ч хыççӑн) **ы** çыраççӗ: çырла, çыру, çырт, чышкӑ, ťыха.

4. Хытӑ сӑмах **л, н, т** сасӑпа пӗтет пулсан, çав **л, н, т** сасӑсем хӑш çемçе сыпӑксем умӗн çемçенӗн илтӗнеççӗ: кул—кулчӗ, кан—канчӗ, пут—путрӗ, тат—татмӗ.

Çакӑн пек тӗлсенче љ, њ, ť çырмаççӗ, л, н, т çыраççӗ.

5. Хытӑ сӑмах вӗçӗнчи **и** икӗ тӗслӗ илтӗнет:

а) Хытӑ илтӗнет, тата ун умӗнчи хупӑ сасӑсем те хытӑ илтӗнеççӗ: алли, ури, палли, анни, аванни, каламали.

б) Çемçе илтӗнет, тата ун умӗнчи хупӑ сасӑ та çемçе илтӗнет: ваљљи, пуљљи (пуљӑ сӑмахран), Паљљи (çын йачӗ), Ањњи (çын йачӗ).

Тӗрӗс вулама çӑмӑл пултӑр тесе, ваљљи, пуљљи, Ањњи, Паљљи йышши сӑмахсенче љ, њ, ť саспалли çыраççӗ.

6. С сасӑ, **ш** сасӑпа йунашар пулсан, **ш** пек илтӗнет, ç сасӑпа йунашар пулсан, ç пек илтӗнет. Çырасса **с** çыраççӗ: йӑвӑççем, йӑвӑççӑр, йулташсем, йулташсӑр, каласшӑн, пурӑнасшӑн.

## СӐМАХ УШКӐНӖСЕМ.

### 26 §. Сӑмах ушкӑнӗсем çинчен кӗскен калани.

Пӗлтерӗшӗсене пӑхса, чӗлхери сӑмахсене темиçе ушкӑна уйӑрма пулаť. Хӑш сӑмахсем йапала йачӗсене пӗлтереççӗ (йуман, пукан, етем, çыру), тепӗрисем йапаласен ӗçӗсене пӗлтереççӗ (кай, кил, ил, ӗçле), виççӗмӗшӗсем йапаласем мӗнлине пӗлтереççӗ, т. ыт. çаплах.

Çакӑн пек ушкӑн чӑваш чӗлхинче 10. Вӗсем çаксем: 1) й а п а л а й а ч ӗ с е м, 2) ӗ ç х ӗ л с е м, 3) п а л л ӑ й а ч ӗ с е м, 4) ӗ ç х ӗ л ç у м ӗ с е м, 5) с у м с е м, 6) ы л м а ш с е м, 7) х ы ç с ӑ м а х с е м, 8) п ӗ т ӗ ç т е р ӳ с е м, 9) т а т ӑ с е м, 10) ч ӗ в ӗ с е м. Тӗслӗхсем:

1) Й а п а л а й а ч ӗ с е м: çын, ура, пуртӑ, йӑвӑç, хурт, чул хӗвел, çыру, пуху, савӑнӑç, ӑнлав.

2) Ӗ ç х ӗ л с е м: ту (тӑватӑп, тӑватӑн, тӑваççӗ, турӗç, тӑвӗç, тӑвӑр), çыр, ил, кил, кала, шухӑшла, лар.

3) П а л л ӑ й а ч ӗ с е м: хӗрлӗ, пысӑк, йӳçӗ, сарӑрах, пит сарӑ, сап-сарӑ, урамри, ыранхи, пӗлтӗрхи.

4) Ĕçхĕл çумĕсем: пĕлтĕр, кăçал, аран, хăйаккăн, тин, унта.
5) Сумсем: иккĕ, иккĕмĕш, икшер, иккмĕшĕ.
6) Ылмашсем: епĕ, есĕ, вăл, хам, кам, мĕн, çавă, лешĕ.
7) Хыçсăмахсем: витĕр, урлă, тăрăх, таран, пирки, вађђи, патне, патĕнче, патĕнчен.
8) Пĕтĕçтерӳсем: тата, анчах, çапах, мĕнщĕн тесен.
9) Татăсем: и, ши, ха, ах, çке, лап, çеç, кăна.
10) Чĕвĕсем: ай, ех, ай-уй, ых.
Малтанхи ултă ушкăнри сăмахсем пуплевре уйрăм член пулаççĕ. Хыçсăмахсемпе пĕтĕçтерӳсем, татăсем, чĕвĕсем пуплевре уйрăм член пулмаççĕ.

## ЙАПАЛА ЙАЧĔСЕМ.

### 27 §. Йапала йачĕсем çинчен кĕскен пĕтĕмлетсе калани.

Йапаласен йачĕсене пĕлтерекен сăмахсене йапала йачĕсем теççĕ.

Йапаласем грамматикăра çаксем пулаççĕ: ахаљ йапаласем (сĕтел, атă, машинă, тăм, тимĕр), чĕрчунсем (лаша, упа, тилĕ), ӳсентăрансем (вăрман, йуман, курăк, кăмпа), çĕршыври пулăмсем (çил, сывлăш, сĕвеккĕперри), халăх хушшинчи пулăмсем (революци, митинг, пуху, вăрçă), ăс-тăн тавращĕ (ирĕк, ăс, шухăш, кăмăл, савăнăç, хуйхă), т. ыт. Йапала йачĕсем *кам? мĕн?* тесе ыйтăнаççĕ. *Кам?* тесе çынсем ыйтăнаççĕ, *мĕн?* тесе ытти йапала йачĕсем ыйтăнаççĕ.

Йапала йачĕсем пуплевре хуçа, калав йе ăнлантару сăмахĕсем пулаççĕ. Тĕслĕх. Студент вĕренет (кунта *студент*—пуплев хуçи). Манăн шăллăм—студент (кунта *студент*—калав). Епĕ студента куртăм (*студента*—ăнлантару сăмахĕ).

Ытти сăмахсемпе çыхăнса тăнă чух, йапала йачĕсем вĕçлевсем тăрăх улшăнаççĕ—вĕçленеççĕ. Тĕслĕх. *Савăт* ӳсет. *Савăтăн* директăрĕ Мускавран отчот туса тавăрăнчĕ. *Савăта* субботник туса пулăшрăмăр.

Йапала йачĕсем умĕн паллă йачĕсем, хыççăн—хыççăмахсем пулма пултараççĕ. Тĕслĕхсем: хĕрлĕ хăма, çирĕп хăма; хăма патне, хăма çиве, хăма вађђи, хăма урлă.

Йапала йачĕсем пĕррелĕ хисепре, нумайлă хисепре пулма пултараççĕ: лаша—лашасем, хур—хурсем, савăнăç—савăнăçсем, çыру—çырусем.

Йапала йачĕсем сăпат сыпăкĕсене йышăнма пултараççĕ: пуç—пуçăм, пуçу, пуçĕ; кăранташ—кăранташăм, кăранташу, кăранташĕ.

## ЙАПАЛА ЙАЧĔСЕМ ВĔÇЛЕННИ.

### 28 §. Вĕçлевсем. Вĕсен пĕлтерĕшĕ.

Шухăша пĕлтерме, ытти сăмахсемпе йепле çыхăнса тăнине пăхса, йапала йачĕсем тĕрлĕ сыпăк йышăнаççĕ. Кашни пĕр тĕслĕ сыпăклă сăмах форми пĕр вĕçлев пулаť. Чăваш чĕлхинче пурĕ çичĕ вĕçлев: йат вĕçлевĕ, камăнлăх вĕçлевĕ, пару

вĕçлевĕ, тăву вĕçлевĕ, пĕрпулу вĕçлевĕ, вырăн вĕçлевĕ, туху вĕçлевĕ.

Кашни вĕçлевĕн хăйĕн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕ, сыпăкĕ пур.

1. Йат вĕçлевĕнчи сăмах тесе чăваш чĕлхинче *кам? мĕн?* тесе ыйтăнакан сăмаха калаççĕ. Йат вĕçлевĕнчи сăмах ĕçе тăваканнине, вăл кам иккенне, мĕн иккенне пĕлтерет. Пуплевре йат вĕçлевĕнчи сăмах пуплев хуçи, пуплев калавĕ пулать. Йат вĕçлевĕнчи сăмах ытти вĕçлевсем пек мар: унăн хăйĕн вĕçлев сыпăкĕ çук.

Тĕслĕх. *Етем* шухăшлать. *Савăт* ĕçлет. *Кĕнеке* шкапра *Ыраш—тырă.* Пирĕн *радио* пур. Революцилĕ çыпăçусенче çĕне *вăйсем* ӳсеççĕ.

Çак пуплевсенче етем, савăт, кĕнеке, радио, ыраш, тыра вăйсем сăмахсем йат вĕçлевĕнчи сăмахсем пулаççĕ.

2. Камăнлăх вĕçлевĕ пĕр-пĕр йапала камăннине, мĕнĕннине пĕлтерет; *камăн? мĕнĕн?* тесе ыйтăнать. Камăнлăх вĕçлевĕнче ăн-ĕн, нăн-нĕн, йĕн сыпăксем пулаççĕ; кĕскен каланă чух, н сыпăк пулать.

*Учителĕн* купăс пур. *Ачасенĕн* вулас килет, *Колхозăн* уйри ĕçсем пĕтрĕç. *Делегатсен* конференцийе пуçтарăнмала. Атăл—*çĕршывăн* илемĕ.

3. Пару вĕçлевĕ кама-мĕне панине, тивнине, кирлине, ăçта кайнине, мĕне (çырлана) кайнине пĕлтерет; *кама? мĕне? ăçта? кайат?* тесе ыйтăнать. Пару вĕçлевĕнче а-е, на-не, йе сыпăксем пулаççĕ.

Ачасем *савăта екскурсийе* кайнă. Малта пыракан *бригадирсене, рабочисене* премни панă. *Ударниксене* большевикла салам. *Трактăра* бензин кирлĕ. *Урапана* тикĕт сĕрнĕ. Пулăçăсем Атăл леш *йенчпулла* кайнă.

4. Тăву вĕçлевĕ мĕн тăваççĕ, мĕн кураççĕ-илтеççĕ, çавна пĕлтерет. *Кама? мĕне? мĕн?* тесе ыйтăнать. Тăву вĕçлевĕнче а-е, на-не, йе сыпăк пулать (пару вĕçлевĕнчи пек). Хăш чух нимĕнле сыпăк та пулмасть. Ун пек чух тăву вĕçлевĕн форми йат вĕçлевĕн форми пек пулать.

Халĕ йалта *радио* итлетпĕр, *кино* куратпăр, тĕрлĕ *хаçат-журнал, кĕнеке* вулатпăр. *Суха* тăвать, *авăн* çапать—*тем те* тăвăн трактăрпа. Çĕн *йал* тăвас, *колхоз* тăвас—пĕрле ĕçлес ушкăнпа. Епĕ хулара хам *пиччене Ивана* куртăм, сирĕн *Микулана* кураймарăм. *Фосфорита* çĕр айĕнчен кăлараççĕ.

5. Пĕрпулу вĕçлевĕ пĕрлине, ĕçе мĕнле хатĕрпе тунине, ĕç мĕнле вырăнпа пынине, т. ыт. пĕлтерет. *Кампа? мĕнпе?* тесе ыйтăнать. Пĕрпулу вĕçлевĕ па-пе (пала-пеле) сыпăкпа пĕтет.

Йакур *йулташĕсемпе* субботнике кайнă. *Трактăрпа* çĕр ĕçлеççĕ. Сывлăш çинче *аеропланпа* çӳреççĕ. Аслă *çулпа* хĕрлĕ обоз пырать. Вăйлă *çилпеле* пĕтĕм вăрман шавласа тăрать.

6. Выран вěçлевě ĕç ăçта пулнине, йапала ăçта, камра, мĕнре тăнине пĕлтерет. *Ăçта (пулат)? камра? мĕнре?* тесе ыйтăнат. Вăл **ра-ре, та-те-че** сыпăкпа пĕтет.

Иван Ваçлейĕ *Донбасра* ĕçлет. Слон *Индире* пурăнат. *Шупашкарта* тĕпчев инçтитучĕ пиллĕк. Нефтăна *Бакура* кăларăççĕ. Строителства *хуласенче* кăна мар, *йалсенче* те вайлă пырат.

7. Тухху вĕçлевĕ ăçтан тухнине, ăçтан пуçланса кайнине, мĕнрен килнине, мĕнрен тунине, камран, мĕнрен илнине пĕлтерет. *Ăçтан? камран? мĕнрен?* тесе ыйтăнат. Вăл **ран-рен, тан-тен-чен** сыпăкпа пĕтет.

Лайăх *сĕтрен* çу 6 процента йахăн тухат. Ударлă ĕçрен, ăмăртуран строителства хăвăртлăхĕсем килеççĕ. *Алюминирен* тунă йапала çăмăл. Епĕр сахăр *Украинăран* илсе тăратпăр. Делегатсем *конференцирен* йалсене, савăтсене саланчĕç. Большевиксем *йăвăрлăхсенчен* хăрамаççĕ.

**Туху вĕçлевĕ пару вĕçлевĕпе** тĕлме-тĕл хирĕç вĕçлев: туху вĕçлевĕ ăçтан тухнине, камран-мĕнрен илнине пĕлтерет; пару вĕçлевĕ ăçта кĕнине, кама-мĕне панине пĕлтерет.

**Туху вĕçлевĕ**: хуларан тухнă, хуларан тавăрăннă, хуларан илнĕ.

Пару вĕçлевĕ: хулана кĕнĕ, хулана кайнă, хулана панă.

Вĕçлевсен таблици.

| Вĕçлев / Йачĕсем | Пĕлтерĕшĕсем | Ыйтăвĕсем | Сыпăкĕсем |
|---|---|---|---|
| Йат вĕç. | тăваканни, кам-мĕн иккен | *кам? мĕн?* | — |
| Кам в. | камăнни, мĕнĕнни | *камăн? мĕнĕн?* | ăн-ĕн, нăн-нĕн, йĕн |
| Пару в. | ăçта-мĕне кайни, хуни; кама-мĕне пани, кирли, тивни | *ăçта (кайат)? кама? мĕне?* | а-е, на-не, йе |
| Тăву вĕç. | мĕн тăваççĕ—çавă; курни-илтни | *кама? мĕне? мĕн?* | —, а-е, на-не, йе |
| Пĕрп. в. | пĕрле пулни, мĕнпе ĕçлени, пыракан вырăн | *кампа? мĕнпе?* | па-пе (пала-пеле) |
| Вырăн в. | ăçта пулни; камра-мĕнре тăни | *ăçта (пулат)? камра? мĕнре?* | ра-ре, та-те-че |
| Туху вĕç. | ăçтан тухни, пуçланса кайни; камран-мĕнрен килни, туни, илни | *ăçтан? камран? мĕнрен?* | ран-рен, тан-тен-чен |

## 29 §. Йапала йачĕсен тĕп вĕçленĕвĕ.

Чăваш чĕлхинче пĕр вĕçленӳ кăна. Анчах пĕр вĕçлеври сыпăксем пур сăмахра та пĕр пекех пулмаççĕ. Сыпăксем пĕр пекех пулманни вĕçленекен тĕп мĕнле сасăпа пĕтнинчен килет.

Тĕп вĕçленӳ хупă сасăпа пĕтекен йапала йачĕсем вĕçленни пулать.

Т ĕ п  в ĕ ç л е н ӳ  т а б л и ц и.

| Вĕçлев йачĕсем | В ĕ ç л е в  ф о р м и с е м | | |
|---|---|---|---|
| | П ĕ р р е л ĕ  х и с е п | | |
| Й. | сурăх | тинĕс | паттăр |
| К. | сурăх-ăн | тинĕс-ĕн | паттăр-ăн |
| П. | сурăх-а | тинĕс-е | паттăр-а |
| Тв. | сурăх | тинĕс | паттăр |
| | сурăх-а | тинĕс-е | паттăр-а |
| Прп. | сурăх-па | тинĕс-пе | паттăр-па |
| В. | сурăх-ра | тинĕс-ре | паттăр-та |
| Тх. | сурăх-ран | тинĕс-рен | паттăр-тан |
| | Н у м а й л ă  х и с е п | | |
| Й. | сурăх-сем | тинĕс-сем | паттăр-сем |
| К. | сурăх-сен-ĕн | тинĕс-сен-ĕн | паттăр-сен-ĕн |
| П. | сурăх-сен-е | тинĕс-сен-е | паттăр-сен-е |
| Тв. | сурăх-сем | тинĕс-сем | паттăр-сем |
| | сурăх-сен-е | тинĕс-сен-е | паттăр-сен-е |
| Прп. | сурăх-сем-пе | тинĕс-сем-пе | паттăр-сем-пе |
| В. | сурăх-сен-че | тинĕс-сен-че | паттăр-сен-че |
| Тх. | сурăх-сен-чен | тинĕс-сен-чен | паттăр-сен-чен |

1. Вĕçленнĕ чух, сыпăксем тӳрех вĕçленекен тĕп çумне хушăнаççĕ.

2. Йат вĕçлевĕн сыпăкĕ çук.

3. Уçă сасăсен килĕшĕвĕ тăрăх, пĕррелĕ хисепре хытă сăмах вĕçĕнче хытă сыпăксем пулаççĕ, çемçе сăмах вĕçĕнче çемçе сыпăксем пулаççĕ.

Нумайлă хисепре, сем, сен сыпăк çемçерен, вĕçлев сыпăкĕсем йалан çемçе пулаççĕ.

4. Нумайлă хисепре нумаййине **сем**, **сен** сыпăк кăтартса тăрать. **Сем** тенипе **сен** тени иккĕшĕ те пĕр сыпăках. **Сен** авалхирех сыпăк, **сем** кайарахран **сен** сыпăкри **н** улшăннинчен пулнă. Йатпа пĕрпулу вĕçлевĕнче **сен** сыпăкри **н** сасă **м** сасса тухнă (22 §), вара **сен** вырăнне **сем** пулнă.

Нумайлăх сыпăкĕ сăмах тĕпĕпе вĕçлев сыпăкĕсем хушшинче пулать.

5. Камăнлăх вĕçлевĕ сыпăклă та, сыпăксăр та пулма пултарать: сурăхăн апачĕ—сурăх апачĕ.

Нумайлă хисепре камăнлăх вĕçлевĕн сыпăкĕ **ĕн** час-**часах** тухса ӳкет: лаша-сен-ĕн апачĕ→лашасен апачĕ. Кун пек чух **сен** сыпăк икĕ пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать: вăл нумайлăха та **пĕлтерет**, камăнлăха та пĕлтерет.

6. Тăву вĕçлевĕ сыпăклă та, **сыпăксăр** та пулма пултарать. Паллă йапаласене калатпăр пулсан, йе йапалана пусăмлă, уйăрса калатпăр пулсан, тăву вĕçлевĕнче сыпăк пулать; паллă мар йапаласене калатпăр пулсан, йе пусăмсăр, уйăрмасăр калатпăр пулсан, сыпăк пулмасть. Сыпăксăр тăву вĕçлев форми—йат вĕçлев форми пек; сыпăклă тăву вĕçлев форми—пару вĕçлев форми пек.

Çĕвĕçĕ *кĕпе* çĕлет. *Кĕпене* çĕвĕçĕ çĕлет.

Иван *кĕнеке* вулать. Ку *кĕнекене* Иван вулать.

Çын йачĕсем тăву вĕçлевĕнче йалан сыпăклă—тулли формăлă пулаççĕ: Петĕре курнă, Петĕре ĕçе илнĕ.

7. Вырăнпа туху вĕçлевĕн тĕп сыпăкĕ **ра-ре**, **ран-рен** пулать. Сăмах **р** сасăпа пĕтет пулсан, **ра-ре**, **ран-рен** вырăнне йалан **та-те**, **тан-тен** сыпăксем пулаççĕ: çĕр-те, çĕр-тен; вăкăр-та, вăкăр-тан.

**Та-те**, **тан-тен** сыпăксем **л**, **н** сасăпа пĕтекен тĕпсем хыççăн та пулма **пултараççĕ**: арман-та, вăрман-та, кил-те, пилĕк çул-та. Анчах **л**, **н** сасăпа пĕтекен тĕпсем **ра-ре**, **ран-рен** сыпăксене те йышăнма пултараççĕ: çын-ра, çынран, чул-ра, чулран.

Нумайлă хисепре вырăнпа туху вĕçлевĕнче нумайлăхне кăтартма йалан **сен** сыпăк хушăнать. **Сен сыпăк н сасăпа** пĕтет. Çавăнпа ку вĕçлевсенче **ра-ре**, **ран-рен** вырăнне йалан **че**, **чен** (çемçелнĕ **те**, **тен** сыпăк) пулать: сурăхсен-че, сурăхсен-чен (сурăхсенте, сурăхсентен вырăнне).

8. Вĕçлев сыпăкĕсем икĕ хисепре те пĕрех, анчах вĕсем пĕррелĕ **хисепре** хытă сăмах хыççăн хытă, çемçе сăмах **хыççăн** çемçе пулаççĕ, нумайлă хисепре йалан çемçе **пулаççĕ**.

## 30 §. Вĕçленӳри тĕрлĕ уйрăмлăхсем.

### 1. У-ӳ сасăпа пĕтекен йапала йачĕсем вĕçленни

| | |
|---|---|
| Й. çыру | пĕлӳ |
| К. çырăв-ăн | **пĕлĕв-ĕн** |
| П. **çырăв-а** | **пĕлĕв-е** |

Кунта камăнлăхпа пару вĕçлевĕнче **сăмах** вĕçĕнчи **у-ӳ сасă** вырăнне **ăв-ĕв пулать** (22 §), вĕçлев сыпăкĕсем тĕп **вĕçленӳри** пекех хушăнса пыраççĕ.

### 2. И сасăпа пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

| | |
|---|---|
| Й. шăши | пăри |
| К. шăши-й-ĕн,-н | пăри-**й-ĕн**,-н |
| П. шăши-й-е | пăри-й-е |

Кунта сăмах тĕпĕпе вĕçлев сыпăкĕ хушшине **й** сасă кĕрсе ларать (20 §), вара **ĕн**, **е** сыпăк вырăнне **йĕн**, **йе сыпăк пулса** тăрать. Кĕскен каланă, чух **н** сасă анчах хушăнать: **шăши-н**.

3. А-е сасăпа пĕтекен сăмахсем вĕçленни.

| | |
|---|---|
| Й. лаша | ĕне |
| К. лаша-**нăн**,-н | ĕне-**нĕн**,-н |
| П. лаша-**на** | ĕне-**не** |

Кунта камăнлăх вĕçлевĕнче **ăн-ĕн** сыпăк вырăнне **нăн-нĕн** сыпăк куратпăр, пару вĕçлевĕнче **а-е** сыпăк вырăнне **на-не** сыпăк куратпăр. Тата камăнлăх вĕçлевĕн **нăн, нĕн** сыпăкĕ кĕскелме пултарать: **н** йулать: лаша-**н**, ĕне-**н**.

4. Вĕçлевсенче хупă сасăсем вăрăмланни.

Йапала йачĕ **ă-ĕ** сасăпа пĕтет пулсан, вĕсем **умĕн пĕр хупă** **сасă** анчах пулсан, çав хупă сасă камăнлăхпа пару вĕçлевĕнче **вăрăмланать**, **ă-ĕ** сасă тухса ӳкет.

| | |
|---|---|
| Й. пулă | чĕпĕ |
| К. пулл-**ăн** | чĕпп-**ĕн** |
| П. пулл-**а** | чĕпп-**е** |

Йапала йачĕ **ă-ĕ** сасăпа пĕтет пулсан, вĕсем **умĕн икĕ хупă** **сасă** пулсан, çав **ă-ĕ сасă** камăнлăхпа пару вĕçлевĕнче тухса ӳкет

| | |
|---|---|
| Й. хурçă | пĕрчĕ |
| К. хурç-**ăн** | пĕрч-**ĕн** |
| П. хурç-**а** | пĕрч-**е**. |

---

Йапала йачĕсем камăнлăхпа пару вĕçлевĕсенче мĕнле улшăнни.

| Сăмах тĕпĕ мĕнле сасăпа пĕтни | Камăнлăх вĕçлевĕ | Пару вĕçлевĕ |
|---|---|---|
| Хупă сасăпа пĕтет | пуç-ăн | пуç-а |
| а-е уçă сасăпа пĕтет | лаша-нăн,-н | лаша-на |
| у-ӳ уçă сасăпа пĕтет | çырăв-ăн | çырăв-а |
| и уçă сасăпа пĕтет | пăри-йĕн,-н | пăри-йе |
| ă-ĕ, умĕн пĕр хупă сасă | пулл-ăн | пулл-а |
| ă-ĕ, умĕн икĕ хупă сасă | хурç-ăн | хурç-а |

## 31 §. Йапала йачĕсен камăннине пĕлтерекен форми.

Кĕнеке сĕтел çинче. Капла каласан, камăн кĕнеки сĕтел çинче пулни паллă мар. Халĕ çавнах кăшт урăхларах калар:

Кĕнекем сĕтел çинче.
Кĕнекӳ сĕтел çинче.
Кĕнеки сĕтел çинче.

Капла каласан, камăн кĕнеки сĕтел çинче пулни паллă; тата *манăн* кĕнеке (кĕнекем), *санăн* кĕнекӳ, *унăн* кĕнеки çинчен калани те паллă.

Чăваш чĕлхинче йапала камăннине пĕлтерекен формă пур. Вăл формă виçĕ тĕрлĕ пулаť: 1-мĕш сăпат, 2-мĕш сăпат, 3-мĕш сăпат форми.

**Камăннине пĕлтерекен формăсен таблици**

| Хисепсем / Сăпатсем | Пĕррелĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат | йулташ-ăм<br>кĕнеке-м | йулташ-ăмăр<br>кĕнеке-мĕр |
| 2-мĕш сăпат | йулташ-у<br>кĕнек-ӳ | йулташ-ăр<br>кĕнек-ĕр |
| 3-мĕш сăпат | йулташ-ĕ<br>кĕнек-и | йулташ-ĕ<br>кĕнек-и |

1. 1-мĕш сăпат форми йапала м а н ă н н и н е пĕлтерет. *Пуçăмра* тĕрлĕ шухăш—ĕç тухăçне тата çӳлерех çĕклесси. Тӳс, тӳс, *лашам*, тӳс, *лашам*, трактăр килсе çитиччен!

1-мĕш сăпат сыпăкĕ—**ăм**, **ĕм**, **м**. Н у м а й ă н н и н е (п и р ĕ н н и н е) кăтартма ă м ă р, м ă р (ĕ м ĕ р, м ĕ р) сыпăк хушăнаť: лаша-мăр—пирĕн лаша, атте-мĕр—пирĕн атте.

1-мĕш сăпат сыпăкĕ *хăш* чух чĕнӳ сăмахне ăшă кăмăлпа калананине пĕлтерет. *Ачам*, кил-ха кунта. Апла ан калаç, *ывăлăм*: çынсем кулĕç.

2. 2-мĕш сăпат сыпăкĕ **у-ӳ**. Вăл с а н ă н н и н е пĕлтерет. *Уру* шăнчĕ—чуп, *сăмсуна* тăм илчĕ—йурпа йăвала. *Пиччӳсем* ăçта?— Хапрăкра. Нумайăннине (сирĕннине) кăтартма **ăр-ĕр** сыпăк хушăнаť. **Ăр-ĕр** сыпăк кунта иккĕмĕш сăпата та, нумайăннине те пĕлтерет: сурăх-ăр—сирĕн сурăх, лаш-ăр—сирĕн лаша.

3. 3-мĕш сăпат сыпăкĕ—**ĕ**, **и**. Вĕсем йапала у н ă н н и н е пĕлтереççĕ. Атăл—çĕршывăн *илемĕ*. Лаша *ури* пĕр чĕрнелĕ.

Ĕ сыпăк хупă сасăпа пĕтекен сăмах хыççăн пулаť: пуç-ĕ, çурăм-ĕ. И сыпăк уçă сасăпа пĕтекен сăмах хыççăн пулаť: кĕнеке—кĕнек-и, лаша—лаш-и. Уçă сасăсем йунашар тăма йураманнипе, кунта и умĕнчи уçă сасă тухса ӳкет.

Нумайлă хисепре **унăн** вырăнне **вĕсен** тесен, кунта урăх сыпăк хушăнмасť, ĕ, и сыпăксемех йулаççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| унăн<br>вĕсенĕн | } сурăх-ĕ | унăн<br>вĕсенĕн | } лаш-и |

Хăш сăмахра ĕ, и вырăнне **шĕ** сыпăк пулаť: пичче—пиччĕшĕ, кукка—куккăшĕ. *Ашшĕ* сăмах *аçа*+*шĕ* сăмахран, *амăшĕ* сăмах *ама*+*шĕ* сăмахран улăшăнса пулнă.

Ё, и сыпӑк унӑннине, вӗсенӗннине кӑна мар, пӗр йапалана ыттисенчен уйӑрса каланине те пӗлтерет. Урампа Петӗрпе Виктӑр пыраҫҫӗ. *Петӗрӗ* пӑчкӑ йатнӑ, *Виктӑрӗ* пуртӑ йатнӑ. *Ҫилӗ* вӗрет, *ҫӑмӑрӗ* ҫук-ха.

Хӑш сӑмахсенче тата ё, и сыпӑк йапаласен ҫыхӑнӑвне пӗлтерет: ӗҫ ачи—ӗҫлекен ача, грамматикӑ кӗнеки—грамматикӑ ҫинчен вӗрентекен кӗнеке, тилӗ йумаххи—тилӗ ҫинчен йаракан йумах, пӑри пӑтти—пӑрирен пӗҫернӗ пӑтӑ.

---

Кӑранташу-сем ӑҫта санӑн?
Кӑранташӑр сем ӑҫта сирӗн?

Кунта у сыпӑк санӑннине пӗлтерет, ӑр сыпӑк сирӗннине пӗлтерет, сем сыпӑк йапали нумаййине. Ӑр сыпӑкпа сем сыпӑка пӑтратма кирлӗ мар: ӑр сыпӑк хуҫи нумаййине пӗлтерет, сем сыпӑк йапали нумаййине пӗлтерет. Ҫак ҫыхӑнӑва ҫапла схемӑ туса кӑтартма пулать.




Асӑрхамали. Сӑпат сыпӑклӑ йапала йачӗсене авалхи чӗлхере хальхинчен ытларах каланӑ. Хальхи чӗлхере, пуринчен ытла тури калаҫура, ку формӑсем халӑх йуррисенче, йумахсенче, ваттисен калаҫӑвӗнче, тата поэзи чӗлхинче тӗл пуларах тӑраҫҫӗ. Ахаль чӗлхере 3-мӗш сӑпат формине кӑна йалан калаҫҫӗ, 1-мӗш сӑпат формине сахал калаҫҫӗ: тӳрех *ман алӑ, ман кӗнеке, пирӗн йал, пирӗн учитӗл* теҫҫӗ. Ҫавӑн пекех 2-мӗш сӑпат формине те хӑш чухне каламаҫҫӗ: тӳрех *сан кӗнеке, сан кӑранташ* теҫҫӗ.

сан сăмахсăр каласан, йаланах *кĕнекӳ, кăранташу* теççĕ. Нумайлă хисепри сăпат формисене—*кăранташăмăр, кăранташăр* пек кĕлеткесене тата сахалрах калаççĕ.

## 32 §. Сăпат сыпăкĕсем йапала йачĕ тĕпĕсемпе мĕнле пĕрлешни

Сăпат сыпăкĕсем йапала йачĕсемпе мĕнле пĕрлешнин таблици

| Тĕслĕх сăмахсем | 1-ш сăпат | 2-ш сăпат | 3-ш сăпат |
|---|---|---|---|
| сурăх | сурăх-ăм | сурăх-у | сурăх-ĕ |
| çыру | çырăв-ăм | çырăв-у | çырăв-ĕ |
| лаша | лаша-м | лаш-у | лаш-и |
| пулă | пулл-ăм | пулл-у | пулл-и |
| хурçă | хурç-ăм | хурç-у | хурç и |

*Çыру* сăмах пур сăпатра та *çырăв* пулса тăрать (22 §). Капла пулнипе кунта икĕ уçă сасă йунашар тăмаççĕ.

Лаш-у, лаш-и; пулл-у, пулл-и; хурç-у, хурç-и сăмахсенче 2-мĕшпе 3-мĕш сăпатра тĕп вĕçĕнчи уçă сасăсем тухса ӳкеççĕ. Ку каллех икĕ уçă сасă йунашар тăма йураманран килет.

Пулă, чĕпĕ йышши сăмахсенче пур сăпатра та сăпат сыпăкĕсем умĕн ă-ĕ умĕнчи хупă сасă вăрăмланать: пулл-ăм, пулл-у, пулл-и; чĕпп-ĕм, чĕпп-ӳ, чĕпп-и.

И сасăпа пĕтекен йапала йачĕсем сăпат сыпăкĕсене сахал йышăннаççĕ Йышăнсан ун пек сăмахсен форми çакăн пек пулать: Праски-й-ĕм, Праски-й-ӳ, Праски-й-ĕ.

## 33 §. Сăпат сыпăклă йапала йачĕсем вĕçленни.

Сăпат сыпăклă сăмахсем, пĕтĕмĕшпе илсен, йапала йачĕсен пуçламĕш формисем пекех вĕçленеççĕ. Анчах вĕсен хăйсен вĕçленӳ уйрăмлăхĕсем те пур. Мĕнле уйрăмлăхсем пурри çак таблицăран аван курăнса тăрать.

Сăпат сыпăклă йапала йачĕсем вĕçленни.

Пĕррелĕ хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Й. | йулташăм | йулташ-у | йулташĕ | кĕнеки |
| К. | йулташăм-ăн | йулташу-н | йулташ-ĕн | кĕнеки-н |
| П. | йулташăм-а | йулташ-на | йулташ-не | кĕнеки-не |
| Тв. | йулташăм-а | йулташ-на | йулташ-не | кĕнеки не |
| Прп. | йулташăм-па | йулташу-па | йулташĕ-пе | кĕнеки-пе |
| В. | йулташăм-ра | йулташун-та | йулташĕн-че | кĕнекин-че |
| Тх. | йулташăм-ран | йулташун-тан | йулташĕн-чен | кĕнекин-чен |

Нумайлă хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Й. | йулташăм-сем | йулташу-сем | йулташĕ-сем | кĕнеки-сем |
| К. | йулташăм-сен-ĕн | йулташу-сен-ĕн | йулташĕ-сен-ĕн | кĕнеки-сен-е |
| П. | йулташăм-сен-е | йулташу-сен-е | йулташĕ-сен-е | кĕнеки-сен-е |

тата ыттисем те.

1. 1-мĕш сăпатри йапала йачĕсем пĕтĕмпех пĕтĕмле йĕркепе вĕçленеççĕ.

2. 2-мĕш сăпатра камăнлăх вĕçлевĕнче йулташу-н выранне йулташу-нăн пулма пултарать.

3. Пару вĕçлевĕнче 2-мĕшпе 3-мĕш сăпатра сăпат сыпăкĕсем тухса ӳкеççĕ: йулташ-на (йулташу-на выранне), йулташ-не (йулташĕ-не выранне).

4. Тăву вĕçлевĕ пур сăпатра та тулли кĕлеткелĕ пулать.

5. Выранпа туху вĕçлевĕнче 2-мĕшпе 3-мĕш сăпатра вĕçленекен тĕп çумне н сасă хушăнать: йулташун-та, йулташĕн-че, кĕнекин-че.

6. Нумаййине кăтартакан «йулташăмăр, йулташăр» формăсем пĕтĕмле йĕркепе вĕçленеççĕ (31 §, асăрх.).

| Пĕррелĕ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|
| Й. йулташăмăр | йулташăмăр-сем |
| К. йулташăмăр-ăн | йулташăмăр-сен-ĕн |
| П. йулташăмăр-а | йулташăмăр-сен-е |

## 34 §. Йапала йачĕсене тăвакан сыпăксем

### Йапала йатĕнченех пулакан иккĕмĕшле сăмахсем.

**çă-çĕ**—пĕр-пĕр ĕçпе пуранниине кăтартакан сыпăк: пулăçă, тимĕрçĕ, пахчаçă, кĕтӳçĕ.

**лăх-лĕх** — пĕтĕмлетсе каланă ăнланусене кăтартать: çынлăх, патшалăх, çырулăх.

Хуранлăх, йуманлăх, хăйăрлăх--кунта **лăх-лĕх** сыпăк пĕр-пĕр йапала нумай выранa пĕлтерет.

Куçлăх, кăкăрлăх, хырăмлăх, кĕпелĕх, пӳртлĕх—кунта **лăх-лĕх** сыпăк мĕнлехе (мĕн валли тунине, мĕне кирлине) пĕлтерет.

**таш-теш, тăш-тĕш**—пĕрлине пĕлтерекен сыпăксем: йулташ, хуранташ, тантăш, аташ.

**шка-шке-ске, кă-ке**—пĕчĕклетсе каланине пĕлтерет: валашка, картлашка, çунашка, пурнеске, тĕмеске, Петĕркке, Тимĕркке.

**ук-ӳк**—пайăр йатсене пĕчĕклетсе, ачашласа калакан сыпăк: Ваçук, Пеťук, Ваңук, Хвеťук.

**аш-еш**—сарăмлăха пĕлтерет: тавраш, тулаш, малаш.

### Ĕçхĕлтен пулакан иккĕмĕшле йапала йачĕсем

**ăм-ĕм-м**—ĕçхĕлтен йапала йачĕ тăвать: парăм, вилĕм, çухрăм, (çухăрăм, çухăр сăмахран), утăм, пӳлĕм, турам.

**у-ӳ**—ĕçхĕлтен йапала йачĕ тăвать: çыру пуху, лару, пĕлтерӳ.

**в—ку** та ĕçхĕлтен йапала йачĕ тăвать. Вăл уçă сасăпа пĕтекен ĕçхĕл çумне хушăнать: мухтав, йусав, хатĕрлев, усрав.

**кăн-кĕн**—ыраламан йапала йачĕсене тăвать: таркăн, чупкăн, вĕçкĕн, каскăн, çăткăн.

**ан-ен**: автан, çĕмĕрен, тусан (авалхи пайташ).

**мăш-мĕш**: урмаш, йăлăнтармăш, йӳтетмĕш.

**ма-ме**: пусма, каçма, чикме, пӳлме.

**ăç-ĕç**: пурăнăç, савăнăç, шанăç, тухăç, пăрăнăç.
**ăк-ĕк, ă-ĕ**: сыпăк, татăк, çурăк; сыпă, вилĕ, кулă.
**кă-кĕ**: çупкă, чышкă, тапкă.
**кăч**(ă) **кĕч**(ĕ): пăркăч, хыпкăч, ăскăч, вĕркĕч, хĕскĕч.
**чăк-чĕк**: ларчак, сурчăк, суланчăк, шанчăк.

Паллă йачĕсенчен йапала йачĕ тăвакан сыпăксем.

**ăш-ĕш-ш** — сарăмлăха пĕлтерет: сарлакăш, тарăнăш, çÿлĕш, çивĕчĕш, хулăнăш.

**лăх-лĕх** — пĕтĕмлетсе каланă ăнланусене пĕлтерет: ăслăлăх, тасалăх, чĕрĕлĕх, ватăлăх.

Ытти чĕлхерен кĕнĕ йапала йачĕсенче çакăн пек сыпăксем тĕл пулаççĕ.

**исăм** — вĕрентĕве пĕлтерет: марксисăм, ленинисăм, дарвинисăм.

**икă** — вĕрентĕве, техникăна пĕлтерет: педагогикă, лингвистикă, техникă, физикă.

**тăр** — ĕç тăвакан: директăр, литератăр, инструктăр.

**шчинă** — ырăламан пулăма пĕлтерет: обломăвшчинă, аракчейĕвшчинă, елменшчинă.

# ĔÇХĔЛ.

## 35 §. Ĕçхĕл çинчен кĕскен пĕтĕмлетсе калани.

1. Йапала ĕçленине, выртни-тăнине кăтартакан сăмахсене ушкăнне ĕ ç х ĕ л теççĕ.

Кирек мĕнле сăмах та *мĕн ту? мĕн тăват? мĕн турĕ?* тесе ыйтăнаť пулсан, ĕ ç х ĕ л у ш к ă н н е кĕрет. Çыр, çыраť, çырнă, вула, вулаť, йурла, ларať, çутатрĕ—çаксем пурте ĕçхĕлсем пулаççĕ.

2. Ĕçхĕлĕн п у ç л а м ĕ ш ф о р м и пулаť. Ăна *мĕн ту? мĕн тутар?* ыйтусемларгса пĕлеççе: çыр, вула, йурла, лар, çутат, çыртар, вулаттар. Çак сăмахсем пурте ĕçхĕлĕн пуçламĕш формисем пулаççĕ. Ĕçхĕлĕн пуçламĕш формине ĕ ç х ĕ л т ĕ п ĕ теççĕ.

3. Т ĕ п с е м икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: сыпăксăррисем, сыпăклисем. Сыпăксăр тĕпсем тесе нимĕнле сыпăк та хушăнман тĕпсене калаççĕ: çыр, çап, пер, кер. Сыпăксăр ĕçхĕл т ĕ п ĕ ç х ĕ л пулаť.

Сыпăклă тĕп тесе тĕп ĕçхĕл çумне, йе ытти сăмахсем çумне мĕнле те пулсан сыпăк хушăнса пулнă ĕçхĕле калаççĕ: çырăн, çыртар, çыпăçтаркала, çапăç, пуçла, кăвакар.

4. Тĕп, вĕçĕнчи сассине пăхса, икĕ тĕрлĕ пулаť. Пĕр йышши тĕпсем уçă сасăпа пĕтеççĕ: кала, вула, ĕçле, йĕрле. Тепĕр йышши тĕпсем хупă сасăпа пĕтеççĕ: çап, лар, кил, пĕтер, калаттар.

5. Ĕçхĕлсем темиçе тĕрлĕ улшăнма пултараççĕ. Вĕсем тĕрлĕ в ă х ă т р а, тĕрлĕ с ă п а т р а, тĕрлĕ х и с е п р е пулма пултараççĕ. Тата ĕçхĕлĕн п у р л ă ф о р м и, ç у к л ă ф о р м и пулаť.

а) В ă х ă т с е м. Вăхăтсем çаксем: х а љ х и в ă х ă т, п у л а с в ă х ă т, и р т н ĕ в ă х ă т.

Хаљхи вăхăт ĕç халĕ пулнине пĕлтерет: епĕ *çыратăп,* вăл *вулаť.* Пулас вăхăт ĕç малашне пулассине пĕлтерет: епĕр *çырă-*

*пăр*, вĕсем *вулĕç*. Иртнĕ вăхăт ĕç ĕлĕк, малтан пулса иртнине пĕлтерет: епĕ *çыртăм*, вăл *çырнă*.

Иртнĕ вăхăт иккĕ: курса иртнĕ вăхăт, курмасăр иртнĕ вăхăт. *Çăмăр çурĕ* тени курса иртнĕ вăхăтпа калани пулаť, *çăмăр çунă* тени курмасăр иртнĕ вăхăтпа калани пулаť.

Хаљхи вăхăт, пулас вăхăт, курса иртнĕ вăхăт, курмасăр иртнĕ вăхăт—т ĕ п  в ă х ă т с е м.

**Чĕ** сыпăк (çителĕксĕр ĕçхĕл) хушăннипе çав вăхăтсенчен тата çак вăхăтсем пулаççĕ: х а љ х и  у м ĕ н ч и  в ă х ă т (т е м и ç е  х у т  п у л с а  и р т н ĕ  в ă х ă т): кайаťчĕ; п у л а с  у м ĕ н ч и  в ă х ă т (ĕ м ĕ т  ф о р м и): кайĕччĕ; и р т н ĕ  у м ĕ н ч и  в ă х ă т: кайнăччĕ.

б) С ă п а т с е м. Сăпат виççĕ: п ĕ р р е м ĕ ш  с ă п а т, и к к ĕ м ĕ ш  с ă п а т, в и ç ç ĕ м ĕ ш  с ă п а т.

1-мĕш сăпат ĕçе калакан хăй тунине пĕлтерет: епĕ çыратăп.

2-мĕш сăпат ĕçе манпа калаçакан тунине пĕлтерет: есĕ çыратăн.

3-мĕш сăпат кам çинчен калаççĕ, çав тунине пĕлтерет: вăл çыраť.

Урăхла каласан: 1-мĕш сăпат ĕçе *епĕ* тунине пĕлтерет, 2-мĕш сăпат ĕçе *есĕ* тунине пĕлтерет, 3-мĕш сăпат ĕçе *вăл* тунине пĕлтерет.

в) Х и с е п с е м. Хисеп иккĕ: п ĕ р р е л ĕ  х и с е п, н у м а й л ă  х и с е п. Пĕрролĕ хисеп ĕçе пĕччен (пĕр çын, пĕр йапала) тунине пĕлтерет: çыратăп, çыратăн, çыраť.

Нумайлă хисеп ĕçе нумаййăн (темиçе çын, темиçе йапала) тунине пĕлтерет: çыратпăр, çыратăр, çыраççĕ.

г) П у р л ă  ф о р м ă п а  ç у к л ă  ф о р м ă. Ĕç пулнипе пулманни йенчен илсен, ĕçхĕлĕн икĕ формă пулаť: п у р л ă  ф о р м ă, ç у к л ă  ф о р м ă. Пурлă формă ĕç пулнине, ĕç пуррине пĕлтерет: çыраť. Çуклă формă ĕç пулманнине, ĕç çуккине пĕлтерет: çырмасť.

д) Ĕçхĕлсем сăпатсем тăрăх, вăхăтсем тăрăх улăшăннине ĕ ç х ĕ л с е н  с ă п а т л а н ă в ĕ  теççĕ.

6. Пур ĕçхĕл те пуплевре калав пулаť. Сăпатланакан ĕçхĕлсем тата пуплевре хуçапа килĕшсе пĕр сăпатра, пĕр хисепре пулса тăраççĕ (6 §). Сивĕ хĕл *кунĕсем иртсе кайĕç*, илемлĕ *çуркунне çитĕ. Кĕрлет хапрăк-савăт, шавлаť* çеçен *хир. Кĕрешў пултăр* пурăнăçра, *кĕрешў!*

Пуплевре ĕçхĕл йатмар вĕçлевсен формисене тытса тăраканни пулаť, вĕçлевĕсем ĕçхĕлрен тытăнса тăраканнисем пулаççĕ (6 §). *Куçа* çара *алăпа* ан *шăл. Килте те, шкулта та тасамарлăхпа кĕрешĕр.*

## ĔÇХĔЛСЕМ СĂПАТЛАННИ.

### 6 §. Хаљхи вăхăт.

**ПУРЛĂ ФОРМĂ.**

**Пĕрролĕ хисеп.**

| | |
|---|---|
| 1. кас-а-т-ăп | кала-т-ăп |
| 2. кас-а-т-ăн | кала-т-ăн |
| 3. кас-а-ť | кала-ť |

Нумайлӑ хисеп.

1. **кас-а-т-пӑр** — кала-т-пӑр
2. **кас-а-т-ӑр** — кала-т-ӑр
3. кас-а-ç-çӗ — кала-ç-çӗ

ÇУКЛӐ ФОРМӐ.

Пӗррелӗ хисеп.

1. кас-мас-т-ӑп — кала-мас-т-ӑп
2. кас-мас-т-ӑн — кала-мас-т-ӑн
3. кас-мас-ӗ — кала-мас-ӗ

Нумайлӑ хисеп.

1. кас-мас-т-пӑр — кала-мас-т-пӑр
2. кас-мас-т-ӑр — кала-мас-т-ӑр
3. кас-маç-(т)-çӗ — кала-маç-(т)-çӗ

Хаҙхи вӑхӑт формисен пулӑвӗ.

1. **Ӑп**—пӗррелӗ хисепри 1-мӗш сӑпатӑн сыпӑкӗ, **ӑн**—2-мӗш сӑпатӑн сыпӑкӗ, **пӑр**—нумайлӑ хисепри 1-мӗш сӑпатӑн сыпӑкӗ, **ӑр**—нумайлӑ хисепри 2-мӗш сӑпат сыпӑкӗ.

Çак сыпӑксемех, çемçе сасӑлӑ ӗçхӗлсене хушӑннӑ чухне, çемçе сасӑпа пулаççӗ: **килет-ӗп**, **килет-пӗр**, **килет-ӗн**, **килет-ӗр**.

2. **Ӑп-ӗп** сыпӑк **епӗ** сӑмахран, **пӑр-пӗр** сыпӑк **епӗр** сӑмахран кӗскелсе пулнӑ. 2-мӗш сӑпатри **ӑн-ӗн** сыпӑк **сан** сӑмахран кӗскелсе пулнӑ. **Сан** тени ӗлӗк **есӗ** тенине те пӗлтернӗ. **Ӑр-ӗр** сыпӑк **есӗр** сӑмахран кӗскелсе пулнӑ.

3. Пӗррелӗ хисепре 3-мӗш сӑпатӑн уйрӑм сӑпат сыпӑкӗ çук, нумайлӑ хисепре нумайлӑх сыпӑкӗ **çӗ** пулать. Вӑл **сем** сыпӑкран кӗскелсе улӑшӑнса пулнӑ.

4. Т—хаҙхи вӑхӑта пӗлтерекен сыпӑк. Нумайлӑ хисепре 3-мӗш сӑпатра ку сасӑ **çӗ** сыпӑк умӗн çемçелсе **ç** сасса тухса кайнӑ.

**Т** сыпӑк çуклӑ формӑра **нум.** хисепре 3-мӗш сӑпатра **тухса ӳкнӗ.**

5. Хупӑ сасӑпа пӗтекен ӗçхӗлсен тӗпӗпе т сыпӑк хушшине **а-е** сыпӑк кӗрсе ларать.

6. Çуклӑ формӑ ӗçхӗлӗн тӗпӗпе хаҙхи вӑхӑта пӗлтерекен т сыпӑк хушшине **мас-мес** сыпӑк кӗрсе ларнипе пулать.

7. Калаçура та, кӗнеке чӗлхинче те пӗррелӗ хисепре 1-мӗшпе 2-мӗш сӑпатра—*калатӑп, калатӑн* тенине кӗскетсе, *калап, калан* теççӗ.

## 37 §. Пулас вӑхӑт.

ПУРЛӐ ФОРМӐ.

Пӗррелӗ хисеп.

1. кас-ӑп — кал-ӑп
2. кас-ӑн — кал-ӑн
3. кас-ӗ — кал-ӗ

Нумайлӑ хисеп.

1. кас-ӑпӑр — кал-ӑпӑр
2. кас-ӑр — кал-ӑр
3. кас-ӗ-ç(ӗ) — кал-ӗ-ç(ӗ)

ÇУКЛĂ ФОРМĂ.

Пĕррелĕ хисеп.

| | |
|---|---|
| 1. кас-м-ăп | кала-м-ăп |
| 2. кас-м-ăн | кала-м-ăн |
| 3. кас-м-ĕ | кала-м-ĕ |

Нумайлă хисеп.

| | |
|---|---|
| 1. кас-м-ăпăр | кала-м-ăпăр |
| 2. кас-м ăр | кала-м-ăр |
| 3. кас-м-ĕ-ç(ĕ) | кала-м-ĕ-ç(ĕ) |

Пулас вăхăт формисен пулăвĕ.

1. Пулас вăхăтра 1-мĕшпе 2-мĕш сăпатра сăпат сыпăкĕсем хаљхи вăхăтри пекех: ăп, ăн. 3-мĕш сăпатăн сыпăкĕ—é. Нумайлăх сыпăкĕ çĕ кĕскелет: ĕ татăлса ӳкет.

2. Уçă сасăпа пĕтекен ĕçхĕлсен йулашки уçă сасси сăпат сыпăкĕ умĕн тухса ӳкет: *кала-ăп*, *кала-ăн*, *кала-ĕ* вырăнне *калăп*, *калăн*, *калĕ* пулса йулаť (20 §).

3. Çуклă формă ĕçхĕлĕн тĕпĕпе сăпат сыпăкĕ хушшине м сасă кĕрсе ларнипе пулаť.

Ку вăхăта пулас ĕç татăклă мар чухне, иккĕленнĕрех чухне калаççĕ: Епĕ, вĕренсе тухсан, учитĕле *кайăп*, есĕ аслă шкула вĕренме *кĕрĕн*. Пулас вăхăт татăклă, иккĕленӳсĕр пулсан, хаљхи вăхăта калаççĕ: Епĕ, вĕренсе тухсан, учитĕле *кайатăп*.

## 38 §. Курса иртнĕ вăхăт.

ПУРЛĂ ФОРМĂ.

Пĕррелĕ хисеп.

| | |
|---|---|
| 1. кас-р-ăм | кала-р-ăм |
| 2. кас-р-ăн | кала-р-ăн |
| 3. кас-р-ĕ | кала-р-ĕ |

Нумайлă хисеп.

| | |
|---|---|
| 1. кас-р-ăмăр | кала-р-ăмăр |
| 2. кас-р-ăр | кала-р-ăр |
| 3. кас-р-ĕ-ç | кала-р-ĕ-ç |

ÇУКЛА ФОРМĂ.

Пĕррелĕ хисеп.

| | |
|---|---|
| 1. кас-ма-р-ăм | кала-ма-р-ăм |
| 2. кас-ма-р-ăн | кала-ма-р-ăн |
| 3. кас-ма-р-ĕ | кала-ма-р-ĕ |

Нумайлă хисеп.

| | |
|---|---|
| 1. кас-ма-р-ăмăр | кала-ма-р-ăмăр |
| 2. кас-ма-р-ăр | кала-ма-р-ăр |
| 3. кас-ма-р-ĕ-ç | кала-ма-р-ĕ-ç |

1. Курса иртнĕ вăхăтăн **сăпат** сыпăкĕсем йапала **йачĕсен камăнлăх сылăкĕсемпе** пĕрех:

| | |
|---|---|
| кас-р-ăм | ывăл-ăм |
| кас-р-ăн | ывăл-у(ă) |
| кас-р-ĕ | ывăл-ĕ |
| кас-р-ăмăр | ывăл-ăмăр |
| кас-р-ăр | ывăл-ăр |
| кас-р-ĕ-ç | ывăл-ĕ-сем |

Ĕçхĕлри **сăпат** сыпăкĕсем ĕçе хăш сăпат **тунине** пĕлтереççĕ, **йапала йатĕнчи сăпат** сыпăкĕсем **йапала** хăш сăпатăннине **пĕлтереççĕ**. Авалхи чĕлхере м а н, с а н, у н сăмахсем **епĕ, есĕ, вăл** тенине те пĕлтернĕ.

Кунта сăпат сыпăкĕсем халĕ пĕтĕмпех пĕр пек **марри те пур**: иккĕмĕш **сăпат сыпăкĕ ăн**, тата **у**; нумайлă хисепри **виççĕмĕш** сăпат сыпăкĕ **ĕ-ç**, тата **ĕ-сем. У** (ă) сыпăк урăхланса кайнă **ăн** сыпăках; **ç** сыпăк **сем (сен)** сыпăкран кĕскелсе пулнă.

2. **Р** сыпăк кунта курса иртнĕ вăхăта пĕлтерет.

3. Çуклă формă ĕçхĕлĕн тĕпĕпе **р** сыпăк хушшине **ма-ме** сыпăк кĕрсе ларнипе пулаť.

**4. Р, л, н** сасăсемпе пĕтекен ĕçхĕлсен вăхăта пĕлтерекен сыпăкĕ **т** пулаť:

| | | |
|---|---|---|
| 1. кил-т-ĕм | ан-т-ăм | лар-т-ăм |
| 2. кил-т-ĕн | ан-т-ăн | лар-т-ăн |
| 3. кил-ч-ĕ | ан-ч-ĕ | лар-ч-ĕ |
| 1. кил-т-ĕмĕр | ан-т-ăмăр | лар-т-ăмăр |
| 2. кил-т-ĕр | ан-т-ăр | лар-т-ăр |
| 3. кил-ч-ĕ-ç | ан-ч-ĕ-ç | лар-ч-ĕ-ç |

Кунта вăхăта кăтартакан **т** сасă виççĕмĕш сăпатра **ч** сасă пулса **кайаť**.

## 39 §. Курмасăр иртнĕ вăхăт.

**Пĕрреле хисеп.**

| ПУРЛА ФОРМĂ. | | ÇУКЛĂ ФОРМĂ. |
|---|---|---|
| 1. Епĕ<br>2. Есĕ<br>3. Вăл | кас-нă, кала-нă | кас-ма-н, кала-ма-н. |

**Нумайлă хисеп.**

| | | |
|---|---|---|
| 1. Епĕр<br>2. Есĕр<br>3. Вĕсем | кас-нă, кала-нă | кас-ма-н, кала-ма-н |

**Курмасăр иртнĕ вăхăтăн пулăвĕ.**

1. Курмасăр иртнĕ вăхăтăн сăпат сыпăкĕсем çук. Сăпата пĕлтерме кунта ĕçхĕл умĕн сăпат ылмашĕсене хушса калаççĕ.

2. Ку вăхăтăн çуклă форми ĕçхĕлĕн тĕпĕпе **нă-нĕ сыпăк** хушшине **ма-ме** сыпăк кĕрсе ларнипе пулаť. **Нă-нĕ** сыпăк вĕçĕнчи **ă-ĕ** ку формăра пулмасť.

---

### Иртнĕ вăхăтсен пĕлтерĕшĕсем.

1. Курса иртнĕ вăхăт ĕç калаканăн куçĕ умĕнче пулса иртнине пĕлтерет, йе калакан ĕçе хăй куçĕпе курнă пек каланине пĕлтерет: Окťабĕр револђуцийĕ 1917-мĕш çулта *пулчĕ*.

2. Курмасăр иртнĕ вăхăт ĕç калаканăн куçĕ умĕнче пулманнине, ĕç çинчен çынран илтсе, йе тата ытти урăх майпа пĕлсе каланине пĕлтерет. Тата ĕç çинчен курман пек, у ç ă м л ă м а р каланине пĕлтерет. Т ĕ с л ĕ х: 1789-мĕш çулта Францире аслă револђуци *пулнă*. Епĕ комбайн ĕçленине *курнă*.

Курман пирки авал-ĕлĕк пулнă ĕçсем çинчен епĕр йалан курмасăр иртнĕ формăпа калатпăр: Грексен философĕ Гераклит: пур йапала та улшăнса тăраť, тесе *вĕрентнĕ*. Чарђз Дарвин 1882-мĕш çулта *вилнĕ*.

### ЧĔ СЫПĂК ХУШĂННИПЕ ПУЛНĂ ВĂХĂТСЕМ.

### 40 §. Хађхи умĕнчи вăхăт (Темиçе хут пулса иртнĕ вăхăт).

#### Пĕррелĕ хисеп.

| | ПУРЛĂ ФОРМĂ. | ÇУКЛĂ ФОРМĂ. |
|---|---|---|
| 1. | кас-ат-т-ăм | кас-**мас**-т-ăм |
| 2. | кас-ат-т-ăн | кас-мас-т-ăн |
| 3. | кас-аť-ч-ĕ | кас-мас-ť-ч-ĕ |

#### Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1. | кас-ат-т-ăмăр | кас-**мас**-т-ăмăр |
| 2. | кас-ат-т-ăр | кас-мас-т-ăр |
| 3. | кас-аť-ч-ĕç | кас-мас-ť-ч-ĕç |

#### Хађхи умĕнчи вăхăтăн пулăвĕ.

1. Хађхи умĕнчи вăхăт хађхи вăхăт форминчен **чĕ** сыпăк хушăннипе пулаť.

2. **Чĕ** сыпăк ĕлĕк чĕлхере хăйне уйрăм сăмах, уйрăм ĕçхĕл пулнă. Вăл ун чухнех иртнĕ вăхăта—п у л ч ĕ, п у л н ă тенине пĕлтернĕ. Çавăнпа халĕ те **чĕ** сыпăка (çителĕксĕр ĕçхĕле) хађхи вăхăт форми çумне хушсан, вăл иртнĕ вăхăта пĕлтерекен пулаť.

3. Ку вăхăтăн сăпат сыпăкĕсем курса иртнĕ вăхăтăнни пекех.

1-мĕшпе 2-мĕш сăпата хăш калаçусенче **чĕ** сыпăк хушса калаççĕ: **касаттăмччĕ**, **касаттăмăрччĕ**, **касаттăнччĕ**, **касаттăрччĕ** теççĕ.

4. Çуклă формă хађхи вăхăтăнни пекех—**мас**, **мес** сыпăк кĕрсе ларнипе пулаť.

Хаҙхи умӗнчи вăхăтăн пĕлтерĕшĕ.

1. Ку вăхăт хаҙхи умĕн пулнине пĕлтерет:
Епĕ сан патна *пыраттăм* (Пынă чухне хирĕç тĕл пулсан калаççĕ). Лашасем халĕ анчах çакăнта *çӳретчĕç*.

2. Çав вăхăтах ĕлĕк (тепĕр ĕç умĕн) пĕрмай пулса пынă ĕçе пĕлтерет: Трактăр киличчен, епĕр çĕре сухапа *сухалаттăмăр*.

3. Çав вăхăтах тата ĕç темиçе хут пулса иртнине те пĕлтерет: Мускавра вĕреннĕ чухне, епĕр театра, музейсене *çӳреттĕмĕр*.

## 41 §. Иртнĕ умĕнчи вăхăт.

Пĕррелĕ хисеп.

| | ПУРЛĂ ФОРМĂ. | ÇУКЛĂ ФОРМĂ. |
|---|---|---|
| 1. Епĕ<br>2. Есĕ<br>3. Вăл | каснă-ччĕ, каланă-ччĕ | касман-ччĕ, каламан-ччĕ |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1. Епĕр<br>2. Есĕр<br>3. Вĕсем | каснă-ччĕ, каланă-ччĕ | касман-ччĕ, каламан-ччĕ |

Иртнĕ умĕнчи вăхăт пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ.

1. Ку вăхăт курмасăр иртнĕ вăхăт форми çумне чĕ сыпăк хушнипе пулать.

2. Ку вăхăт иртнĕ вăхăт умĕн иртнĕ вăхăта пĕлтерет: Епĕ ĕнер сан патна пынă, анчах есĕ хулана *кайнăччĕ*. Вăл малтан вĕренме университета *кĕнĕччĕ*, кайран авиаци инçтитутне кĕчĕ.

## 42 §. Ĕмĕт форми.

Пĕррелĕ хисеп.

| | ПУРЛĂ ФОРМĂ. | ÇУКЛĂ ФОРМĂ. |
|---|---|---|
| 1. | кас-ă-тт-ăм | кас-м-ă-тт-ăм |
| 2. | кас-ă-тт-ăн | кас-м-ă-тт-ăн |
| 3. | кас-ĕ-чч-ĕ | кас-м-ĕ-чч-ĕ |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1. | кас-ă-тт-ăмăр | кас-м-ă-тт-ăмăр |
| 2. | кас-ă-тт-ăр | кас-м-ă-тт-ăр |
| 3. | кас-ĕ-чч-ĕç | кас-м-ĕ-чч-ĕç |

Ĕмĕт кĕлеткисен пулăвĕпе вĕсен пĕлтерĕшĕ.

1. Ĕмĕт форми пулас вăхăтăн форми çумне чĕ сыпăк хушăннипе пулать.

2. Ку формă ĕмĕтленнине, йе пĕр-пĕр ĕçе тăвасшăн пулнине, тума сунăм пуррине пĕлтерет: Ку колхозра пĕр пилĕк çул та пулин *ĕçлĕттĕм*, тет пĕр çитмĕл çула çитнĕ старик.

Ку формăна тата хутлă условилĕ пуплевсенче калаççĕ: Епĕ кинона *кайăттăм*, анчах вăхăт çук.

| Тĕп вăхăтсем | | Чĕ сыпăк хушăнса пулнă вăхăтсем | |
|---|---|---|---|
| Вăхăт йачĕсем | Формисем [пĕр. хис. 3-ш сăп.] | Вăхăт йачĕсем | Формисем [пĕр. хис. 3-ш сăп.] |
| Хаҍхи вăхăт | касаť | Хаҍхи умĕнчи вăхăт (темиçе хут пулса иртнĕ вăхăт) | касаť-чĕ |
| Пулас вăхăт | касĕ | Пулас умĕнчи вăхăт (ĕмĕт форми) | касĕ-ччĕ |
| Курса иртнĕ вăхăт | касрĕ (касса) | Курса иртнĕ умĕнчи вăхăт (малтан курса иртнĕ вăхăт) | (касса-ччĕ) |
| Курмасăр иртнĕ вăхăт | каснă | Курмасăр иртнĕ умĕнчи вăхăт (малтан курмасăр иртнĕ вăхăт) | кăснă-ччĕ |

Курса иртнĕ вăхăтăн чĕ сыпăклă форми „касрĕ" формăран „касрĕччĕ" пулмала мĕн. Кун пек формă кĕнеке чĕлхинче тĕл пулмасť. Вырăнти калаçусенче хăш тĕлте курса иртнĕ вăхăта „вăл касрĕ" тесе калас вырăнне „вăл касса" теççĕ. Çав формăран курса иртнĕ умĕнчи вăхăт „вăл кассаччĕ" пулнă. Ку формă та кĕнеке чĕлхинче сахал тĕл пулаť. Хаҍхи чĕлхере курса иртнĕ вăхăтпа курмасăр иртнĕ вăхăт умĕнчи формăсене нумай çĕрте пĕр пек калаççĕ: „каснăччĕ" теççĕ.

## 43. Килĕшӳ форми.

Пĕрреле хисеп.

| ПУРЛĂ ФОРМĂ | ÇУКЛĂ ФОРМĂ |
|---|---|
| 1. касăп-ин | кас-măп-ин |
| 2. касă-сăн | касмă-сăн |
| 3. кас-ин | касмĕç-ин |

Нумайлă хисеп.

| | |
|---|---|
| 1. касăпăр-ин | касмăпăр-ин |
| 2. касă-сăр | касмă-сăр |
| 3. касĕç-ин | касмĕç-ин |

Килĕшӳ форми пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ.

1. Ку формă пулас вăхăт формисенчен пулаť. 1-мĕш сăпатра пулас вăхăтăн формисем çумне **ин** сыпăк хушăнаť: калăп-ин, калăпăр-ин. 2-мĕш сăпатра **ăн, ăр** сыпăк вырăнне **сăн, сăр** хушăнаť: касă-сăн, касă-сăр. 3-мĕш сăпатра **ин** сыпăк хушăнаť: калĕ-ин, калĕç-ин. Пĕрреле хисеп форминче **ĕ** сасă тухса ӳкет.

2. Çуклă формăра, пулас вăхăтри пекех, **м** сасă кĕрсе лараť.

3. Килĕшӳ форми калакан çын пĕр-пĕр ĕç пулнипе йе пулассипе килĕшнине пĕлтерет; çуклă формă килĕшменнине пĕлтерет. Çав формах сунăма пĕлтерет.

4. Çак формă çумне **чĕ** сыпăк хушăнсан, **вăл** сунăма вăйлăн кăтартаť. Т ĕ с л ĕ х с е м: Çынсем хулана кайаççĕ, тет.— *Кайĕçин,* кайччăр. Епĕ вĕренме кайас тетĕп. — *Кайăсăн* тата. Вăрман çинчи кăвак пĕлĕт çĕре шăварса *кайинччĕ* (халăх йуррингчен.). Вăрман хĕрринчи ват йуман, çулçи пĕр пек *сарăлинччĕ* (халăх йур.).

## 44 §. Хушу форми.

### ПУРЛĂ ФОРМĂ.

**Пĕррелӗ хисеп.**

| | |
|---|---|
| 1. кас-ам | кал-ам |
| 2. кас | кала |
| 3. кас-тăр | кала-тăр |

**Нумайлă хисеп.**

| | |
|---|---|
| 1. кас-**ар** | кал-ар |
| 2. кас-**ăр** | кал-ăр |
| 3. кас-**чăр** | кала-ччăр |

### ÇУКЛĂ ФОРМА.

**Пĕррелӗ хисеп.**

| | |
|---|---|
| 1. касам **мар** | калам мар |
| 2. **ан** кас | **ан** кала |
| 3. **ан** кастăр | ан калатăр |

**Нумайлă хисеп.**

| | |
|---|---|
| 1. касар мар | калар мар |
| 2. ан касăр | ан калăр |
| 3. **ан** касчăр | **ан** калаччăр |

**Хушу формисен пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ.**

1. Пĕррелӗ хисепри иккĕмĕш сăпатăн кĕлетки ĕçхĕл тĕпе пулаť. 2-мĕш сăпатăн нумайлă кĕлетки ĕçхĕл тĕпĕ çумне **ăр-ĕр** сыпăк хушăннипе пулаť. Уçă сасăпа пĕтекен тĕпсенче ку сыпăк умĕн вĕçĕнчи уçă сасă тухса ӳкет: кала—кал-ăр, çӳре—çӳр-ĕр.

2. Пĕррелӗ хисепри 1-мĕш сăпатăн кĕлетки **ам-ем** сыпăк хушăннипе, нумайлă хисепре **ар-ер** сыпăк хушăннипе пулаť. Уçă сасăпа пĕтекен ĕçхĕлсенче вĕçĕнчи **а-е** тухса ӳкет: кала-ам→ калам, кала-ар→калар.

3. Пĕррелӗ хисепĕн 3-мĕш сăпатăн форми сăмах тĕпĕ çумне **тăр-тĕр** сыпăк хушăннипе, нумайлă хисепре **чăр-чĕр** сыпăк хушăннипе пулаť. Ĕçхĕл тĕпĕ уçă сасăпа йе **й, р, л, н, м, в** сасăсемпе пĕтет пулсан, нумайлă хисепре ч вăрăмланаť. Çырура вара **ччăр-ччĕр** çыраççĕ: калаччăр, килччĕр, чавччăр.

4. Хушу формин 2-мĕш сăпачĕ **хушнине,** чĕннине, ыйтнине, суннине пĕлтерет: Хăвăртрах *çавăрăнкалăр.* Алебастр *парăр;* Пурте зайома *çырăнăр!* Сывă *пул!*

Ĕçхĕлсен сăпатлану таблици.

Пурлă формăсем.

| Тĕп вăхăтсем | | | Чĕ сыпăк хушăнса пулнă вăхăтсем | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Хаҫхи вăхăт | кас-а-т-ăп<br>кас-а-т-ăн<br>кас-а-ť<br>кас-а-т-пăр<br>кас-а-т-ăр<br>кас-а-ç-çĕ | кала-т-ăп<br>кала-т-ăн<br>кала-ť<br>кала-т-пăр<br>кала-т-ăр<br>кала-ç-çĕ | Хаҫхи умĕнчи вăхăт | кас-а-т-т-ăм<br>кас-а-т-т-ăн<br>кас-а-т-чĕ<br>кас-а-т-т-ăмăр<br>кас-а-т-т-ăр<br>кас-а-ť-ч-ĕç | кала-т-т-ăм<br>кала-т-т-ăн<br>кала-ť-чĕ<br>кала-т-т-ăмăр<br>кала-т-ăр<br>кала-ť-ч-ĕ-ç |
| Пулас вăхăт | кас-ăп<br>кас-ăн<br>кас-ĕ<br>кас-ăпăр<br>кас-ăр<br>кас-ĕ-ç | кал-ăп<br>кал-ăн<br>кал-ĕ<br>кал-ăпăр<br>кал-ăр<br>кал-ĕ-ç | Ĕмĕт форми (пулас умĕнхи формă) | кас-ă-тт-ăм<br>кас-ă-тт-ăн<br>кас-ĕ-чч-ĕ<br>кас-ă-тт ăмăр<br>кас-ă-тт-ăр<br>кас-ĕ-чч-ĕ-ç | кал-ă-тт-ăм<br>кал-ă-тт-ăн<br>кал-ĕ-чч-ĕ<br>кал-ă-тт-ăмăр<br>кал-ă-тт-ăр<br>кал-ĕ-чч-ĕ-ç |
| Курса иртнĕ вăх. | кас-р-ăм<br>кас-р-ăн<br>кас-р-ĕ<br>кас-р-ăмăр<br>кас-р-ăр<br>кас-р-ĕ-ç | кала-р-ăм<br>кала-р-ăн<br>кала-р-ĕ<br>кала-р-ăмăр<br>кала-р-ăр<br>кала-р-ĕ-ç | | — | |
| Курмасăр иртнĕ вăхăт | епĕ<br>есĕ<br>вăл<br>епĕр<br>есĕр<br>вĕсем | } кас-нă, кала-нă. | Иртнĕ умĕнчи вăхăт | епĕ<br>есĕ<br>вăл<br>епĕр<br>есĕр<br>вĕсем | } кас-нă-ччĕ, кала-нă-ччĕ |
| Килĕшӳ форми | кас-ăп-ин<br>кас-ă-сăн<br>кас-ин<br>кас-ăпăр-ин<br>кас-ă-сă р<br>кас-ĕ-ç-ин | кал-ăп-ин<br>кал-ă-сăн<br>кал-ин<br>кал-ăпăр-ин<br>кал-ă-сăр<br>кал-ĕ-ç-ин | | — | |
| Хушу форми | кас-ам<br>кас<br>кас-тăр<br>кас-ар<br>кас-ăр<br>кас-чăр | кал-ам<br>кала<br>кала-тăр<br>кал-ар<br>кал-ăр<br>кала-ччăр | | — | |

Ёçхĕлсен сăпатлану таблици.

Çуклă формăсем.

| | Тĕп вăхăтсем | | | Чĕ сыпăк хушăнса пулнă вăхăтсем | |
|---|---|---|---|---|---|
| Хаљхи вăхăт | кас-мас-т-ăп<br>кас-мас-т-ăн<br>кас-мас-т̆<br>кас-мас-т-пăр<br>кас-мас-т-ăр<br>кас-маç-(т)-çĕ | кала-мас-т-ăп<br>кала-мас-т-ăн<br>кала-мас-т̆<br>кала-мас-т-пăр<br>кала-мас-т-ăр<br>кала-маç-(т)-çĕ | Хаљхи умĕнчи вăхăт | кас-мас-т-ăм<br>кас-мас-т ăн<br>кас-мас-т-чĕ<br>кас-мас-т̆-ăмăр<br>кас-мас-т-ăр<br>кас-мас-т̆-чĕç | кала-мас-т-ăм<br>кала-мас-т-ăн<br>кала-мас-т-чĕ<br>кала-мас-т̆-ăмăр<br>кала-мас-т ăр<br>кала-мас-т̆-чĕç |
| Пулас вăхăт | кас-м-ăп<br>кас-м-ăн<br>кас-м-ĕ<br>кас-м-ăпăр<br>кас-м-ăр<br>кас-м-ĕ-ç | кала-м-ăп<br>кала-м-ăн<br>кала-м-ĕ<br>кала-м-ăпăр<br>кала-м ăр<br>кала-м-ĕ-ç | Ĕмĕт формиі (пулас умĕнчи вăхăт) | кас-м-ă-тт-ă-м<br>кас-м-ă-тт-ăн<br>кас-м-ĕ-ччĕ<br>кас-м-ă-тт-ăмăр<br>кас-м-ă-тт-ăр<br>кас-м-ĕ-чч-ĕ-ç | кала-м-ă-тт-ăм<br>кала-м-ă-тт-ăн<br>кала-м-ĕ-ччĕ<br>кала-м-ă-тт-ăмăр<br>кала-м-ă-тт ăр<br>кала-м-ĕ-чч-ĕ-ç |
| Курса иртнĕ вăхăт | кас-ма-р-ăм<br>кас-ма-р-ăн<br>кас-ма-р-ĕ<br>кас-ма-р-ă-мăр<br>кас-ма-р-ăр<br>кас-ма-р-ĕ-ç | кала-ма-р-ăм<br>кала-ма-р-ăн<br>кала-ма-р-ĕ<br>кала-ма-р-ăмăр<br>кала-ма-р-ăр<br>кала-ма-р-ĕ-ç | | — | |
| Курмасăр иртнĕ вăхăт | епĕ, есĕ, вăл, епĕр, есĕр, вĕсем } кас-ма-н, кала-ма-н | | Иртнĕ умĕнчи вăх. | епĕ, есĕ, вăл, епĕр, есĕр, вĕсем } кас-ма-н-ччĕ, кала-ма-н-ччĕ | |
| Килĕшӳ формиі | кас-м-ăп-ин<br>кас-м-ă-сăн<br>кас-м-ин<br>кас-м-ăпăр-ин<br>кас-м-ă-сăр<br>кас-м-ĕ-ç-ин | кала-м ăп-ин<br>кала-м-ă-сăн<br>кала-м-ин<br>кала-м-ăпăр-ин<br>кала-м-ă-сăр<br>кала-м-ĕ-ç-ин | | — | |
| Хушу формиі | кас-ам мар<br>ан кас<br>ан кас-тăр<br>кас-ар мар<br>ан кас-ăр<br>ан кас-чăр | кал-ам мар<br>ан кала<br>ан кала-тăр<br>кал-ар мар<br>ан кал-ăр<br>ан кала-ччăр | | — | |

5. Хушу формин 3-мĕш сăпачĕ хушнине, суннине пĕлтерет: Çекретаре кала: вăл халех ĕнерхи протокола *парса йатăр*. Политехникăлă шкул сывă *пултăр!*

6. 1-мĕш сăпатри хушулă форма 1-мĕш сăпатăн хăйĕн пĕр-пĕр ĕçе тума йышăну пуррине, сунăм пуррине пĕлтерет: Епĕ çĕрле хурала *кайам*, есĕ кан. Ĕçри çитменлĕхсене *пĕтерер*.

Асăрхамали. Хăш чухне хушу формисем çумне, сăмаха кăмăллăн, çемçен, йăвашшăн каланине пĕлтерме, уйрăм татăсем хушăнаççĕ.

Вĕсем çаксем:

1. **сам-сем**: кала-сам, кил-сем.
2. **ччĕ**: кала-ччĕ, кил-ччĕ.
3. **сам-ччĕ, сем-ччĕ**: кала-сам-ччĕ, кил-сем-ччĕ.
4. **а, и**: кайтăр-а, кайтăр-и, кайам-а, кайам-и.
5. **сам-и**: кай-сам-и, йул-сам-и.

## 45 §. Чĕ сыпăк тĕрлĕ ушкăнри сăмахсем çумне хушăнни

**Чĕ** сыпăк, ĕçхĕлрен пуçне, тата ытти ушкăнри сăмахсем çумне те хушăнма пултарать. Халĕ унăн икĕ пĕлтерĕшĕ палăрать.

1) **Чĕ** сыпăк умĕн (ĕлĕкри вăхăтра) пулнине пĕлтерет:

| | |
|---|---|
| кĕнеке *пур* | кĕнеке *пур***ччĕ** |
| ку—*пахча* | ку—*пахча***ччĕ** |
| вăл *аван* | вăл *аван***ччĕ** |
| вăл *авантарах* | вăл *авантарах***чĕ** |
| кунта *пиллĕк* | кунта *пиллĕк***чĕ** |
| унта *пиллĕкĕн* | унта *пиллĕкĕн***ччĕ** |
| унта *кам?* | унта *кам***ччĕ?** |
| вăл—*вĕренекен* | вăл—*вĕренекен***ччĕ** |
| пирĕн *вĕренмеле* | пирĕн *вĕренмеле***ччĕ** |
| вăл *кайасшăн* | вăл *кайасшăн***ччĕ** |
| ку *лайăххи* | ку *лайăххи***ччĕ** |
| *вулама* (илтĕн-и?) | *вулама***ччĕ** |

Çак тĕслĕхсенче малтанхи йупари паллă тунă сăмахсем халь-хине пĕлтереççĕ. Çав сăмахсемех иккĕмĕш йупари тĕслĕхсенче, **чĕ** сыпăк хушăнсан, умĕн пулнине пĕлтереççĕ, вĕсем тата курса иртнĕ вăхăтăн пĕлтерĕшне палăртаççĕ.

2) **Чĕ** сыпăк ĕçе тума ĕмĕт пуррине, сунăм пуррине пĕлтерет:

| | |
|---|---|
| шкула *кайас* | шкула *кайас***чĕ** |
| шкула *кай* | шкула *кай***ччĕ** |

## 46 §. Ĕçхĕлсене тăвакан сыпăксем.

### 1. Тĕп ĕçхĕлсенчен сыпăклă ĕçхĕл тăвакан сыпăксем.

Тĕп ĕçхĕлсенчен сыпăклă ĕçхĕлсем **çак сыпăксем** хушăннипе пулаççĕ:

а) **ăн-ĕн,-н**—тупăн, пĕрĕн, сивĕн, йусан.

**ăл-ĕл,-л**—сарăл, çурăл, сирĕл, çĕмĕрĕл.

Ку ĕçхĕлсем ĕç ĕçлекенни çине хăй çине кайала таварăннине пĕлтереççĕ: çăвăн—хăна ху çу, салтăн—хăна ху салт, сырăн—хăна ху сыр.

б) **ăш-ĕш-ш**; **ăç-ĕç-ç**: тупăш, пулăш, тӳпелеш; çапăç, йатлаç. (Кунта ç сасă ш сасăран пулнă).

Ку ĕçхĕлсем хире-хирĕç пулнă ĕçе пĕлтереççĕ: перĕш—пĕр-пĕрне пер, тӳпелеш—пĕр-пĕрне тӳпеле.

в) **кала-келе**: турткала, çапкала, перкеле, ĕçлекеле. Кĕсем ĕç темиçе хут пулнине, час-часах пулнине, йе аран-аран пулнине пĕлтереççĕ.

г) **ай-ей**: парайаĭ, параймасĭ, килейет, килеймест.

Ку сыпăк хушăннă тĕпсем (парай, килей пеккисем) чĕлхере уйрăм тĕл пулсах каймаççĕ. Ку сыпăк ĕçе тума пултарайнине-пултарайманнине пĕлтерет.

д) **ар-ер**: хытар, шăтар, ӳкер, çитер.

**тар-тер**: çактар, пăхтар, чĕнтер, пĕлтер.

**т**: çӳрет, çĕлет, хĕрт, вĕрент.

**ттар-ттер**: тутарттар, çĕлеттер, пĕтерттер, çӳреттер.

**ар-ер, т, тар-тер, ттар-ттер** сыпăклă ĕçхĕлсем ĕçе тепĕр çынна тутарнине, тума май панине пĕлтереççĕ: вĕренекен вулаĭ, вĕрентекен вулаттараĭ.

#### 2. Йапала йачĕсенчен, паллă йачĕсенчен ĕçхĕлсем тăвакан сыпăксем.

**ар-ер,-р**: кăвакар, çывăхар, йешер, палăр.

**ал-ел-л**: шурал, хурал, кивел, çĕнел.

**ăн-ĕн-н**: ăшăн, пуçăн, йĕпен, сивĕн.

**шăн-шĕн**: йутшăн, типшĕн.

**ăл-ĕл-л**: сутăл, йакал, чĕрĕл, ӳсĕрĕл.

**ла-ле**: пуçла, сăмахла, тикĕтле, тĕвĕле.

**лан-лен**: пăрлан, йунлан, чиперлен, шиклен.

**лаш-леш**: тавлаш, сутлаш, пĕрлеш.

#### 3. Чĕвĕсенчен ĕçхĕлсем тăвакан сыпăксем.

**ăртат-ĕртет**: кăштăртат, чăштăртат, вĕлтĕртет.

**ăлтат-ĕлтет**: йăшăлтат, пăшăлтат, мĕкĕлтет.

**лат-лет**: нăйлат, пăшлат, чиклет.

### 47 §. Çумсем.

Йапала йачĕ çумĕнче, тата ĕçхĕл çумĕнче вĕсем мĕнлине кăтартса тăракан сăмахсем пулаççĕ. Вăл сăмахсене **ç у м с е м** теççĕ.

Çумсене виçĕ пайа уйăрма пулаĭ: а) **п ĕ т ĕ м л е ç у м с е м**, б) **й а п а л а й а ч ĕ ç у м ĕ с е м**, в) **ĕ ç х ĕ л ç у м ĕ с е м**.

1. Йапала йачĕ çумĕ те, ĕçхĕл çумĕ те пулма пултаракан сăмахсем пĕтĕмле çумсем пулаççĕ.

**Т ĕ с л ĕ х**: Иван *чăвашла* хаçат вулаĭ. Иван *чăвашла* вулаĭ.

Малтанхи пуплевре *чăвашла* сăмах *хаçат* сăмах çумĕ пулаĭ, вăл хаçат мĕнлине пĕлтерекен сăмах, вăл хаçат сăмахăн **м ĕ н л е в ĕ**

пулаť. Иккĕмĕш пуплевре *чăвашла* сăмах *вулаť* ĕçхĕлĕн çумĕ пулаť, вăл *вулаť* ĕçхĕлĕн мĕнлевĕ пулаť.

Пуплеври выранне пăхса, пĕтĕмле çумсем йе йапала йачĕ çумĕ, йе ĕçхĕл çумĕ пулаççĕ.

2. Хăш сăмахсем йапала йачĕ çумĕ çех пулма пултараççĕ.

Т ĕ с л ĕ х: Çурхи шыв кĕрлесе йухаť. Ку пуплевре *çурхи* сăмах йапала йачĕ *шыв* сăмах умĕнче, унăн çумĕ пулса тăраť. Вăл унăн мĕнлевĕ. Çав сăмахах *йухаť* ĕçхĕл çумĕнче (умĕнче те, хыçĕнче те) тăма пултараймасť. Çавăнпа унăн мĕнлевĕ пулма та пултараймасť.

Кун пек сăмахсене тата çаксене кăтартма пулаť: кĕрхи, ĕнерхи, пĕлтĕрхи, паçăрхи, малти, хыçалти, айалти, урамри, хулари, т. ыт. те.

Йапала йачĕ çумĕ çех пулакан çумсем п а л л ă й а ч ĕ с е м пулаççĕ.

3. Хăш сăмахсем ĕçхĕл çумĕ çех пулма пултараççĕ.

Т ĕ с л ĕ х: Ку ĕç пĕлтĕр пулнă. Ку пуплевре *пĕлтĕр* сăмах *пулнă* сăмахпа çыхăнса тăраť, вăл ĕçхĕл çумĕ, унăн мĕнлевĕ пулаť. Çав сăмах, *ĕç* сăмахпа çыхăнса тăрса, унăн çумĕ пулма пултараймасť. Сăмахран, ку *пĕлтĕр ĕç* теме йурамасť, *пĕлтĕрхи ĕç* тесен анчах сăмах майлашăвĕ килет.

Кун пек сăмахсене тата çаксене кăтартма пулаť: ĕнер, авал, халĕ, паçăр, т. ыт.

Ĕçхĕлпе çыхăнса тăрса унăн çумĕ çех пулакан сăмахсем ĕ ç х ĕ л ç у м ĕ с е м пулаççĕ.

## ПАЛЛĂ ЙАЧĔСЕМ.

### 48 §. Паллă йачĕсен уйрăмĕсемпе вĕсен пĕлтерĕшĕ.

П а л л ă й а ч ĕ тесе йапала йачĕсен паллине кăтартакан сăмахсен ушкăнне калаççĕ.

Йапалан паллисем çаксем пулма пултараççĕ: унăн мĕнлелĕхĕ (*ăслă* çын, *хĕрлĕ* çăлтăр), унăн вырăнĕ (*çырмари* шыв, *савăтри* ĕç), унăн вăхăчĕ (*çурхи* шыв, *ĕнерхи* кун), унăн шучĕ (*нумай* тырă, *вунă метрлă* пӳрт), йапалан материалĕ (*ылттăн* укçа, *тимĕр* витре).

Кирек мĕнле паллă йатне те: *мĕнле? ăçти? хăçанхи?* ыйтусем лартса пĕлме пулаť. Т ĕ с л ĕ х с е м:

1. Йапала мĕнлелĕхне пĕлтерекен паллă йачĕсем: Кӳлĕ хĕрринче *шурă* çуртсем шывала пăхса лараççĕ. Тусем çинчен чечексен *тутлă* шăршисем йухса анаççĕ. *Ăслă* çулпа *хĕрлĕ* обоз килет.

2. Йапала вырăнне пĕлтерекеннисем: *Пахчари* çимĕçсене пуçтарса пĕтертĕмĕр. *Хирти* тырăсем хумханса лараççĕ.

3. Йапала вăхăтне пĕлтерекеннисем: *Ĕлĕкхи* ĕмĕрсен кĕлетки куçăма курăнаť айакран. *Ĕнерхи* кун çил-тăвăл кашларĕ. *Кĕрхи* каç сивĕ пулаť.

4. Йапала шутне пĕлтерекеннисем: *вунă метрлă* пӳрт лартрăмăр. *Виç тенкĕлĕ* билет илнĕ.

5. Йапала мĕнле материалран тунине пĕлтерекеннисем: Йалсенче *йăвăç* çурт, хуласенче *чул* çурт нумай.

Кун пек сăмахсем, уйрăммăн тăрса вĕçленеççĕ пулсан, йапала йачĕ пулаççĕ.

6. Паллă йачĕ пуплевре йапала йачĕ çумĕ, тата калав пулаť: *Çĕнĕ* трактăр *айакри* хирте ĕçлет. Пирĕн трактăр *çĕнĕ*. *Çĕнĕ* сăмахпа *айакри* сăмахсем йапала йачĕ çумĕсем, мĕнлевĕсем пулаççĕ. Иккĕмĕш пуплевре *çĕнĕ* сăмах калав пулаť.

Епĕр *вĕр-çĕнĕ* кĕнеке илтĕмĕр. Ку кĕнеке *вĕр-çĕнĕ*. Кунта малтанхи пуплевре *вĕр-çĕнĕ* сăмах йапала йачĕ çумĕ пулаť, иккĕмĕш пуплевре *вĕр-çĕнĕ* сăмах калав пулаť.

## 49 §. Паллă йачĕсен пуçламĕш формипе вăйлă форми.

Йапаласен паллисем, мĕнлелĕхĕ йенчен илсен, пĕр пек мар. Вĕсен мĕнлелĕхĕ тĕрлĕ пулма пултараť. Вĕсене пĕлтерме паллă йачĕсен хăйне уйрăм формисем пур.

Паллă йачĕсен пĕр кĕлетки, пуçламĕш форми, мĕнлелĕхĕн йатне анчах калаť, вăл унăн вăйлăхне нимĕн йенчен те уйăрса каламасť.

Пĕр-пĕр йапалан мĕнлелĕхĕ (сăмахран, тĕсĕ, пысăкăшĕ) ытти йапаласеннинчен ытла та вăйлă пулма пултараť. Вĕсем вăйлă паллăсем, вăйлă мĕнлелĕхсем пулаççĕ. Вăл мĕнлелĕхсене кăтартма паллă йачĕсен уйрăм формă пур. Вĕсене вăйлă паллăсен формисем, кĕскен—в ă й л ă ф о р м ă с е м теççĕ.

Т ĕ с л ĕ х с е м:

| Пуçламĕш паллă йачĕсем: | Вăйлă паллă йачĕсем: |
|---|---|
| хура | хуп-хура |
| хура | пит хура |
| хура | хура-хура |

Вăйлă кĕлеткесем çак майсемпе пулаççĕ:

1. Паллă йачĕсен вăйлă кĕлетки сăмахăн малтанхи сассисенчен пулнă сыпăк хушăннипе пулаť.

а) Паллă йачĕнчен малтанхи икĕ сассине илсе, вĕсем çумне п сасă хушаççĕ, вăл сыпăка паллă йачĕ умне хурса калаççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| хура | хуп-хура | тикĕс | тип-тикĕс |
| йĕпе | йĕп-йĕпе | сивĕ | сип-сивĕ |
| хĕрлĕ | хĕп-хĕрлĕ | йака | йап-йака |
| сарă | сап-сарă | такăр | тап-такăр |

б) Хăш паллă йачĕсен хушăннă сыпăкĕнчи уçă сасси урăх пулма пултараť: çутă—çап-çутă, шурă—шап-шурă.

в) Хăш паллă йачĕсен хушăннă сыпăкĕнче уçă сасси çавах йулаť, вĕçĕнчи хупă сасси урăх пулаť: кăвак—кăн-кăвак, йешĕл—йем-йешĕл.

г) Хăш паллă йачĕсем умĕн хăйне уйрăм сыпăксем хушăнаççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| тĕттĕм | сĕм-тĕттĕм | çĕнĕ | вĕр-çĕнĕ |
| суккăр | сĕм-суккăр | хытă | шак-хытă |

2. Паллă йачĕсен вăйлă кĕлеткине тума тата уйрăм сăмахсем хушăнаççĕ: чи, пит(ĕ), питĕрех, ытла, майсăр, çав тĕрлĕ, çав тери, т. ыт. çавăн пек вăйлăлатакан сăмахсем: чи пысăк, пит аван, ытла ăслă, майсăр лайăх, çав тери хăрушă, темĕн тĕрлĕ сарлака.

3. Хăш чух вăйлă кĕлеткене тума паллă йатне иккĕлетсе калаççĕ: шурă-шурă, сарă-сарă, хура-хура, шăтăклă-шăтăклă.

---

*Çуркуннехи* пĕлĕт *кăн-кăвак* пĕлĕт. *Тăп-тăрă* тăрна куç пек шыв чулсем çинчен шăнкăртатса йухать. *Сарă-сарă* чечексем йлемлетрĕç улăха, *шурă-шурă* чечексем ак сăн пачĕç çарана. Çибирте *питĕ пысăк* вăрмансем пур. Кăçал мăйăр *çав тери нумай* пулчĕ.

## 50 §. Паллă йачĕсен танлаштару кĕлетки.

Йапаласене пĕр-пĕринпе пĕр-пĕр паллă йенчен танлаштарса калама пулать. Танлаштарнă чухне, паллă йачĕсен икĕ кĕлеткипе усă кураççĕ: пуçламĕш кĕлеткипе, тата танлаштару кĕлеткипе.

1. Икĕ йапалана, йе темиçе йапалана танлаштарнă чух, вĕсен пĕрин мĕнлелĕхĕ тепĕриннинчен паллах ытла пулсан, пуплеве паллă йачĕн пуçламĕш кĕлеткине кĕртсе калаççĕ. Танлаштаракан йапаласенчен пĕрне йат вĕçлевĕнче, тепĕрне тухху вĕçлевĕнче лартаççĕ.

Т ĕ с л ĕ х: Днепрострой Волховстройран чаплă. Украинă Белоруççирен пысăк. Казакстан Украинăран та пысăк. Иван Петĕртен те вăйлă. Павăл Иванран та вăйлă.

2. Пĕр йапала мĕнлелĕхĕн уйрăмлăхĕ тепĕриннинчен ытла паллах мар пулсан, паллă йачĕ çакна кăтартма **рах-рех** сыпăк йышăнать. Сăмах **й, р, л, н, м, в** сасăсемпе пĕтет пулсан, **тарах-терех** сыпăк пулма пултарать--**р** сасă хыççăн йаланах, ыттисем хыççăн икĕ тĕрлĕ те: **рах-рех** те, **тарах-терех** те.

Танлаштаракан йапаласенчен пĕри каллех йат вĕçлевĕнче, тепĕри тухху вĕçлевĕнче тăрать.

Ку сыпăка йышăнакан кĕлеткене т а н л а ш т а р у ф о р м и теççĕ.

| Пуçламĕш формă (тĕп формă). | Танлаштару форми. |
|---|---|
| пысăк | пысăк-**рах** |
| хура | хура **рах** |
| хĕрлĕ | хĕрлĕ-**рех** |
| начар | начар-**тарах** |
| чипер | чипер-**терех** |
| кахал | кахал-**(та)рах** |
| вăрăм | вăрăм-**(та)рах** |
| найан | найан-**(та)рах** |
| йулхав | йулхав-**(та)рах** |
| нумай | нумай-**(та)рах** |

Танлаштару форми умĕн вăйлăлатакан татăсем—*кăшт, пăртак* сăмахсем пулма пултараççĕ.

Тĕслĕх. Атăл Днепртан пысăкрах. Вĕрене йуманран хытăрах. Акă пăрлă хирсем, тусем курăнчĕç, пĕринчен пĕри çӳлĕрех, пĕринчен пĕри хăрушăрах.

3. Танлаштарнă чух ахаљ паллăлă йапалана анчах мар, вăйлă паллăлă йапалана та танлаштарма пулат̆.

Волховстрой пит пысăк електростанци. Днепрострой унтан та пысăк (пысăкрах) електростанци. Вĕсен шкулĕ тап-таса, пирĕн шкул тата тасарах.

## 51 §. Паллă йачĕсем вĕçленни çинчен.

1. Паллă йачĕ, йапала йачĕ çумĕ пулнă чух, йалан ун умĕнче тăрат̆. Вĕçленнĕ чух, хăй вĕçленмест, йапала йачĕ анчах вĕçленет.

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Й. пысăк | колхоз | сарлакарах | çул | сип-симĕс | курăк |
| К. „ | колхоз-ăн | „ | çул-ăн | „ | курăк-ăн |
| П. „ | колхоз-а | „ | çул-а | „ | курăк-а |
| | т. ыт. | | т. ыт. | | т. ыт. |

2. Хăш чух паллă йачĕ пулакан сăмах вĕçленме те пултарат̆ анчах ун чухне вăл йапала йатне тухса кайат̆. 1) *Сивĕ* кунсем çитрĕç. 2) *Сивĕсем* çитрĕç. Малтанхи пуплевре *сивĕ*—паллă йачĕ иккĕмĕшĕнче—*сивĕсем*—йапала йачĕ.

## 52 §. Паллă йачĕсене тăвакан сыпăксем.

**лă-лĕ**—пуррине пĕлтерет: уралă, ăслă, чаплă, ĕнелĕ.
**сăр-сĕр**—çуккине пĕлтерет: урасăр, ăссăр, чĕлхесĕр, ĕнесĕр.
**ла-ле**—йевĕрлĕке кăтартат̆: чăвашла (кĕнеке).
**ри, ти, чи**—хулари, пахчари, вăрманти, шкулсенчи. Ку паллă йачĕсем вырăна кăтартаççĕ. Вĕсем вырăн вĕçлевĕнчи йапала йачĕсенчен **и** сыпăк хушăннипе пулнă: урамра + и—урамри, вăрманта + и—вăрманти, урамсенче + и — урамсенчи.
**хи**—вăхăта кăтартат̆: пайанхи, пĕлтĕрхи, çурхи, кĕрхи.

## 53 §. Пайташсем.

Çак пуплевсене илер:

*Çĕнĕ* кĕнеке сĕтел çинче выртат̆.
*Вулакан* кĕнеке сĕтел çинче выртат̆.
*Вуланă* кĕнеке сĕтел çинче выртат̆.
*Вулас* кĕнеке сĕтел çинче выртат̆.
*Вуламалли* кĕнеке сĕтел çинче выртат̆.

Ку пуплевсенче паллă тунă сăмахсем пурте йапала çумĕсем. Вĕсем, *кĕнеке* сăмах умĕнче тăрса, унăн мĕнлевĕсем пулаççĕ. *Кĕнеке* сăмах *мĕнле кĕнеке*? тесе ыйтăнат̆. Ăна вара çав паллă тунă сăмахсемпе ответ паратпăр. Вĕçленӳ йенчен илсен те, кунта пĕр пеккинех куратпăр: йапала йачĕ вĕçленет, унăн умĕнче тăракан çумĕ хăй формине улăштармаст̆:

Й. çĕнĕ кĕнеке — вулакан кĕнеке
К. çĕнĕ кĕнеке-нĕн — вулакан кĕнеке-нĕн

Й. вуланă кĕнеке — вулас кĕнеке
К. вуланă кĕнеке-нĕн — вулас кĕнеке-нĕн

Тата çак çумсенех тепĕр йенчен сăнаса пăхар. *Çĕнĕ* сăмах—паллă йачĕ, *вула*—ĕçхĕл. *Вулакан* сăмах *кан* сыпăк хушăнса пулнă формă. Вăл паллă йачĕ йеверлĕ, анчах *çĕнĕ* сăмахпа *вулакан* сăмахăн уйрăмĕ те пур. Ку сăмах ĕçхĕлрен пĕтĕмпех уйăрăлса кайман теме пулаť. Вăл, ĕçхĕл пекех, вăхăта та пĕлтерет. Çапла ĕнтĕ *вулакан* формă пĕр йенчен паллă йачĕ, тепĕр йенчен—ĕçхĕл. Урăхла каласан, вăл ĕçхĕлсем ушкăнне те, паллă йачĕсен ушкăнне те п а й а  к ĕ р е т теме пулаť. Ĕçхĕлрен пулнă паллă йачĕсене п а й т а ш теççĕ.

Пайташсем çакăн пеккисем пулаççĕ:

1. Х а ђ х и  в ă х ă т  п а й т а ш ĕ (хађхи пайташ): вулакан.
2. И р т н ĕ  в ă х ă т  п а й т а ш ĕ (иртнĕ пайташ): вуланă.
3. П у л а с  в ă х ă т  п а й т а ш ĕ (пулас пайташ): вулас.
4. П у л м а л и  п а й т а ш: вуламала.

Вĕсем çак сыпăксене йышăннипе пулаççĕ:

#### Пурлă формăсем.

1. Х а ђ х и  п а й т а ш—**кан,-кен** (уçă сасă хыççăн), **акан-екен** (хупă сасă хыççăн): вула-кан, çўре-кен, çыра-кан, çĕмĕр-екен.

2. И р т н ĕ  п а й т а ш—**нă-нĕ**: кай-нă, çўре-нĕ, çыр-нă, çĕмĕр-нĕ.

3. П у л а с  п а й т а ш—**ас-ес** (хупă сасă хыççăн), **с** (уçă сасă хыççăн): вула-с, çўре-с; çыр-ас, çĕмĕр-ес.

4. П у л м а л и  п а й т а ш—мала-меле (мали-мели): вула-мала (и), çўре-меле(и), çыр-мала(и), çĕмĕр-меле(и).

#### Çуклă формăсем.

1. Х а ђ х и  п а й т а ш } 2. И р т н ĕ  п а й т а ш } **ман-мен**: вула-ман, çўре-мен.
3. Пулас пайташ—**мар**: вулас мар, çўрес мар.
4. Пулмали пайташ—**мар**: вуламала(и) мар, çўремеле(и) мар.

---

Пайташсем пуплевре йапала йачĕ çумĕ, тата калав пулаççĕ. Хађхи пайташ тата, уйрăм ťăрсан, хуçа та. тытăнсаťăран та пулма пултараť. Ку уйра *ĕçлекен* трактăр тепĕр уйа кайрĕ. Ударлă *ĕçлекен* хисепе тивĕçлĕ. *Ĕçлекенсене* ĕç укçи панă. Есĕ ирирех пахчара *ĕçлекен.*

Хађхи пайташ, йапала йачĕ çумĕ пулсан, хађхи вăхăта пĕтĕмле пĕлтерет; калав пулсан, йалан, пĕрмай пулса пыракан хађхи вăхăта пĕлтерет: Епĕ *вулакан* журнал интереслĕ. Есĕ каçсерен журнал *вулакан.*

Иртнĕ пайташ, йапала йачĕ çумĕ пулсан, иртнĕ вăхăта пĕтĕмле пĕлтерет; çав формах калав пулсан, курмасăр иртнĕ вăхăта пĕлтерет: Епĕ *вуланă* журнал интереслĕ. Епĕ интереслĕ журнал *вуланă.*

*Кайнă-кайман* йышши иртнĕ пайташсем ĕç пĕтĕмпех пулса çитменнине пĕлтереççĕ: Ачасем пичĕсене *çунă-çуманах* мăйăра тухса кайнă.

## 54 §. Виççĕмĕш сăпат сыпăкĕпе с к е р сыпăка йышăннă формăсем.

Йапала йачĕсем сăпата кăтартма уйрăм сыпăксем йышăнаççĕ. Вĕсен виççĕмĕш сăпат сыпăкĕ и, ĕ пулаť: лаша—лаши, ывăл—ывăлĕ. Йапала йачĕсемсĕр пуçне, 3-мĕш сăпатăн и сыпăкне ытти хăш сăмахсем те йышăнаççĕ. Вĕсем çаксем: паллă йачĕсемпе пайташсем, тата камăнлăх вĕçлевĕ. Тĕслĕхсем:

| | |
|---|---|
| хура—хури | вулакан—вулаканни |
| сарă—сарри | вуланă— вулани |
| аван—аванни | вулас—вуласси |
| лайăх—лайăххи | вуламала—вуламали |
| вăрманăн—вăрманăнни | манăн—манăнни |
| саватăн—саватăнни | пирĕн—пирĕнни |

1. А-е сасăпа пĕтекен паллă йачĕн вĕçĕнчи уçă сасси, и сыпăк хушăнсан, тухса ÿкет: хура—хури, йĕпе—йĕпи.

2. Ă-ĕ сасăпа пĕтекеннисен ă-ĕ тухса ÿкет, ун умĕнчи хупă сасси вăрăмланаť (çырура иккĕленет). Çавăн пекех хупă сасăпа пĕтекеннисен вĕçĕнчи сасси те вăрăмланаť: сарă—сарри, типĕ—типпи, кăвак—кăвакки, хайар—хайарри.

Сăмахра ă-ĕ умĕн икĕ хупă сасă пулсан, ун умĕнчи хупă сасă вăрăмланмасť: хĕрлĕ—хĕрли, пăрлă—пăрли, ăслă—ăсли.

3. Паллă йачĕсенни пекех, пайташсен те и сыпăк умĕн сасăсем çав саккунпах улăшăнаççĕ: хупă сасă и умĕн вăрăмланаť: калакан—калаканни, калас—каласси. Вĕçĕнчи уçă сасă и умĕн тухса ÿкет: каламала—каламали, каланă—калани.

4. Паллă йачĕсемпе пайташсем, и сыпăксăр пуçне, тата скер сыпăк йышăнма пултараççĕ: лайăхскер, вуланканскер, кайнăскер, кайасскер, каймаласкер, каймалискер.

**Скер** тени ĕлĕкхи чĕлхере йапала тенине пĕлтернĕ. Çавăнпа *лайăхскер* тени лайăх йапала тенине пĕлтернĕ.

**Скер** сыпăк йышăннă формăсем хăш чух и сыпăк та йышăнма пултараççĕ: лайăхскерри.

---

И сыпăкпа с к е р сыпăк йышăннă формăсен пĕлтерĕшĕпе пуплеври вырăнĕ.

1. **И** сыпăка йышăннă сăмахсем кунта йапалана палăртса, уйăрса каланине пĕлтереççĕ: хĕрли—хăшĕ хĕрлĕ, çавă; вулаканни—хăшĕ вулаť, çавă.

**Скер** сыпăк йапалана пĕр-пĕр палли, уйрăмлăхĕ йенчен кăтартса параť: Ăна, сывăскере, мĕн емелĕ кирлĕ!

2. Паллă йачĕсемпе пайташсем йапала йачĕ çумĕсем, вĕсен мĕнлевĕсем пулаççĕ тенĕччĕ (53 §). Çав сăмахсемех, и сыпăкпа скер сыпăк йышăнсан, çум пулма пăрахаççĕ. Вĕсем йаланах пуплевре ирĕклĕ сăмахсем пулса йулаççĕ: вĕçленеççĕ, пуплевре хуçа, тата тытăнсатăран пулаççĕ.

Т ĕ с л ĕ х. Паҕук пиччен икĕ ывăл: *асли* савăтра ĕçлет, *кĕçĕнни* инçтитутра вĕренет. Ĕнер *аслинчен* çыру килчĕ. Ку кам

выҫӑхӗсем?—Кунта *колхозӑннисем* те пур, уйрӑм *хуҫалӑхсенни* те пур. Есӗ хӑш арманта авӑртрӑн: *колхозӑннинче-и, кооперативӑннинче-и*? Ҫав *йулхавскере* епӗр хамӑр звенона илместпӗр!

## ЁҪХӖЛ ҪУМӖСЕМ.

### 55 §. Ёҫхӗл ҫумӗсен уйрӑмӗсемпе вӗсен пӗлтерӗшӗсем.

Ёҫхӗл ҫумӗ тесе ӗҫ паллине пӗлтерекен сӑмахсен ушкӑнне калаҫҫӗ.

Ёҫ палли тесе епӗр ҫаксене калатпӑр: ӗҫ мӗнле пулнине, вӑл ӑҫта пулнине, хӑҫан пулнине, мӗн чухлӗ йе миҫе хут пулнине.

Ёҫхӗл ҫумӗсене ҫак ыйтусене лартса пӗлеҫҫӗ: *мӗнле (пулаӑ)? ӑҫта (пулаӑ, кайаӑ)? ӑҫтала (кайаӑ)? хӑҫан (пулаӑ, кайаӑ)? мӗн чухлӗ (пулаӑ)? миҫе хут (пулаӑ, тӑваӑ)?*

Ёҫхӗл ҫумӗсен, пӗлтерӗшне пӑхса, ҫакӑн пек уйрӑмсем пулаҫҫӗ:

1. Ёҫ мӗнле пулнине пӗлтерекен ӗҫхӗл ҫумӗсем. Автобус *хытӑ* пыраӑ. Трактӑр *тарӑн* сухалаӑ. Епӗр *чӑвашла* та, *вырӑсла* та калаҫатпӑр.

2. Ёҫ ӑҫта пулнине, хӑш йенеле кайнине пӗлтереккеннисем: *Кунта* выраҫҫӗ, *лере* ҫапаҫҫӗ. *Кунтан* турттараҫҫӗ, *лерен* баржӑ ҫине тийеҫҫӗ. Аероплан *унтала* кайрӗ.

3. Ёҫ хӑҫан пулнине пӗлтерекеннисем: *Ёнер* выртӑмӑр, *пайан* ҫапатпӑр, *ыран* тырра патшалӑха тӑрататпӑр.

4. Мӗн чухлӗ пулнине, миҫе хут пулнине пӗлтерекеннисем: Ёҫ ҫинче колхозниксем *сахал* канаҫҫӗ, *нумай* ӗҫлеҫҫӗ. *Ҫичӗ хутчен* виҫ, пӗр хут кас.

---

Ёҫхӗл ҫумӗсем вӗҫленмеҫҫӗ те, сӑпатланмаҫҫӗ те. Вӗсем пуплеври ӑнлантару сӑмахӗсем пулаҫҫӗ. Калава ӑнлантарса параҫҫӗ, унӑн ҫумӗ пулаҫҫӗ.

Тӗслӗх. *Кунӗпех* ӗҫлерӗмӗр. Ёҫе *час* пӗтертӗмӗр.

### 56 §. Ёҫхӗл ҫумӗсен пулӑвӗ.

Ёҫхӗл ҫумӗсем тӗрлӗ сӑмах ушкӑнӗсенчи хытса ларнӑ формӑсенчен пулнӑ. Пулӑвӗ йенчен пӑхса, ӗҫхӗл ҫумӗсене темиҫе пайа уйӑрма пулаӑ. Вӗсенчен паллӑрах уйрӑмсем ҫаксем:

1. Паллӑ йачӗ те пулакан ӗҫхӗл ҫумӗсем: *хытӑ* ӗҫле, *ҫивӗчӗ* калаҫ, *чӑвашла* ҫыр.

Ҫак пайа кӗрекен ӗҫхӗл ҫумӗсем нумайӗшӗ танлаштару кӗлеткин **рах-рех** сыпӑкне йышӑнаҫҫӗ: *хытӑрах* ӗҫле, *ҫивӗчӗрех* калаҫ.

**Рах-рех** сыпӑка хӑш ытти ӗҫхӗлсен ҫумӗсем те йышӑнма пултараҫҫӗ: *йерриперех* кай, *кунтарах* кил.

2. Кӑтарту ылмашӗсен вырӑнпа туху вӗҫлевӗ: кунта, кунтан, унта, унтан, лере, лерен, ҫакӑнта, ҫакӑнтан, ҫавӑнта, ҫавӑнтан.

3. Хӑш сӑмахӑн хытса ларнӑ пӗрпулу вӗҫлевӗ: ҫӗрӗпе, ҫӗрӗҫӗрӗпе, хӗлӗпе, хӗлӗ-хӗлӗпе, кунӗпе, кунӗ-кунӗпе, пусӗпе, йӗркипе, йеррипе, сиккипе, пӗтӗмпе.

4. Хăш сăмахсен хытса ларнă пару вĕçлевĕ: çуркунне, кĕркунне, ирхине, каçхине, малашне, виçмине, тăватмине, ўпне.

5. Ăн-ĕн сыпăкпа пĕтекен йапала йачĕсен, паллă йачĕсен, сум йачĕсен хытса ларнă формисем. Ку формă авалхи чĕлхере хăйне уйрăм вĕçлев пулнă. Хальхи чĕлхере ăн-ĕн сыпăк камăнлăх вĕçлевĕ сыпăкĕпе пĕр пек илтĕнекен пулса кайнă: хĕлĕн-çăвăн, ирĕн-каçăн, айăн-çийĕн, куçăн (куртăм), вырăнăн-вырăнăн, тĕллĕн-тĕллĕн, ывăçăн-ывăçăн, хайаррăн, вăраххăн, иккĕн, пиллĕкĕн, саккăрăн (ĕçлеççĕ), икшерĕн, икшерĕн-икшерĕн.

Тĕслĕх. Епĕ ăна *куçăн* куртăм. Пирĕн йулташ *ирĕн-каçăн* пулă тытма кайаť.

6. Иккĕлĕ кĕлеткесем—пĕри вĕсенчен пару вĕçлевĕ, тепĕри ăн ĕн сыпăка йышăннă сăмах: куçа-куçăн, алла-аллăн, тўрте-тўртĕн, пуçа-пуçăн.

Тĕслĕх. Пĕчĕк ачасем *алла-аллăн* тытăнса йурлаççĕ. Вĕсене *куçа-куçăн* тăратса ыйтнă.

7. Йапала йачĕсемпе ылмашсем, сум йачĕсем çумне ла-ле сыпăк хушăннипе пулнă сăмахсем: çула, хĕлле, çĕрле, кăнтăрла, пĕрле; мĕнле, йепле, апла, капла, çапла.

8. Йапала йачĕсенчен, тата ылмашсенчен чен, лен, серен сыпăксем хушăннипе пулнă сăмахсем: ыранччен, каçчен, унччен, çавăнччен; çуллен, куллен (= кун + лен); килсерен, каçсерен.

9. Йапала йачĕсенчен лă-лĕ сыпăк хушăннипе пулнă мăшăрлă сăмахсем: ирлĕ-каçлă, пуçлă-вĕçлĕ, умлă-хыçлă.

10. Икĕ сăмахран пĕрлешсе пулнă сăмахсем: пĕркун, пĕрмай, кăçал (= ку + çул).

11. Кăтарту ылмашĕсен камăнлăх вĕçлевĕпе чух (= вăхăт) сăмахран пĕрлешсе пулнă сăмах майлашăвĕсем: ун чух, ун чухне, çавăн чух, çавăн чухне, хăш чух, хăш чухне, хăш-хăш чух, хăш-хăш чухне, пĕр-пĕр чух, пĕр-пĕр чухне. Кĕсем пурте вăхăта пĕлтереççĕ.

12. Пулăвĕ паллă мар сăмахсем: хăçан, йалан, тек, хəлĕ, авал, тин, паçăр, ĕлĕк, кăшт, час, сасартăк, анчах, йурй, аран, аран-аран т. ыт.

---

Çакăнта кăтартнă ĕçхĕл çумĕсем вĕçленекен сăмахсенчен пулни паллах. Хăш вĕçленекен сăмахсен пĕр-пĕр вĕçлевĕ пĕтĕмпех хытса ларнă та, пĕлтерĕшĕ те унăн улăшăнса кайнă. Ун пек формăсем ĕçхĕл çумĕсен ушкăнне кĕреççĕ. Хăш сăмахсем ĕçхĕл çумĕ пуласса пулнă, анчах, малтанхисем пекех, хытса çитеймен, вĕсен ушкăнĕнчен пĕтĕмпех уйăрăлса тухайман. Çавăн пек чухне сăмах мĕнле ушкăна кĕнине пĕлтерĕшне, тата пуплеври вырăнне пăхса пĕлеççĕ.

## 57 §. Ĕçхĕлтешсем.

Ĕçхĕл çумĕсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ. Вĕсенчен пĕр йышшисем вĕçленекен сăмахсенчен пулнă (56 §). Ĕçхĕл çумĕ тата ĕçхĕлрен хăйĕнчен те пулаť:

*аван* çыраŤ — *тăрăшса* çыраŤ
*тўрĕ* çыраŤ — *кайа-кайа* çыраŤ
*ыран* çыраŤ — *кайиччен* çыраŤ
*кайран* çыраŤ — *кайсассăн* çыраŤ
*йалан* çыраŤ — *каймассерен* çыраŤ
*çавăнпа* тухнă — *кайма* тухнă

Малтанхи йупара паллă тунă сăмахсем ĕçхĕл çумĕсем пулаççĕ. Кайранхи йупара паллă тунă сăмахсем ĕçхĕлрен пулнă ĕçхĕл çумĕсем пулаççĕ.

Ĕçхĕлрен пулнă ĕçхĕл çумĕсене ĕ ç х ĕ л т е ш с е м теççĕ.

Ĕçхĕлтешсем, пĕр йенчен, йатсенчен пулнă ĕçхĕл çумне сывăх формăсем. Вĕсем, çав ушкăна кĕрекен формăсем пекех, ĕçхĕл çумĕ пулаççĕ. Тата çав вăхăтрах вĕсен уйрăмлăхĕсем те пур: вĕсем йаланах ĕçхĕлрен пулаççĕ, тата вĕсен хăйсен ăнлантару сăмахĕсем пулма пултараççĕ.

Т ĕ с л ĕ х. Ачасем *тăрăшса* вĕренеççĕ. Иван, *тавăрăнсанах*, лашасене апат пачĕ. *Кайиччĕн* кĕрсе тух. Çак пуплевсенче ĕçхĕлтешсем калав çумĕ пулаççĕ.

Марк *çыру* çырса лараŤ. Вăл *хытă* тăрăшса ĕçлет. Кунта та ĕçхĕлтешсем калав çумĕ пулаççĕ. Тата вĕсен хăйсен ăнлантару сăмахĕсем пур. Кунта *çыру, хытă* сăмахсем ĕçхĕлтеше ăнлантарса параççĕ.

### Ĕçхĕлтешсен пулăвĕ.

1. **Са-се**: пысăклан-са, çĕмĕр-се; кала-са, çўре-се. Сыпăкĕ ĕçхĕлĕн тĕпĕ çумне хушăнаŤ. Ку ĕçхĕлтешсем ĕç мĕнле пулнине пĕлтереççĕ.

Т ĕ с л ĕ х. Хĕвел *çутăлса, хĕрелсе* тухрĕ. Йур айĕнчен ыраш калчи сип-симĕс *йешерсе* тухрĕ.

Ку ĕçхĕлтешĕн çуклă форми ма сыпăкпа пĕтекен ĕçхĕлтеш çумне **сăр-сĕр** сыпăк хушăннипе пулаŤ: калама-сăр, илме-сĕр. Тăрăшмасăр ĕçлесен, ĕç ăнмасŤ.

2. **А-е**: пысăклан а, çĕмĕр-е; кала, çўре. **А-е** сыпăк ĕçхĕлĕн тĕпĕ çумне хушăнаŤ. Ĕçхĕл тĕпĕ **а-е** сасăпа пĕтет пулсан, икĕ уçă сасă йунашар тăма йураманнипе, пĕри тухса ўкет. Ку ĕçхĕлтеш ĕç мĕнле пулнине, йе ĕç кĕтмен çĕртен пулса тăнине кăтартаŤ.

Т ĕ с л ĕ х. Е ĕ ) *пĕха* йултăмăр. Атăла шыв *тулч* пыраŤ.

Ик хут каласан, кун йышши ĕçхĕлтешсем ĕç темиçе хут пулнине пĕлтереççĕ. Вăрмансенче лавсем пылчăка *кĕре-кĕре* лараĭчĕç.

3. **Иччен**: пысăклан-иччен, çĕмĕр-иччен; кал-иччен, çўр-иччен (ч вăрăмланаŤ). Ку ĕçхĕлтеш вăхăта—умĕн пулнине пĕлтерет.

Т ĕ с л ĕ х. Акана *тухиччен* плугсене йусаççĕ. Ĕçе *тухиччен* план туса хураççĕ. Есĕр *çийиччен* епĕ киле кайса килем-ха.

4. **Серен**: калама-ссерен, çĕмĕрме-ссерен. **Серен** сыпăк **ма ме** сыпăкпа пĕтекен ĕçхĕлтеш çумне хушăнаŤ. С сасă вăрăмланаŤ. Ку ĕçхĕлтеш кашнинче пулнине пĕлтерет.

Тĕслĕх. Пулăçă вăлтине *йамассерен* пулă туртса кăларать. Жерарăмсем вăрмана *каймассерен* кăмпа татса килеççĕ.

5. Сăн, н: каласа-ссăн, каласа-н; çĕмĕрсе-ссĕн, çĕмĕрсе-н. **Сăн, н** сыпăксем **са-се** сыпăкпа пĕтекен ĕçхĕлтеш çумне хушăнаççĕ. Сăн сыпăкăн малтанхи сасси вăрăмланать. Ку ĕçхĕлтеш кайран, хыççăн пулнине, тата условийе пĕлтерет.

Тĕслĕх. Кунсем уйар *тăрсассăн*, утăсем час типеççĕ. Çăмăр иртсе *кайсан*, каллех вăйă пуçланчĕ.

Ку ĕçхĕлтешĕн çуклă форми пур. Ăна тума ĕçхĕл тĕпĕпе сассăн-сессĕн сыпăк хушшине **ма-ме** сыпăк хушăнать: кала-ма-сассăн, ил-ме-сессĕн.

6. **Ма-ме; машкăн-мешкĕн**: пысăклан-ма, çĕмĕр-ме; кала-ма, çӳре-ме; кала-ма-шкăн, çӳре-ме-шкĕн. Ку сыпăксем ĕçхĕл тĕпе çумне хушăнаççĕ. **Машкăн, мешкĕн** сыпăк мак+шăн, мек+шĕн сыпăксенчен пулнă. Вырăнти калаçусенче халь те хăш тĕлте каламашкăн, çӳремешкĕн тес вырăнне: каламакшăн, çӳремекшĕн теççĕ. Ку ĕçхĕлтешсем ĕç йатне, тата тĕллеве пĕлтереççĕ.

Тĕслĕх. Трактăрпа *сухалама* кайрĕç.

| | |
|---|---|
| Гордиенко пек *пулмашкăн* | Çивĕч хурала тухар. |
| Мĕн пур вăй-хала пухар! | Пуçахсем *пухма, вырма та* |
| Колхоз пурлăхне *пăхмашкăн* | Хатĕрех епĕр йалан! |

## СУМ ЙАЧĔСЕМ.

### 58 §. Сум йачĕсен уйрăмлăхĕсемпе вĕсен пĕлтерĕшĕсем.

Сум йачĕ тесе хисепе пĕлтерекен сăмахсен ушкăнне калаççĕ. Сум йачĕсем чăваш чĕлхинче тăватă пайа уйăрăлаççĕ: 1) шут сумĕсем, 2) йĕрке сумĕсем, 3) валеçӳ сумĕсем, 4) вак сумĕсем.

Шут сумĕсем тесе йапала шутне кăтартакан сумсене калаççĕ. Вĕсем *миçе?* тесе ыйтăнаççĕ: пĕрре, иккĕ, виççĕ т. ыт.

Йĕрке сумĕсем тесе йапалан йĕркине кăтартакан сумсене калаççĕ. Вĕсем *миçемĕш?* тесе ыйтăнаççĕ: пĕрремĕш (кун), иккĕмĕш (кун), виççĕмĕш (кун) т. ыт.

Валеçӳ сумĕсем тесе йапаласене валеçсе шутланă чухне калакан сумсене калаççĕ. Вĕсем *миçешер?* тесе ыйтăнаççĕ: пĕрер (кĕнеке), икшер (кĕнеке), виçшер (кĕнеке) т. ыт.

Вак сумĕсем тесе вакласа шутланă чухне калакан сумсене калаççĕ. Вĕсем *миçе?* тесе ыйтăнаççĕ. Икĕ пиллĕкмĕш, çичĕ саккăрмĕш. Вак сумĕсем шут сумĕсемпе йĕрке сумĕсен формисенчен пулаççĕ.

### 59 §. Шут сумĕсен пулăвĕ.

Шут сумĕсем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ: тулли формăлисем, кĕске формăлисем. Вĕсем çаксем:

1 пĕрре, пĕр
2 иккĕ, икĕ, ик
3 виççĕ, виçĕ, виç
4 тăваттă, тăватă, тăват

5 пиллӗк, пилӗк
6 улттӑ, ултӑ, улт
7 ҫиччӗ, ҫичӗ, ҫич
8 саккӑр, сакӑр
9 тӑххӑр, тӑхӑр
10 вуннӑ, вунӑ, вун
11 вунпӗр
12 вуниккӗ, вуникӗ, вуник
13 вунвиҫҫӗ, вунвиҫӗ, вунвиҫ
20 ҫирӗм
21 ҫирӗм пӗр
22 ҫирӗм иккӗ, ~ икӗ, ~ ик
30 вӑтӑр
40 хӗрӗх
50 аллӑ
60 утмӑл
70 ҫитмӗл
80 сакӑрвуннӑ, сакӑрвунӑ, сакӑрвун
90 тӑхӑрвуннӑ, тӑхӑрвунӑ, тӑхӑрвун
100 ҫӗр
101 ҫӗр те пӗрре, ҫӗр те пӗр
102 ҫӗр те иккӗ, ҫӗр те икӗ, ~ ик
111 ҫӗр те вунпӗр
118 ҫӗр те вунсаккӑр, ~ вунсакӑр
120 ҫӗр ҫирӗм
121 ҫӗр ҫирӗм пӗр
200 икҫӗр
300 виҫҫӗр
400 тӑватҫӗр
500 пилӗкҫӗр
600 ултҫӗр
700 ҫичҫӗр
800 сакӑрҫӗр
900 тӑхӑрҫӗр
1000 пин
1001 пин те пӗрре, ~ пӗр
1101 пин те ҫӗр пӗрре, ~ пӗр
1118 пин те ҫӗр вунсаккӑр, ~ сакӑр
2000 икӗ пин, ик пин

25.467 ҫирӗм пилӗк пин те тӑватҫӗр утмӑл ҫиччӗ. 1.000.000 мӗлйун.

1. 101-пе 119 хушшинчи сумсем *ҫӗр* сӑмах хыҫҫӑн *те* кӗртсе лартаҫҫӗ: ҫӗр *те* ҫиччӗ, *ҫӗр* те вунтӑххӑр. Хутлӑ сума пинсем кӗреҫҫӗ пулсан, *те* пин хыҫҫӑн пулать: 25.467 (ҫӳлте пӑх); сума мӗлйунсем кӗреҫҫӗ пулсан, *те* мӗлйун сӑмах хыҫҫӑн пулать: 4.052.740—тӑватӑ мӗлйун та аллӑ икӗ пин ҫичҫӗр хӗрӗх.

Ҫак *те* ҫав вырӑнах йӗрке сумӗсем хушшине те, валеҫӳ сумӗсем хушшине те кӗрсе ларать.

2. 1-пе 10 хушшинчи сумсене уйрӑм, йапала йачӗсӗр, йе тепӗр сум умне хумасӑр калаҫҫӗ пулсан, вӗсен варринчи хунӑ сасси вӑрӑмланать: пӗрре, иккӗ, вуннӑ; йапала йачӗпе, йе тепӗр

сум йачĕ умне хурса каласçĕ пулсан, вăрăмланмасть: пĕр çын, ултă килограм, сакăрвунă сакăр метр, сакăр пин те икçĕр аллă тенкĕ.

3. Кĕске формăсенче вĕçĕнчи ă-ĕ сасăсене тиркесех каламасçĕ: çичĕ метр, çич метр.

## 60 §. Йĕрке сумĕсен, валеçÿ сумĕсен, вак сумĕсен пулăвĕ.

1. Йĕрке сумĕсем шут сумĕсен тулли кĕлетки çумне мĕш сыпăк хушăннипе пулаççĕ: пĕрремĕш, иккĕмĕш, вуннăмĕш, аллă иккĕмĕш, çĕр сакăрвуннăмĕш.

2. Валеçÿ сумĕсем шут сумĕсен кĕске форми çумне шар-шер сыпăк хушăннипе пулаççĕ: икшер, виçшер, тăватшар, саккăршар, тăххăршар, вуншар.

Асăрхамалли. а) Пĕр сăмахран валеçÿ форми *пĕрер* пулать: пĕрер метр, çĕрте пĕрер, пин те пĕрер. Çав сăмахах хутлă сума кĕрет пулсан, унăн кĕлетки *пĕршер* пулать: вунпĕршер, çирĕм пĕршер.

б) *Саккăршар, тăххăршар* формăсем, йапала йачĕпе йе тепĕр сумпа каласан, варринчи к сасса, х сасса кĕскетеççĕ: сакăршар тенкĕ, тăхăршар тенкĕ, сакăр çĕр тăхăршар пин.

в) Хутлă сум йатне çĕрсемпе пинсем кĕреççĕ пулсан, шар-шер сыпăк çавсем умне кĕрсе ларать: икшер çĕр, икшер пин.

г) Пĕрер тенкĕ, пĕрер кило, пĕрер метр, пĕрер витре тесе калас вырăнне: тенкĕшер, килошар, метршар, витрешер теççĕ.

3. Вак сумĕсем. Вĕсем шут сумĕсемпе йĕрке сумĕ формисенчен пулаççĕ. Вĕсене çак йĕркепе вулаççĕ:

| | |
|---|---|
| 1 пĕрре | $^2/_7$ икĕ çиччĕмĕш |
| $^1/_2$ çурă | $1^1/_7$ пĕрре те тăватă çиччĕмĕш |
| $^1/_4$ чĕрĕк | $2^8/_9$ икĕ пĕрре те сакăр тăххăрмĕш |
| $^1/_5$ пĕр пиллĕкмĕш | йе иккĕ те сакăр тăххăрмĕш. |

## 61 §. Сум йачĕсем сăпат сыпăкĕсене йышăнни.

Йатсăр каласçĕ пулсан, сум йачĕсем сăпат сыпăкĕсене йышăнма пултараççĕ.

1. Йĕрке сумĕсем 3-мĕш сăпатăн ĕ сыпăкне йышăнаççĕ: иккĕмĕш-ĕ, виççĕмĕш-ĕ, тăваттăмĕш-ĕ.

2. Шут сумĕсем 3-мĕш сăпатăн шĕ сыпăкне йышăнаççĕ: иккĕшĕ, виççĕ-шĕ, тăваттă-шĕ. *Пĕр* сумăн ку форми *пĕр-и* пулать.

Асăрхамалли. а) Йĕрке сумĕсем, паллă йачĕсемпе пайташсем пекех, 3-мĕш сăпат сыпăкне анчах йышăнма пултараççĕ (54 §). Çавăнпа паллă йачĕсем, пайташсем, йĕрке сумĕсем пĕрпĕрне сывăх формăсем пулаççĕ.

б) Шут сумĕсем йапала йачĕсене çывăхрах тăни палăрать. Вĕсенчен хăшĕ тата 1-мĕшпе 2-мĕш сăпат сыпăкĕсене те (нумайлă хисепĕнне) йышăнма пултараççĕ. Вăл сумсем çаксем: иккĕ, виççĕ, тăваттă. Ку шут сумĕсем пур сăпат сыпăкĕсене те йышăнма пултараççĕ. Вара вĕсем çакăн пек пулса тăраççĕ:

| | | |
|---|---|---|
| ик-сĕ-мĕр | ик-сĕр | иккĕ-шĕ |
| виç-сĕ-мĕр | виç-сĕр | виççĕ-шĕ |
| тăват-сă-мăр | тăват-сăр | тăваттă-шĕ |

## 62 §. Сум йачёсен пуплеври вырăнĕ, тата вĕсем вĕçленни.

1. Шут сумĕсен тулли формисем, тата 3-мĕш сăпат сыпăкне йышăннă формăсем пуплевре хуçа, тытăнсатăран, калав пулаççĕ.

Тĕслĕх. *Вуннă пиллĕкрен* 2 хут пысăк. *Вуннăран иккĕ* кăларсан, *саккăр* йулаť. Ударниксенчен *виççĕшĕ* пысăк премиилнĕ. *Иккĕмĕшĕ* вĕсенчен комсомолĕс пулнă. Ку—*тăваттă*. Ку—*иккĕмĕшĕ*.

2. Шут сумĕсен кĕске форми, йĕрке сумĕсем, тата валеçӳ сумĕсем йапала йачĕ çумĕ пулаççĕ.

Тĕслĕх. Пирĕн шкулта *аллă* ача вĕренет. *Пиллĕкмĕш* кун ĕç пĕтет. Рабочисем кунне *вунтăр* тенкĕ ĕç укçи илчĕç.

3. Шут сумĕсен тулли формисем йапала йачĕсем вĕçленнĕ пекех вĕçленеççĕ.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Й. | иккĕ | иксĕмĕр | иксĕр | иккĕ шĕ |
| К. | икк-ĕн | иксĕмĕр-ĕн | иксĕр-ĕн | иккĕш-ĕн |
| П. | икк-е | иксĕмĕр-е | иксĕр-е | иккĕш-не |
| Тв. | икк-е | иксĕмĕр-е | иксĕр-е | иккĕш-не |
| Прп. | иккĕ-пе | иксĕмĕр-пе | иксĕр-пе | иккĕшĕн-пе |
| В. | иккĕ-ре | иксĕмĕр-те | иксĕр-те | иккĕшĕн че |
| Тх. | иккĕ-рен | иксĕмĕр-тен | иксĕр-тен | иккĕшĕн-чен |

4. Сум йачĕсен çум пулнăкан формисем вĕçленмеççĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| И. | икĕ кун | иккĕмĕш кун | икшер кун |
| К. | икĕ кун-ăн | иккĕмĕш кун-ăн | икшер кун-ăн |
| П. | икĕ кун-а | иккĕмĕш кун-а | икшер кун-а |

## 63 §. Сум йачĕсене тĕрĕс çырасси.

1. Хутлă сумсене 11—19, 80—90, 200—900 пĕрле çыраççĕ, ыттисене пурне те уйрăм çыраççĕ.

2. 1—10 сумсене уйрăм калаççĕ пулсан, варринчи хупă сасăсене иккĕлетсе çыраççĕ: иккĕ, виççĕ, вуннă.

3. Мăшăрласа каланă сумсем хушшинче кĕске йĕр лартаççĕ: иккĕ-виççĕ, ик-виç, тăваттă-пиллĕк, тăват-пилĕк, çирĕм-вăтăр, икшер-икшер.

4. Йĕрке сумĕсен сыпăкне йалан мĕш çыраççĕ: иккĕмĕш, тăваттăмĕш.

# ЫЛМАШСЕМ.

## 64 §. Ылмашсен уйрăмĕсемпе вĕсен пĕлтерĕшĕсем.

Ылмашсем теее ытти сăмахсемпе ылмашса вĕсем вырăнне пулакан сăмахсен ушкăнне калаççĕ. Вăл ушкăнсем çаксем: йапала йачĕсем, паллă йачĕсем, сум йачĕсем.

Тĕслĕх. Аслă çулпа грузовик пыраť. *Вăл* савăта тырă илсе кайаť. Кунта *вăл* сăмах *грузовик* сăмах вырăнне тăраť. *Вăл*—ылмаш пулаť. Санитари комиççин председателĕ *Иванов*. Санитари комиççин председателĕ *епĕ*. Кунта *епĕ* çăмах *Иванов* сăмах вырăнне тăраť. *Епĕ*—ылмаш пулаť.

Саккӑртан иккӗ кӑларсан ултта йулать. *Çавӑнтанах* пиллӗк кӑларсан, виççӗ йулать. Кунта *çавӑнтанах* сӑмах *саккӑртан* сӑмах вырӑнӗнче тӑрать. *Çавӑнтан*—ылмаш пулать.

Ашшӗ пит *ӗçчен*, ачисем те *çаплах*. Кунта *çаплах* сӑмах *ӗçчен* сӑмах вырӑнӗнче тӑрать. *Çапла*—ылмаш пулать.

Пӗлтерӗшне пӑхса ылмашсем çак пайсене уйӑрӑлаççӗ.

1. Сӑпат ылмашӗсем: 1-мӗш сӑпат—*епӗ, епӗр*, 2-мӗш сӑпат—*есӗ, есӗр*, 3-мӗш сӑпат—*вӑл, вӗсем*.

1-мӗш сӑпат кам калаçать, çавна пӗлтерет.

2-мӗш—кампа калаçаççӗ, çавна пӗлтерет.

3-мӗш—кам çинчен калаçаççӗ, çавна пӗлтерет.

2. Кӑтарту ылмашӗсем:

*Ку, çакӑ (çак)*—çывӑхрине кӑтартнӑ чух калаканнисем.

*Çавӑ (çав), вӑл*—кӑшт айаккараххине кӑтартнӑ чух калаканнисем.

*Лешӗ, леш*—инçетрине кӑтартнӑ чух калаканни. *Ку*—кӗнеке, *лешӗ*—тетрать.

*Хайхи*—малтан асӑннине кӑтартса калаканни.

*Апла, капла, çапла* ылмашсем йапала йе ӗç мӗнлине кӑтартса калаканнисем.

*Çавӑн чухлӗ*—йапалан шутне кӑтартса калаканни.

3. Ыйту ылмашӗсем: *кам? мӗн? мӗскер (мӗн-скер)? хӑшӗ (хӑй-шӗ)? йепле? йеплескер? мӗнле? мӗнлескер? миçе? мӗн чухлӗ? Кам?* тесе çын çинчен ыйтаççӗ? *Мӗн?* тесе ытти йапаласем çинчен, тата чӗрчунсем çинчен ыйтаççӗ. *Кам? Иван. Мӗн? Лаша, кӗнеке.*

Йапаласене кӑтартса шутламала пулсан, йе вӗсем темиçе тӗслӗ пулнине, нумайййине кӑтартмала пулсан, ыйту ылмашӗсене иккӗлесе калаççӗ: кам-кам, мӗн-мӗн, мӗскер-мӗскер, хӑш-хӑш, йепле-йепле т. ыт.

4. Çуклӑ ылмашсем: *никам та, нимӗн те, нийепле те, нимӗн чухлӗ те.*

Ку ылмашсем ыйту ылмашӗсем умӗн ни сыпӑк, хыççӑн та-те тата хушнипе пулаççӗ.

5. Паллӑмар ылмашсем: а) *такам, темӗскер, темӗн, темӗнле (темле), темиçе* т. ыт. Ку ылмашсем ыйту ылмашӗсем умӗн та-те сыпӑк хушӑннипе пулаççӗ.

б) *Кам та пулин, мӗн те пулин* т. ыт. Вӗсем ыйту ылмашӗсенчен та-те татӑпа *пулин, пулсан* сӑмах хушнипе пулаççӗ.

6. Уçӑмлӑ ылмашсем: *кашни, пурте, харпӑр хӑй, урӑх, тепӗр.*

Çак уйрӑмах тата ха тымартан пулнӑ ылмашсем кӗреççӗ. Вӗсем виçӗ сӑпатра пулма пултараççӗ.

1-мӗш сӑпат: *хам, хамӑр.*

2-мӗш сӑпат: *ху, хӑвӑр.*

3-мӗш сӑпат: *хӑй(ӗ), хӑйсем.*

## 65 §. Ылмашсен пуплеври вырăнĕ.

Йапала йачĕ вырăнне, йе тулли шут сумĕ вырăнне пулакан ылмашсем йапала йачĕсем пекех вĕçленеççĕ. Вĕсем пуплевре хуçа, тата тытăнсатăран пулаççĕ.

Тĕслĕх. *Епĕ* вулатăп. *Есĕ* çыратăн. *Вăл* задачă тăват. Кунта *епĕ, есĕ, вăл* сăмахсем—хуçасем.

*Мана* çыру килчĕ. *Санран* ответ кĕтетĕп. *Унпа* ан калаç. Кунта *мана, санран, унпа* сăмахсем—тытăнсатăрансем.

Паллă йачĕ вырăнне пулакан ылмашсем пуплевре ытларах йапала йачĕ çумĕ, тата калав пулаççĕ.

Тĕслĕх. *Ку* машинă вăйлă. Атăл *леш* йенче вăрман нумай. Кунта *ку, леш* сăмахсем çумсем пулаççĕ.

Ку—*лешĕ*, ку—*çавă*. Йулашки тĕслĕхре *лешĕ, çавă* сăмахсем калавсем пулаççĕ.

## 66 §. Ылмашсем вĕçленни.

### СĂПАТ ЫЛМАШĔСЕМ.

Пĕррелĕ хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Й. | е-пĕ, еп | е-сĕ, ес | вăл |
| К. | ман-ăн | сан-ăн | ун-ăн |
| П. | ман-а | сан-а | ăн-а |
| Тв. | ман-а | сан-а | ăн-а |
| Прп. | ман-па | сан-па | ун-па |
| В. | ман-ра | сан-ра | ун-ра |
| Тх. | ман-ран | сан-ран | ун-ран |

Нумайлă хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Й. | е-пĕр | е-сĕр | вĕсем |
| К. | пир-ĕн | сир-ĕн | вĕсен-ĕн |
| П. | пир-е | сир-е | вĕсен-е |
| Тв. | пир-е | сир-е | вĕсен-е |
| Прп. | пирĕн-пе | сирĕн-пе | вĕсен-пе |
| В. | пир-те<br>пирĕн-те | сир-те<br>сирĕн-те | вĕсен-че |
| Тх. | пир-тен<br>пирĕн-тен | сир-тен<br>сирĕн-тен | вĕсен-чен |

1. 1-мĕш сăпатăн пĕррелĕ хисепри йат вĕçлевĕнчи тĕпĕ пĕ, нумайлă хисепре *пĕр, пир* пулат. Е—кайран хушăннă сыпăк.

*Вăл* сăмах нумайлă хисепре кĕскелет: вăл→вă→вĕ: вĕсем.

2. Нумайлă хисепре пĕрпулу, вырăн, туху вĕçлевĕсенче тĕп çумне ĕн сыпăк хушăнат. Вырăнпа туху вĕçлевĕсенче ĕн сыпăк хăш чухне пулмаст.

3. Пĕррелĕ хисепре 3-мĕш сăпатра пару, тăву вĕçлевĕсенче *уна* формăран *ăна* формă пулса кайнă.

УÇĂМЛĂ ЫЛМАШСЕМ.

Пĕрреле хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| И. | хам | ху | хăй |
| К. | хам-ăн | хăв-ăн | хăй ĕн |
| П. | хам-а | хă-на | хăй-не |
| Тв. | хам-а | хă-на | хăй-не |
| Прп. | хам-па | ху-па | хăй-пе, хăйĕн-пе |
| В. | хам-ра | хăвăн-та | хăйĕн-че |
| Тх. | хам-ран | хăвăн-тан | хăйĕн-чен |

Нумайлă хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Й. | хамăр | хăвăр | хăйсем |
| К. | хамăр-ăн | хăвăр-ăн | хăйсен-ĕн |
| П. | хамăр-а | хăвăр-а | хăйсен-е |
| Тв. | хамăр-а | хăвăр-а | хăйсен-е |
| Прп. | хăмăр-па | хăвăр-па | хăйсем-пе |
| В. | хамăр-та | хăвăр-та | хăйсен-че |
| Тх. | хамăр-тан | хăвăр-тан | хăйсен-чен |

1. Пĕрреле хисепре 2-мĕш сăпатра у вырăнне ăв пулать. П.-Тв. вĕçлевĕнче в сасă тухса ӳкет.

КАТАРТУ ЫЛМАШĔСЕМ.

Пĕрреле хисеп.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Й. | ку | çакă, çак | лешĕ |
| К. | кун-ăн | çак-ăн | леш-ĕн |
| П. | кăн-а | çак-на | леш-не |
| Тв. | кăн-а | çак-на | леш-не |
| Прп. | кун-па | çакăн-па | лешĕн-пе |
| В. | кун-та | çакăн-та | лешĕн-че |
| Тх. | кун-тан | çакăн-тан | лешĕн-чен |

Нумайлă хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Й. | кĕсем | çаксем | çавсем | лешсен |
| К. | кĕсен-ĕн | çаксен-ĕн | çавсен-ĕн | лешсен-ĕн |
| П. | кĕсен-е | çаксен-е | çавсен-е | лешсен-е |

т. ыт.

---

Ыйту ылмашĕсем çапла вĕçленеççĕ: *кам? мĕн?* сăмахсем йапала йачĕсем пекех вĕçленеççĕ. *Хăшĕ* сăмах *лешĕ* сăмах пекех вĕçленет.

Çуклă ылмашсен, тата паллăмар ылмашсен ыйту ылмашĕсен ушкăнĕнчен кĕрекен *кам, мĕн* сăмахĕсем анчах вĕçленеççĕ: никам-ăн та, такам-ăн та, кам-ăн та пулин т. ыт.

# ХЫÇÇĂМАХСЕМ.

## 67 §. Хыççăмахсен пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ.

Йапала йачĕсем ĕçхĕлпе тĕрлĕ майпа çыхăнса тăраççĕ: килĕшӳ йĕркипе, тата тытăм йĕркипе (6 §). Тытăм йĕркипе çыхăнса

тăнине илсен, ĕçхĕлсем тытса тăраканнисем, йапала йачĕсем—йатмар вĕçлевсенчисем, тытăнсатăрансем пулаççĕ. Вĕçлев сыпăкĕсем çав çыхăнăва кăтартса тăраканнисем пулаççĕ (6 §).

Чĕлхере тата ĕçхĕлпе йапала йачĕ çыхăнса тăнине кăтартакан уйрăм сăмахсем пур. Вĕсем йапала йачĕ хыçĕнче уйрăм сăмах пулса тăраççĕ, анчах пуплевре уйрăм член пулмаççĕ. Хăйпе çыхăнса тăракан сăмахпа пĕр член пулаççĕ. Вĕренекен ача *туска умĕнче* тăрать. Кунта *умĕнче* сăмах *туска* сăмахпа çыхăнса тăрать, тата ун хыççăн тăрать. *Туска умĕнче* тени пуплевре пĕр член (пĕр ăнлантару сăмахĕ) пулса тăрать.

Ун пек сăмахсен ушкăнне хыçсăмахсем теççĕ. Хыçсăмахсем, вĕçлев сыпăкĕсем пекех, ĕçхĕлпе йапала йачĕ йе урăх вĕçленекен сăмах мĕнле çыхăнса тăнине кăтартса тăраççĕ.

Пĕлтерĕшĕпе формине пăхса, хыçсăмахсене икĕ пайа уйăраççĕ: а) улăшăнаканнисем, б) улăшăнманнисем.

### 1. Улăшăнакан хыçсăмахсем.

Ку ушкăна çак сăмахсем кĕреççĕ: *ай, çи, ум, хыç, пат, çум, çывăх.*

Ку сăмахсем, хыçсăмах пулса, ĕç йапала тĕлĕшĕнчен ăçта, мĕнле вырăнта пулнине кăтартса тăраççĕ: сĕтел айĕнче, сĕтел çинче, сĕтел умĕнче, сĕтел хыçĕнче, сĕтел патĕнче. Хыççăмахла йапала йачĕсем вырăнне ылмашсем те пулма пултараççĕ: ун айĕнче, ун çинче, ун умĕнче, ун хыçĕнче, ун патĕнче.

Хыçсăмахсем сăпат сыпăкĕсене, тата вырăна кăтартма виçĕ вĕçлев формине йышăнаççĕ: пару, вырăн, туху вĕçлевĕсене.

**Хыçсăмахсем улăшăннин таблици.**

| | 1-мĕш сăп. | 2-мĕш сăп. | 3-мĕш сăп. |
|---|---|---|---|
| П. | ман умăм-а | сан ум-на | ун ум-не |
| | ман ум-а | сан ум-на | çын ум-не |
| | пирĕн умăмăр-а | сирĕн умăр-а | вĕсем ум-не |
| | пирĕн ум-а | сирĕн ум-а | çынсем ум-не |
| В. | ман умăм-ра | сан умăн-та | ун умĕн-че |
| | ман ум-ра | сан ум-ра | çын умĕн-че |
| | пирĕн умăмăр-та | сирĕн умăр-та | вĕсем умĕн-че |
| | пирĕн ум-ра | сирĕн ум-ра | çынсем умĕн-че |
| Тх. | ман умăм-ран | сан умăн-тан | ун умĕн-чен |
| | ман ум-ран | сан ум-ран | çын умĕн-чен |
| | пирĕн умăмăр-тан | сирĕн умăр-тан | вĕсем умĕн-чен |
| | пирĕн ум-ран | сирĕн ум-ран | çынсем умĕн-чен |

Ку формăсем танлаштару сыпăкне йышăнма пултараççĕ; ман умарах, ун умнерех, ун умĕнчерехре, ун умĕнчерехрен.

1. 1-мĕшпе 2-мĕш сăпатри хыçсăмахсем авалхи чĕлхере, халăх йуррисенче, поэтсен чĕлхинче ытларах тĕл пулаççĕ. Ахаль чухне сăпатсăр формăсене каларах параççĕ.

2. Улăшăнакан хыççăмахсем ылмашсен камăнлăх вĕçлевĕ хыççăн, тата йапала йачĕсен пуçламĕш форми хыççăн тăраççĕ: *Пӳрт умĕнче* çын нумай: пуху пыраŏ *сат çинчен. Пирĕн умра* ыраш уйĕ тинĕс пек сарăлса выртаŏ.

3. *Ум* сăмах пекех *ай, çи, хыç, çум, пат, çывăх* сăмахсем улăшăнаççĕ.

2. Улăшăнман хыççăмахсем.

1. Йапала йачĕсен пуçламĕш формине, ылмашсен камăнлăх вĕçлевне ыйтаканнисем:

*витĕр*: ман (сан, ун, пирĕн, сирĕн, анчах: вĕсем) витĕр, çын витĕр, хăма витĕр, хăмасем витĕр.

*урлă*: ман урлă, çын урлă, вăрман урлă, вăрмансем урлă.

*тăрăх*: ман тăрăх, çырма тăрăх, çырмасем тăрăх.

*таран*: ман таран, мăй таран, тымарсем таран.

*тавра*: ман тавра, савăт тавра, савăтсем тавра.

*хыççăн*: ман хыççăн, çын хыççăн, çынсем хыççăн.

*ваԝԝи*: ман ваԝԝи, çын ваԝԝи, çынсем ваԝԝи.

*пирки*: ман пирки, çын пирки, çынсем пирки.

2. Пару вĕçлевне ыйтаканнисем:

*хирĕç*: мана хирĕç, кулака хирĕç, кулаксене хирĕç.

*ваԝԝи*: мана ваԝԝи, çынна ваԝԝи, çынсене ваԝԝи.

*тăрăх*: урама тăрăх, урамсене тăрăх.

Асăрхамали. *Ваԝԝи, тăрăх* хыççăмахсем икĕ вĕçлеве ыйтаççĕ: ман ваԝԝи—мана ваԝԝи, урам тăрăх—урама тăрăх.

3. Туху вĕçлевне ыйтаканнисем:

*пуçне*: манран пуçне, лашаран пуçне.

4. Пĕрпулу вĕçлевне ыйтаканнисем:

*пĕрле*: манпа пĕрле, çынпа пĕрле.

*йунашар*: манпа йунашар, çынпа йунашар.

Урлă, тăрăх, таран, тавра, хыççăн, хирĕç, йунашар хыççăмахсем сарăмлăх тĕлĕшĕсене пĕлтереççĕ, ваԝԝи - мĕнелĕхе пĕлтерет, пирки—пиркене пĕлтерет.

3. Сăмахпа пĕрлешнĕ хыççăмахсем.

*Шăн-шĕн* хыççăмах сăмахпа пĕтĕмпех пĕрлешсе çитнĕ, тата вăл хытă сăмах хыççăн хытă, çемçе сăмах хыççăн çемçе илтĕнет: çын-шăн, етем-шĕн.

*Шăн-шĕн* хыççăмах ĕç мĕншĕн, мĕнле йапалашăн пулаŏ, çавна пĕлтерет. Колхозсемпе савăтсем ваԝԝи куԝтурлă *çулшăн* кĕрешĕр. Социалисăмлă *куԝтурăшăн* ударлă ĕçлер.

## ПĔТĔÇТЕРӲСЕМ.

### 68 §. Пĕтĕçтерӳсен пĕлтерĕшĕ.

Пĕтĕçтерӳ тесе пĕр йышши членсене, сăмах майлашăвĕсене, йе пуплевсене пĕтĕçтерекен сăмахсене калаççĕ. Пĕтĕçтерӳсем пуплевре уйрăм член пулмаççĕ.

Пĕтĕçтерӳ сăмахĕ чăваш чĕлхинче йышлă мар. Вĕсенчен ытларах тĕл пулаканнисем çаксем: *та те; те, тата, йе, пĕр-пĕр, çапах, анчах, вара, еппин, мĕншĕн тесен.*

1. *Та-те*—çыпăçтаракан сăмах: Ил *те* кай! Таврари йалсем виçшер *те* тăватшар километра.

2. *Те* иккĕленнине пĕлтерет: *Те* кайас, *те* кайас мар? *Те* килеççĕ ĕнтĕ, *те* килмеççĕ?

3. *Тата*—хушăннине, шут пĕтнине пĕлтерет: Уйра ыраш, сĕлĕ, пăрçа, тулă, *тата* паранкă ӳсет.

4. *Йе, йе-йе*—уйăракан сăмах: *Йе* трактăр сасси илтĕнсе кайать *йе* автомобил вăшт çеç кăшкăрса иртсе кайать. *Йе* вилĕм, *йе* пурăнăç пире (*Кр. К.*).

5. *Пĕр-пĕр*—терлĕ майлине пĕлтерет: Ик-виç çăлтăр *пĕр* тĕксĕмленсе, *пĕр* çутăлса илчĕç. Айăплă çын *пĕр* хĕрелсе кайать, *пĕр* шуралса кайать.

6. *Пĕрре-тепре*—тĕрлĕ майлине пĕлтерет: *Пĕр* прахутăн сăмси *пĕрре* çĕкленет, *тепре* кутăн ывтăнать.

7. *Çапах*—ĕç тепĕр майлă (хирĕçле) пулнине пĕлтерет: Хăйăрсем хушшинче çӳресе сывлăха пĕтеретĕп, *çапах* Кара-Кума йурататăп.

8. *Анчах*—тепĕр майлине пĕлтерет: Кулаксем нумай сăтăр тума тăрăшрĕç, анчах вĕсене хăйсене пĕтерсе пăрахрĕç.

9. *Çавăнпа, çапла, çапла ĕнтĕ, еппин, апла еппин, мĕншĕн тесен*—сăмах пĕтернĕ чух калаканнисем:

*Çапла ĕнтĕ* пирĕн колхоз ӳснĕçем ӳссе пырать. *Çавăнпа* пирĕн ĕçе часрах малала йама тăрăшмала. Çула Балхаш таврашĕнче кайăксемсĕр пуçне никам та пурăнмасть, *çавăнпа та* унта кайăксем хăрамаççĕ. Кĕрешӳре ĕçлекенсем çĕнтереççех, *мĕншĕн тесен* буржуази халăхăн ытла та пĕчĕк пайĕ анчах пулса тăрать (*Ленин*). Кăçал техникума кĕме пулаймарĕ.—*Еппин* пĕр-пĕр курса кай.

# ТАТĂСЕМ.

## 69 §. Татăсен пĕлтерĕшĕсем.

Чĕлхере уйрăм пĕлтерĕшсĕр сăмахсем пур. Вĕсем шухăшăн вак уйрăмлăхĕсене пĕлтереççĕ. Çавăн пек сăмахсене **т а т ă** теççĕ. Татăсем ытти сăмахсемпе анчах тĕл пулаççĕ. Çавăнпа вĕсем пуплевре уйрăм член пулма пултараймаççĕ.

Чăваш чĕлхинче тĕл пулакан татăсем çаксем:

1. *Ах-ех*—вăйлăлатакан сыпăк. Пур сăмахсем çумне те хушăнать. Кăна тăшманах турĕ. Физкуљтурниксем кимĕпе Атăл урлах каçса кайрĕç. Килерех паччăр-ха. Çумнерех лар! Çăмăр çусанах тырăсем йешерсе кайрĕç. Заданийе срукра пĕтеретпĕр пĕтеретпĕрех.

2. *Ха*—сăмаха çемçетсе калакан татă: *Кил-ха.* Есĕ унта *чуп-ха.* Вăл *ача-ха*

3. *Халĕ, хаљ—ха* татă вырăнне калаççĕ: Кил *хаљ* кунта.

4. *Ĕçке, çке*—кăмăллăн каланине, хăш чухне пĕтĕмпех килĕшменнине, тата кĕтмен çĕртен пулнине пĕлтерет: Шыв хĕрринче пилеш пиçет-*çке,* çупкăм-çупкăм шыва ӳкет-*çке* (*Йурă*). Есĕ ĕнер килтеччĕ-*çке*! Мĕншĕн ĕçе тухмарăн? Хуçăлать-*çке* ку кăранташ.

5. *И*—ыйтнă чух калакан татă. Ăна пур сăмах хыççăн та хушса калама йурать: Йурать-*и?* Кайнă-*и?* Лаша-*и?*

6. *А-е*—ыйтнă чух калакан татă. Кăна ĕçхĕлĕн 2-мĕш сăпат форми хыççăн хушса калакалаççĕ: Çырса пĕтертĕн-*е*? Çырса пĕтертĕр-*е*?

7. *И мĕн* (кĕскен·*им*)—ыйтнă чух калаççĕ: Вăл килчĕ-*и мĕн*? Сирĕн вырма кайнă-*им?*

8. *И мĕн-ха* (*им-ха*)—ыйтнă чух çемçетерех калакан татă: Вăл килне таврăннă *и мĕн-ха?* Есĕ çырса пĕтерейимерĕн-*им-ха*?

9. *Ши*—иккĕленсе йе тĕлĕнсе ыйтнă чух калаççĕ: И йур çурĕ, йур çурĕ: çĕрĕ йепле чăтрĕ-*ши?* Килет-*ши*, килмест-*ши?*

10. *Лап*—вăйлăлатса, татса каланине пĕлтерет. Сăмах умĕн тăрать: *Лап* йулташа куртăм. Йулташа *лап* куртăм.

11. *Шăп*—*лап* сăмах вырăнне калаççĕ, çавнах пĕлтерет: *Шăп* виçĕ сехетре çитрĕмĕр. *Шăп* персе çитрĕç

12. *Та-те*—вăйлăлатакан тата: Амур Атăлтан *та* пысăк. Епĕ телеграммă *та* йатăм.

13. *Мĕн*—сăмаха каласа йарайман чухне хушса калаççĕ. Çавнах тата каласа пĕтермен чухне „тата ытти те" тес вырăнне калаççĕ: Вăл *мĕн*... Мускава кайнă, тет. Вĕсен ыдҙăх-*мĕн* пур-*и?* Ыдҙăхĕ-*мĕнĕ*... пур, пĕр ĕне пекскер.

14. *Анчах, кăна, çеç, çех*—вăйлăлатса каланине йе пĕр-пĕр йапалан виçине, чиккине пĕлтерет: Пайан пахчара епĕр иккĕн *çех* ĕçлерĕмĕр. Манăн пĕр физикă кĕнеки *кăначчĕ*. Субботнике пурте харăс тухрĕç, пĕр Потапăв *кăна* кăшт кайа йулчĕ.

15. *Çапла, алай, ийа, йе, ара* (*вара*)—сăмаха пĕтернĕ чух калакан, тата тепĕрин сăмахĕпе килĕшнипе килĕшменнине пĕлтерекен татăсем.

Тĕслĕхсем: Ыран шкулта субботник пулать, тет.—*Çапла*, пулать. *Ара* вĕсем виçĕм кунах акана тухнă. *Ара* есĕ мĕн хăтланатăн? Вăйлă çăмăр хыççăн нихăçан та сĕреме йурамасть, тет агроном.—*Ара*, çапла çав. Ăна машинăпа акнă-и?—*Ийа*, машинăпа çав.

### 70 §. Татăсене тĕрĕс çырасси.

1. *Ах-ех, ĕçке-çке* татăсене сăмахпа пĕрле çыраççĕ.
2. *И, ши, а-е, ха* татăсене кĕске йĕрпе çыпăçтарса çыраççĕ.

Асăрхамали. Сăмахăн йулашки татăкĕнчи ă-ĕ сасă тухса ӳкет пулсан, *и, а-е* татăсене пĕрле çыраççĕ: калаçç*и* (калаççĕ-*и* вырăнне), калан*и* (каланă-*и* выр.), шур*и* (шурă-*и* выр.).

3. Хутлă татăсене хутсăр татăсене çырнă пекех çыраççĕ: кайнă-ши-ха, вăл та-и, кайнă-ши мĕн-ха, кайнăшим-ха.

## ЧĔВĔСЕМ.

### 71 §. Чĕвĕсем мĕне пĕлтерни.

Чĕннĕ чухне, тĕлĕннĕ чухне, савăннă чухне, ыратнă чухне, хăранă чухне асăрхамасăр каласа йаракан сăмахсене чĕвĕсем теççĕ. *Ай, ей, ух, ай-ай, ай-уй* сăмахсем чĕвĕсем пулаççĕ.

*Ей*, кил-ха кунта! *Ну*, малала кала. *Ай-уй*! Мĕн туса тултарнах кунта! *Ай-хай*, пăрçа хутаçлă! *Е*, алла лекрĕн! *Е ех*, ачам, мĕн хăтлантăн есĕ! *Ы-ых*, сивĕ! *И*, ывăлăм, кайар-ха ĕнтĕ килелле!

## 72 §. Чĕвĕсене тĕрĕс çырасси.

Чĕвĕсене пуринчен ытла кăшкăрулă пуплевсенче калаççĕ.

1. Çырура чĕвĕсене хӳрелĕ пăнчă лартса уйăраççĕ.

2. Чĕвве пуплеврен уйрăм калаççĕ пулсан, ун хыççăн кăшкăру палли лартаççĕ, пуплеве пысăк саспаллипе пуçлаççĕ.

Ей! Килĕр-ха кунта!

## 73 §. Йевĕрлев сăмахĕсем.

1. Чăваш чĕлхинче çĕршыври сасăсене, хускалусене йевĕрлесе каланă сăмахсем пур. Вĕсене **й е в ĕ р л е в  с ă м а х ĕ с е м** теççĕ.

*Панн*—пралук татăлнине йевĕрлесе каланă сăмах. Хытă карнă пралук татăлса кайрĕ те *панн*! йанăраса кайрĕ.

*Йăлт*—хăвăрт сиксе тăнине йевĕрлесе калани. Анчăк сасартăк вăранчĕ те *йăлт* сиксе тăчĕ.

*Йăл-йăл*—майĕпеле хускалса тăни. Тем-тем тĕслĕ чечексем *йăл-йăл* çунса тăраççĕ.

*Лач*—хытă сурнине йевĕрлесе калани, *леч*—хуллен сурнине йевĕрлесе калани.

*Тут-тут! Хăш-хăш! Хăш-хăш-ш-ш! Пăш-ш-ш!* тесе чарăнчĕ правус. *Шăнкăр-шанкăр! Тăнк танк!* тутара-тутара перĕнчĕç пĕрпĕрне вагонсем.

Кунта йулашки икĕ пуплевре вагон таврашĕнчи сасăсене йевĕрлесе каланине куратпăр.

2. Йевĕрлев сăмахĕсенчи хăш сасăсен хăйсен пĕлтерĕшĕ пур.

Н сасă йанăранине пĕлтерекен чĕвĕсенче пулать: йанн, йанн, шăнкăр, чăнкăр, нăй.

Л сасă пĕр-пĕр йапала хускалнине, çуталнине пĕлтерекен сăмахсенче пулать: йăл-йал, йăлл, йăл, йăлт, вĕл-вĕл, чăл-чал.

Т хускалу йе сасă пĕр самантра пулнине, сасартăк пулнине пĕлтерет: йалт, йăлт-йăлт, йакăлт, пант, шăнкăрт, вĕлт, шарт, нăшт.

А сасă хускалу йе сасă вăйлине, ă сасă вăйлах маррине пĕлтерет: йал-йал, йăл-йăл; чăшт-чашт, пăш-паш.

Тон-тон, шан-шан, тан-тан, тин-тин—уçă сасăсем кунта сасă мĕн чухлĕ хулăмми-çинçине кăтартса тăраççĕ.

Пăш, пăç, пăс—ш, ç, с сасăсем кунта сас-чĕвĕсем мĕнле шăхăрса-çухăрса илтĕннине кăтартса параççĕ.

3. Йевĕрлев сăмахĕсене мăшăрлăн калама пулать. Мăшăрсем темиçе тĕслĕ пулма пултараççĕ. Кашни çакăн пек мăшăрлăхăн пĕлтерĕшĕ йенчен хăйĕн уйрăмлăхĕ пур.

| Вăйлăн хускални. | Хуллен хускални. | Тĕрлĕрен хускални. |
|---|---|---|
| йал-йал | йăл-йăл | йăл-йал |
| йалт-йалт | йăлт-йăлт | йăлт-йалт |
| йалтăр-йалтăр | йăлтăр-йăлтăр | йăлтăр-йалтăр |

4. Йевӗрлев сӑмахӗсем пуплевре пуринчен ытла ҫумсем пулаҫҫӗ: йапала менлине йе ӗҫ мӗнле пулнине кӑтартса параҫҫӗ.

*Нарт-нарт* кӑвакал лапри-ҫӗпри тиркемест. *Чи-чи* кӑсӑйа, ӑҫта кайан, кӑсӑйа? Чулсем тӑрӑх шыв *шӑнкӑр-шӑнкӑр* йухса выртаҫ. Йатӑсем кӗтмен ҫӗртенех *лӑй-лай* вӗрсе илчӗҫ. Кунта малтанхи икӗ пуплеври чӗвӗсем йапала йачӗ ҫумӗсем пулаҫҫӗ, йулашки икӗ пуплевре калав ҫумӗсем пулаҫҫӗ.

Йевӗрлев сӑмахӗ *мӗн?* тесе ыйтӑнма та пултараҫ. Кӗтӳҫӗ пушипе *шарт!* тутарчӗ.

---

Йевӗрлев сӑмахӗсене грамматикӑра чӗвӗсемпе пӗр ушкӑна кӗртеҫҫӗ. Анчах вӗсен уйрӑмлӑхӗсем те пур. Чӗвӗсем пуплевре пуплев членӗсем пулмаҫҫӗ, тата нимӗнле членпа та ҫыхӑнса тӑмаҫҫӗ. Йевӗрлев сӑмахӗсем пуплевре член пулаҫҫӗ.

## 74 §. Йевӗрлев сӑмахӗсене тӗрӗс ҫырасси.

1. Мӑшӑр йевӗрлев сӑмахӗсене йе темиҫе хут калакан йевӗрлев сӑмахӗсене кӗске йӗрпе ҫыпӑҫтарса ҫыраҫҫӗ: пӑш-паш, нарт-нарт, чи-чи, вӗл-вӗл-вӗл, чӑл-чӑл-чӑл.

2. Йевӗрлев сӑмахӗсене вӑйлӑн, чарӑнса калаҫҫӗ пулсан, кашни ҫакӑн пек йевӗрлев сӑмахӗ хыҫҫӑн кӑшкӑру палли лартаҫҫӗ: Мана ҫурӑмран шывпа чаш! тутарчӗ. Мана ҫурӑмран шывпа чаш! чаш! тутарчӗҫ.

---

# ХӐНӐХТАРУСЕМ.

## 1 §. Пуплев çинчен кĕскен калани.

1. Пуплеври сăмахсем хушшинчи çыхăнăва ыйтусем лартса кăтартса парăр.

Епĕр социалисăм тăватпăр. Пирĕн парти çĕршыва социалисăм патне тĕрĕс çулпа илсе пырать. Пирĕн промышлĕннăç кунран кун вăйланать. Йалта колхозсем çирĕпленеççĕ. Епĕр пур фронтра та наступлени туса пыратпăр. Халĕ епĕр иккĕмĕш пилĕкçуллăха кĕтĕмĕр. Тĕнчери капиталиссем епĕр ку пилĕкçуллăха та тултарасран хăраççĕ. Клас тăшманĕсем тĕрлĕ майсемпе пире хирĕç тăраççĕ. Социалисăм çапах пур фронтра та çĕнтерсе пырать.

## § 2. Пуплевсем хыççăн чарăну паллисем лартасси.

2. Текста кирлĕ вырăна пăнчă, ыйту палли, кăшкăру палли лартса тухăр.

а) Кăнтăрла çитнĕ Хĕвел вăйлăран вăйлă пĕçертет Йăван Çилантйĕв хăйĕн анкартинче ывăлĕ кĕлте кӳрсе килессе кĕтсе выртать Сасартăк арпа ӳпли хыçĕнчен пĕр ача пĕтĕм вăйран кăшкăрса тухать

— Йăван пичче, часрах пулăш-ха Лаша кĕпер айне кĕрсе ӳкрĕ, тет

Йăван тепĕр айакки çине çавăрăнса выртать те, аллипе сулса калать:

— Мана мĕн... Ĕç çук-и мĕн çын лашисене кĕпер айĕнчен кăларса çӳреме тет

— Мĕнле-ха апла, Йăван пиче Лаши вĕт...

— Каланă пымастăп тесе Мĕн ман çын лашипе...

— Çын лаши мар, санăн лашу кĕрсе ӳкнĕ Хăвăртрах чуп

— Мĕнле ман

Ура тăрне сиксе тăрса, Йăван мĕн вăй çитнĕ таранах васкаса кĕпер патнеле чупать

Çавас, „Капкăн".

б) Доклад пĕтрĕ Епĕр ыйту хыççăн ыйту пама пуçларăмăр

— Рабочисен пурăнăçĕ йепле

— Промфинплана мĕн чул тултарнă

— Сталин йулташăн ултă условине пурăнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕн тунă

— Ударлă ĕçлессе миçе процент йавăçтарнă
— Хут пĕлменнисем нумай-и
Инженер ответ парса çитерме ĕлкĕреймест

в) Уй-хирпе савăтсем ăмăртса ĕçлеччĕр Малти ĕретри ударниксене болљшевикла салам

Сывă пулччăр болљшевикла хăвăртлăхсем Сывă пултăр социалисăмла ăмăрту

Йулташсем хĕрлĕ салтаксем, винтовкăна çирĕпрех тытăр Ленин йалавĕпе малала—çĕнĕ çĕнтерӳсем патне

3. Текстра пуплевсем хыççăн кирлĕ чарăну паллисем лартăр. Каласа пĕтермен пуплевсем хыççăн нумайпăнчă лартăр.

а) *Ťакка.* Туркçиб тенине илтни есĕ
*Вере.* Вара
*Ťакка.* Туркçиб тенинė пĕлетни
*Вере.* Пĕлместĕп çав
*Ťакка.* Пирĕн Совет сойузĕнче Туркестан текен вырăн йур Унта çĕрмамăкĕ ӳсет, тырă пулмасť Вĕсен çеçен хирĕнче тĕрлĕ хир кайăкĕсем çеç вĕçсе çӳренĕ Халĕ çав çеçен хирте
*Вере.* Мĕн вара
*Ťакка* Халĕ çав çеçен хирте çĕрмамăкĕ анчах акса тăваççĕ Кунта ĕçлекенсем вађђи Çĕпĕртен тырă турттарса килеççĕ Унти çĕрмамăкĕнчен çитсăсем тăваççĕ Çавнашкал пысăк ĕçре
*Вере.* Мĕн вара

б) *Офицер.* Ну çитĕ, сутник, халех пуху пух А, ес, çамрăкки, виç пăт така аш халех тупса тух
*Текей.* Вашă плахороť!.. никам çук йалта
*Офицер.* Суйан
*Текей.* Суймастăп Чунран
*Офицер.* Суйатăн, сысна Лекмен-и сана

Елкер, „Хĕн-хур айĕнче".

## 4 §. Пуплевĕн хуçипе калавĕ.

4. Пуплевсен хуçипе калавне кăтартса парăр.

Хĕвел пытанчĕ. Кăвак пĕлĕт хупласа илчĕ. Сасартăк çиçĕм çиççе йачĕ. Аслати кĕмсĕртеттерсе илчĕ. Çăмăр часах иртсе кайрĕ. Çĕр нӳрелчĕ. Сывлăш тасалчĕ.

Петров—агроном. Йуман—çирĕп йăвăç. Йуман çирĕп. Вăрман хитре. Арăслан—вăйлă кайăк. Хĕллехи кун кĕске. Аљумини—çăмăл метал. Дирижабĕл—вĕçмели машинă. Епĕр хастар.

Кунсем пĕчĕккĕнех, кĕркуннене кайа хăварса, хĕле кĕчĕç. Çемçе мамăк пек йур хура çĕре шуратрĕ. Çил вĕрмест. Çанталăк вăхăглă сивĕ. Кун пек чух ача-пăча, кăкарса лартсан та, килте лармасť. Çавăнпа та пайан пĕве çинче ачасем кăткă пек йăшăлтатаççĕ.

5. Пуплеври пăнчăсем вырăнне сиктерсе хăварнă хуçисене тупса кĕртсе ҫартăр.

... йухаť кĕрлесе
Аслă йалăн çумĕпе.
... тĕрĕ тĕрлесе
Выҙаť унăн шывĕпе.
Тăрă шывăн ăшĕнче
Кăвак ... йавăнаť,
Ватă ... тайăлса
Сăнне пăхса савăнаť.
Авă кĕпер çиййĕнче
... лараť вăлтапа:

Йăпăрт-йапăрт пуллине
Улталасшăн ăманпа.
Ав ... çӳл йенче
Шывра ишсе çӳреççĕ.
Пулă тытан ваттине
Хирĕçтерме пĕлеççĕ.
Акă пĕр ... кĕперпе
Каçса пыраť çырмапа.
Çырма урлă каçрĕ те
Кĕрсе кайрĕ вăрмана.

К. Иванов, „Нарспи."

6 Пуплевре пăнчăсем вырăнне сиктерсе хăварнă калавĕсене тупса кĕртсе ҫартăр.

Вĕçĕ-хĕрри курăнман улăхра çулса пăрахнă йешĕл курăк сапаланса ... Çак улăх çине сарă хĕвел хăййĕн пĕçертекен çутă пайăркисене хĕрхенмесĕр ... Вăл çулса тăкнă курăка ... Кăнтăрлахи апата çинĕ хыççăн колхозниксем малтантарах çулнă утта .. Вĕсем бригадăн-бригадăн ... Бригадăра пĕрисем ..., тепĕрисем ... виççĕмĕшĕсем капан ... Ĕç вучахри вĕреме кĕнĕ йашка пек ...

Лаша килти ... (*мĕн*). Мускав—пысăк ... Сат улмуççийĕн улми ... (*мĕнле*). Хурçă тимĕртен ... Пăр шывран ... Епĕ ... (*кам*).

## 5 §. Ăнлантару сăмахĕсем.

7. Пуплевсенчи ăнлантару сăмахĕсене тупса калăр. Вĕсен ыйтăвĕсене калăр.

а) 1. Епĕр шултăра социалисăмлă индустри турăмăр. 2. Пур çĕртре те хĕрлĕ йалавсем вĕлкĕшеççĕ. 3. Пролетариат йăвăрлăхсенчен хăрамасť. Вăл социалисăмлă пурнăç шăн кĕрешет. 4. Пирĕн колхозра кăçал пилĕк трактăр ĕçлерĕ. 5. Урампа грузовиксем кĕмсĕртеттерсе иртсе кайаççĕ. 6. Командир хĕрлĕ салтаксен ӳсĕмĕсем çинчен рапăрт таваť. 7. Комсомолĕссем кӳршĕ йала спектакҙ лартма кайрĕç.

б) 1-мĕш ĕçри ăнлантару сăмахĕсене кăтартса парăр.

## 6 §. Пуплеври сăмахсен çыхăнăвĕ.

8. Çак пуплевсенчи сăмахсен килĕшӳ, тытăм, çум çыхăнăвĕсене кăтартса парăр.

Хурçă плугсем уй-хире чĕреççĕ.
Уй-хирте кĕрлеççĕ трактăрсем.
Йалсенче шавлаççĕ трийерсем.
Çĕнĕ вăрлăх вĕсем хатĕрлеççĕ.

Кĕркунне çитрĕ. Пĕрмай вĕтĕ çăмăр çăвать. Вăрманти йăвăççем сарă, симĕс çулçисене тăкрĕç. Вĕсем пĕтĕмпех çаралса йулчĕç.

9. Пуплевсенчи сăмахсем хăшĕсем килĕшӳ йĕркипе, хăшĕсем тытăм йĕркипе, хăшĕсем çум йĕркипе çыхăнса тăнине кăтартăр. Тытăм йĕркипе çыхăнса тăраканнисене çырса илĕр. Тытса тăракансене тӳрĕ йĕрпе, тытăнса тăракансене кукăр йĕрпе айалтан туртăр.

1. Хулара та, йалта та пысăк строитĕлствă пырать. 2. Рабочисем шахтăра ĕçлеççĕ. Вĕсем çĕртен фосфорит кăлараççĕ. Савăтра фосфоритран çăнăх тăваççĕ. 3. Тимĕрçĕ мăлатукпа шаккать. 4. Платниксем пуртăпа йăвăçран пӳрт пураççĕ. 5. Пирĕн колхоза шефсем килчĕç. 6. Пуху ударниксене хĕрӳлĕ салам йачĕ. 7. Епĕр Мускава пуйăспа кайатпăр. 8. Капиталисла патшалăхсенче вăйлă кризис пырать.

## 7 §. Тулли пуплевпе туллимар пуплев.

10. Текстран туллимар пуплевсене çырса илĕр.

а) Сисмен çĕртенех кĕрлесе тăракан сасăсене темскер чăнкăртатни çурса йанă. Çакăн пек сасă йанраса кайнă:

— Акă пирĕн цехра ĕçлесе пурăннă токăр Аниканăв сăнчăрĕ. Пирĕн ĕçшĕн вăл ăна катăркăра тăхăнса çӳренĕ!

Кантур пуçлăхĕ станукселм патнеле васкаса утнă.

— Пăрăнăр! Кам каларĕ ăна? Мĕн кăтартрĕ? Сăнчăр? Мĕнле сăнчăр?

Алăран алла куçса, сăнчăр шанчăклă вырăна çитсе выртнă.

— Кам каларĕ кăна? Есĕ-и?

— Епĕ.

— Мĕн кăтартрăн есĕ кунта?

— Хам ывăл сăнчăрне.

— Мĕнле ывăлунне?

— Катăркăра пулнинне.

— Ăçта вара сăнчăрĕ?

Матви ăна куçĕнчен шăтарса пăхнă та каланă:

— Вĕçрĕ.

— Ăçтала вĕçрĕ?

— Кирлĕ çĕреле.

— Кирлĕ çĕреле? Асту, старик, унтала-и?

Астăва-астăва ывăннă та ĕнтĕ.

— Мĕн тесшĕн есĕ ывăннă тенипе?

— Нимĕн те мар.

Ђашко, „Ура сăнчăрĕ çинчен".

б) Ваçук вакун çине ларма васкаса чупса пырать. Кондуктăр калать:

— Пуçна çуратăн!

Ваçук чĕнмест.

— Аçта кайатăн?

— Баку хулине.

— Санăн Бакура кам пур?

— Пичче.

— Вăл унта мĕнле вырăнта ĕçлет?

— Нефтă кăларнă çĕрте.

## 8 §. Хуçалă пуплевпе хуçасăр пуплев.

11. Хуçалă пуплевпе хуçасăр пуплевсене кăтартса тухăр.

а) 1. Пĕлĕтленет. Çурласем кăчăртатаççĕ. Кĕлте çыхнă чух, жнейкă сасси хыттăнах илтĕнет. 2. Тĕттĕмленет. Каç пулаť. Кĕтӳ кĕртет. 3. Уйартаť. Кăр ларакан ыраш çинче тумламсем шăрçаланса тăраççĕ. Пылчăклă çулсем кушăрхаççĕ. 4. Çĕр айĕнчен торф кăлараççĕ. Кăранташа графитран тăваççĕ. Шкула вĕренме çӳреççĕ. 5. Кĕлрен вутă тăваймăн. Мулкача çара аллăн тытаймăн. Ерех хыççăн кайсан, пуçна çийĕн. 6. Выҫăхсене нормă тăрăх тăрантармала. Вĕсене хĕлле ăшă, çутă витере усрамала. 7. Çакăн пек постановлени йышăнас: Ревизи комиççине кооператив лавкине тĕрĕслеме хушас. Айăплисене сута парас.

б) Хăвăртан тупса хуçасăр пуплев саккăр çырса парăр.

## 9 §. Йат пуплевсем.

12. Йат пуплевсене кăтартса тухăр.

Ак Пăслăк йалĕ. Киçек шăрши. Йӳçĕ тĕтĕм. Шкул. Клуб. Ват йăмра. Вĕрме пĕлмен йăтăсен сасси. Иан-йан кайаť Маҫҫайăмра (çырма-çатра йачĕ). Чиркӳ çинче хĕрлĕ йалав вĕлкĕшет. Унта хаҫ клуб. Унта йалан йаш кĕрĕмсен сасси сĕрлет.

Вутлă-хĕмлĕ йупа уйăхĕ. Ленин. Пролетари. Парти. Çĕнĕ вăй. Тин çеç чăмăртанчĕ сапаланнă вăй. Шăлса тăкрĕ Йупа уйăхĕ Çеливан арманне. Рабочипе хресченĕн хĕрлĕ паттăр вăйĕ çавăрса çапрĕ хăйне месерле.

Лашман.

Октăбĕр уйавне иртерни. Граждăн вăрçи пĕтни. Малтанхи пилĕкçуллăха тултарни. Халĕ иккĕмĕш пилĕкçуллăх пыраť.

## 10 §. Хутлă пуплевпе хутсăр пуплев.

13. Хутлă пуплевсене кăтартса тухăр, вĕсенче чарăну паллисене лартнине асăрхăр.

1. Чӳречерен пырса пăхатăп: тулта çанталăк йусанса ларнă. 2. Кирил вуттине касаť те, вутти çурăлаť кайаť. 3. Епĕ кăнтăрла Хусана тухса кайас теттĕм, анчах пăрахут килмерĕ. 4. Çил хĕвеланăç йенчен вĕрет, çапах çăмăр пĕлĕчĕсем çук-ха. 5. Тырăсем сарă, анчах вĕсене вырмаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен тĕшши çемçе. 6. Аттем вăрмана кайрĕ. Епĕ киле пĕр пĕччен йултăм. 7. Ваҥук тутăхса кайнă перо илнĕ те çыру çырма тапратнă. Хучĕ тенкел çинче выртнă, хăй тенкел умĕнче чĕркуççи çинче тăнă. 9. Кунсем иртеççĕ, вăхăт малала шуса пыраť. 10. Иван чирленĕ, çавăнпа та вăл пайан шкула килмен. 11. Мишă çывăрмасť: çурçĕр иртсен ик сехетрен пуйăс килет. 12. Епĕр киле пайан каçчен çитеймест-пĕр пулĕ: çул йапăхнă.

14. Хутлă пуплевсене, чарăну паллисем лартса, çырса илĕр.

1. Çăмăр çăвать утма йăвăр çапах та епĕр утатпăр. 2. Ачасем такçанах шыва кĕресшĕн анчах шывĕ сивĕ-ха. 3. Уçăп колхозра лашасем пăхать. Вăл тирпейлĕ ĕçлет лашасем унăн тутă вити таса 4. Çу пулнă кĕр пулнă хĕл тапранса кайнă. 5. Кĕркунне çитрĕ чечексем типрĕç йăвăç-курăксем çаралса йулчĕç. 6. Тăптăрă шыв çуталса выртать шыв тĕпĕнче чулсем курăнаççĕ. 7. Хĕвеланăç тĕттĕмленчĕ çырма-çатра пытанчĕ. 8. Пирĕн ССРС-че шалти пурăнăç çирĕпленсе пырать рабочи класăн мĕлйунлă масси Совет влаçĕ тавра çирĕп пĕтеçнĕ. 9. Раççей çершывĕ аслă чиккисем ун вĕçĕ-хĕррисĕр. 10. Ес мана итле-ха епĕ тата мĕн курнă вара пурнăç тутине пĕлсе çитĕн пĕтĕмпех. 11. Кĕрешӳре ĕçлекенсем çĕнтереççех мĕншĕн тесен буржуази халăхăн ытла пĕчĕк пайĕ анчах пулса тăрать. 12. Çĕнĕ пурăнăç тĕрлĕ сасăсемпе кĕрлет: йе трактăр сасси илтĕнсе кайать йе автомобил вăшт çеç кăшкăртса иртсе кайать йе çӳлте аероплан йĕрлени йанăратса кайать. 13. Пĕр пусăм та йут çĕр кирлĕ мар анчах хамăрăн çĕре те пĕр вершук та парас çук тăшмана. 14. Корпуссем сарăлаççĕ ӳсеççĕ саватсем. 15. Епĕр пĕлетпĕр: Бакура „хура пурлăх" хура пĕлĕт пагне çитех сирпĕнет. 16. Вăйлă кăкăрăм çăмăллăн сывлать хăнăхнă аллăм пĕрмайах шаккать. Çӳлерех çĕклен ирĕк мăлатук: сана хĕсĕрлекен урăх чĕрĕлес çук.

## 13 §. Сăмахсен пĕлтерĕшлĕ пайĕсем.

15. Çакăнти сăмахсенчен малтан хутлă сăмахсене кăтартса парăр, вĕсем йепле пулнине ăнлантарăр Унтан мăшăр сăмахсене çырса илĕр. Йулашкинчен тата ик хут калакан сăмахсене çырса илĕр.

Куççуљ, çăлкуçĕ, улмуççи, çураки, çанталăк, çулталăк, çуркунне, кăçал, кĕçер, çурçĕр, çăраççи, кĕçнерни, вырсарни, çуртăри, сӳс-кантăр, пир-авăр, çи-пуç, ӳт-пӳ, умлă-хыçлă, вĕçĕ-хĕррисĕр, апат-çимĕç, анкарти, тумтир, хулпуççи, чĕркуççи, пиççи, иле-иле, кайа-кайа, ĕçле-ĕçле, час-час, аран-аран, утмăл-çитмĕл, пилĕк-ултă, камран-камран, мĕнпе-мĕнпе, йалтăр-йалтăр, тăн-тан, пăш-паш, вĕл-вĕл, асту, астив.

16. Текстри сăмахсен тĕпĕсене, сыпăкĕсене кăтартса тухăр.

Пуç пулса тăракан классем комунисла револђуци умĕнче чĕтресе тăччăр! Пролетарисен вăл револђуцире хăйсен сăнчăрĕсенчен пуçне урăх нимĕн çухатмали те çук. Илессе вĕсем пĕтĕм тĕнчене илĕç. (*Комунисла манифестран*).

Октябĕр револђуцийĕпе пĕрле комунисла револђуци самани пуçланчĕ. Совет сойузĕ татăклăнах социалисăм çуле çине тăрса тĕрекленчĕ. Капиталисăм тĕнчи тăтăшах ишĕлсе тĕпнеле путса пырать.

## 17 §. Сăмахри сасăсен килĕшĕвĕ.

17. Малтан йăвăç йачĕсене, унтан тырă йачĕсене тупса çырса парăр. Çемçе сăмахсене айалтан туртăр

18. Çак йурăри сăмахсене хытăлăхпа çемçелĕх йенчен пăхса тухăр: хытă сăмахсене, çемçе сăмахсене. Хутăш сăмах пулсан, унăн тĕпĕ мĕнлине асăрхăр.

## Пионер йурри.

Савăт ачи, йал ачи,
Атăр утăр пирĕнпе.
Çамрăксенĕн йуррине
Йанратăпăр тĕнчипе:
Тап, тап
Çирĕп ут.
Пуйан ачи
Пире йут.

Епĕр Ленин ачисем,
Ун çулĕпе пыратпăр,
Иҫĕк тĕнче çамрăксем
Йурăсенче калатпăр:
Тап, тап
Çирĕпрех!
Комсомол та
Пирĕнпех.

Савăтсенчен, йалсенчен
Чухăнсене чĕнетпĕр,
Çĕрĕк мулăн тĕнчинчен
Çут хĕвеле пӳлĕпĕр.

Епĕр пырас çул çинче
Вăрă-хурах сахал мар,
Çапах ирĕк тĕнчинче
Ма кăшкăрса йурлас мар!

19. Текста çырса илĕр. Хытă тĕпсене тӳрĕ йĕрпе туртăр, çемçе тĕпсене кукăр йĕрпе туртăр.

„Кам ĕçлемест, вăл çимест"—ку Ленин сăмахĕ. Колхозсемшĕн ку йĕркене пĕтĕм Сойузри советсен улттăмĕш сиесĕ йышăнса хăварнă. Халĕ епĕр, малта пыракан колхозниксем, рабочисемпе пĕрле, партипе, тата правитĕлствăпа пĕрле çапла калатпăр: Кам ĕçлемест, йе таса кăмăлтан ĕçлемест, унăн çулĕ пирĕнпе мар, уншăн ĕçлĕх колхозсенче вырăн çук, вăл совет влаçĕн тĕрекĕ мар, вăл пирĕн тăшманăн – кулакпа сăтăрçăн тĕрекĕ.

Пирĕн ĕретсенче текех найансемшĕн, прогульщиксемшĕн колхоз йухăмне хирĕç пыракансемшĕн вырăн пулмала мар. Ун пеккисем вальли малашне колхозра çăкăр татăкĕ, кĕтес те пулмала мар.

Ĕçре çирĕп дисциплинă пултăр.

(Пĕтĕм Сойузри ударник - колхозниксен пĕрремĕш сиесĕ чĕнсе каланинчен).

### 18 §. Йанăракан хупă сасăсемпе йанăраман хупă сасăсем.

20. 18-мĕш ĕçри сăмахсенче п, к, х, с, ç, ш, т, ť, ч сасăсем йанăравлă илтĕннине кăтартса парăр. Йанăрани мĕнле условирен килнине калăр.

21. Текста çырса илĕр. Йанравлă илтĕнекен п, к, х, с, ç, ш, т, ť, ч хупă сасăсен паллисене айалтан туртăр.

Пролетари диктатури, ленинла наци политикне пурăнăçа кĕртсе пырса, нацисене пусмăрлас йĕркене тĕппипех пĕтерет, пĕр-пĕрне шанăç хывса, мирлĕ, чăн-чăн тăванлă пурăнăç тăвать. Совет йĕркисем хăйсемех ĕçхалăх массисене социалисăмла, пĕр çемйелĕ пурăнăç çулĕ çине кàларса пыраççĕ Совет сойузĕ вăл — социалисăм тăвакан пĕр танлă халăхсен ирĕклĕ пĕрлешĕвĕ. Совет сойузĕ, социалисăм строитĕлствин пĕтĕм пур фронтра та пысăк çитĕнӳсем туса, пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхсен тăван çĕршывĕ, пĕтĕм тĕнчери пролетари революцийĕн ударлă бригади пулса тăрать.

## 22 §. Сасăсем ылмашни.

22. Хăвăр йал калаçăвĕпе литературă чĕлхинчи сăмахсенче сасăсем ылмашнине асăрхăр.

Малтан сăмаха кĕнеке чĕлхинчи пек çырăр, ун хыççăн тире лартăр, унтан çав сăмахах хăвăр йалта каланă пек çырăр. Ылмашакан сасăсене айалтан туртăр.

Тĕслĕх: сă*х*ман—сă*к*ман, т*а*та—т*ă*та, ш*ыв*—ш*у*.

## 25 §. Сасăсем уйрăмлăхĕнчен килекен орфографи правилисем.

23. Çак текста вĕрентекен диктовкă туса çыртарат̆, вĕренекен ачасем сăмахсене мĕнле тĕрĕс çырнине тĕрĕслет.

### а) Аслă Окт̆абĕр.

Хамăрăн ирĕк тăван çĕршывсенче
Ирĕклĕх йуррисем йурлатпăр,
Çут хĕвел пек Окт̆абĕр ырлăхне
Ахаљ мар епĕр хаљ мухтатпăр.
Йалпала хапрăк
Ачисем пĕрле
Епĕр, епĕр
Шăлсах та
Тасататпăр пусмăра
Хамăрăн аслă
Окт̆абĕрпе.

Вунă çул пирĕн влаç, пирĕн ирĕк—
Пирĕн çире патша çук, сăнчăр çук.
Вунă çул тулнине уйавлатпăр,
Анчах хаклă Илйич пирĕнпе çук.

Хуласемпе йалсем т̆ăванланчĕç,
Пĕр пĕрне ал парса ал илеççĕ.
Тинĕссен леш йенчи чурасем те
Йулашки çапăçăва чĕнеççĕ.

Çĕн йалав, çĕн йыхрав, ĕмĕтсем пĕр.
Çамрăксем чĕннĕ сас—йун кăвар:
— Тĕнчипех, ĕççынни, пĕрлешер те,
Пур çĕрте те Окт̆абĕр тăвар!

*Ваçанкка.*

б) Хĕллехи ăшă каççенче, пĕр каç пула пуçласан, тăвайккинче вара ача-пăча кĕшĕлтетет. Кăшкăрашаççĕ, калаçаççĕ, кулаççĕ. Çырма леш айаккинче те, вăрман пек курăнса ларакан йăмрасем хушшинче, ача-пăча сасси йан-йан тăват̆.

в) Павăл—отрйад вожатăйĕ. Пет̆т̆ана, нумай пулмаст̆, унăн помошникĕ тунă. Халĕ вĕсем икĕ кун хушши хулара пионер вожатăйĕсен канашлăвĕнче. Пет̆т̆а кунашкал канашлура халиччен нихăçан та пулман, çавăнпа та вăл унта мĕн-мĕн калаçнине питĕ хытă итлесе ларнă.

г) Тырпул тухăçне хăпартасшăн, колхоз тупăшне ўстересшĕн кĕрешетпĕр пулсан, çĕр ĕçне агрономи вĕрентнĕ пек тăвар. Выљăхсене калча çине йарар мар.

### 27 §. Йапала йачĕсем çинчен кĕскен пĕтĕмлетсе калани. 28 §. Вĕçлевсем. 29 §. Йапала йачĕсен тĕп вĕçленĕвĕ. 30 §. Вĕçленӳри тĕрлĕ уйрăмлăхсем.

24. Текстри йапала йачĕсем мĕнле хисеприне, мĕнле вĕçлеврине кăтартса парăр.

1. Хаљ етем çĕрĕн, çутçанталăкăн хуçи пулса пыраҭ. Анчах пĕтĕм çутçанталăкăн аслă хуçи пулса тăма пĕтĕм тĕнчери çынсем пĕр шухăшлă пулни кирлĕ. Хаљ çынсем пурте пĕр шухăшлă мар-ха. Йут патшалăхсенче хăшĕ хура тар йухтарса, вăйран кайса ĕçлеççĕ, хăшĕ нимĕн ĕçлемесĕрех ыттисем ĕçленипе усă курса пурăнаççĕ. 2. Йалхуçалăхĕнче те, халĕ савăтри пекех, пĕтĕм ĕçе машинăпа туса пыма пуçларĕç. Лашапа етем халĕ йăвăр ĕçсенчен хăтăлса пыраҭ. Лаша тунă ĕçсене нумайĕшне трактăр туса пыраҭ. 3. Германире рабочисем фашисăмпа кĕрешеççĕ. 4. Пĕтĕм Раççейĕпе револљуци хумĕ сарăлнă... Мускавра, Чулхулара, Уралта, Çĕпĕрте, Украинăра—пур çĕрте те револљуци çĕнтерет. 5. Аслă Октабĕр панă ирĕк кашни хулара, кашни йалта, пур çĕрте те хăй ĕçне турĕ. Ĕмĕртенпе пусмăр айĕнче пурăннă вак халăхсем те вăранчĕç.

6. Хурçă плугсем уй-хире чĕреççĕ,
Уй-хирте кĕрлеççĕ трактăрсем.
Йалсенче шавлаççĕ трийерсем,
Çĕнĕ вăрлăх вĕсем хатĕрлеççĕ.

7. Сысна ĕрчетекен совхозсемпе колхозсем тăвар. 8. Социалисăм ĕçĕшĕн кĕрешекенсенĕн малти ĕретне—ударниксене—болљшевикла салам йаратпăр. 9. Кулљтурăсăр çĕршывра хут пĕлмен халăхпа социалисăм тума çук, тенĕ Ленин. 10. Комуниссен партийĕ—пролетариатăн çулпуçĕ. Совет çĕршывĕ пĕтĕм тĕнчери пролетари револљуцийĕн крепăçĕ. 11. Парти массăсемпе тачă çыхăну тытаҭ. 12. Техникă тĕлĕшпе малта пыракан капиталисла çĕршывсене кĕске вăхăтра хăваласа çитсе иртсе кайар. Сывă пулччăр болљшевикла хăвăртлăхсем!

25. Текстри пуплевсенче йат вĕçлевĕнчипе тăву вĕçлевĕнчи сăмахсене кăтартăр. Сăмахĕсем çине кĕскенĕн вĕçлев йачĕсене çырăр: й—йат вĕçлевĕ; тв—тăву вĕçлевĕ.

1. Епĕр выљăх-чĕрлĕх усракан совхозсем куратпăр. Совхозсем пĕр йенчен кирлĕ продукци параççĕ, тепĕр йенчен шултăра хуçалăха организацилемели пример пулса тăраççĕ. 2. Пуйăспа пынă чух, чӳречерен йупасем, вутă куписем, кивĕ вакунсем, йăвăçсем курăнаççĕ. Пуйăспа пынă чух, чӳречерен йупасем, кивĕ вакунсем, йăвăçсем куратпăр. 3. Кĕнеке пĕлӳ параҭ. Ачасем шкулра пĕрле кĕнеке вулаççĕ. 4. Епĕр класра електрицă кăлартăмăр. Електрицă шартлатаҭ. 5. Пирĕн йал ачисем иртнĕ çулсенче вырт-мара вăхăта питĕ йурăхсăр иртеретчĕç. Пĕр-пĕринпе çапăçаҭчĕç, чĕлĕм туртаҭчĕç. Халĕ вăл йăласем пĕтрĕç. Выртмара пионер отрйачĕ физкулљтурă вăййисем, калаçусем тăваҭ. 6. Пирĕн кӳлĕре пулă лайăх ĕрчет. Епĕр унта пулă час-часах тытатпăр. 7. Пионерсем тырпула сыхлас тĕлĕшпе бригадăсем, группăсем, дружинă-

сем организацилерӗҫ. 8. Вӑрмантан тухсан пӗр вӑйлӑ колхоз куратпӑр. Вӑл колхоз пӗр ӗҫе те машинӑсӑр тумасҭ.

26. Ҫак текстра тӑву вӗҫлевӗнчи тулли формӑпа кӗске формӑлӑ сӑмахсене кӑтартса тухӑр.

1. Рабочисем савӑтра кантӑк кӑлараҫҫӗ. Кантӑка хӑйӑртан тӑваҫҫӗ. 2. Ачасем шкулра кӗнеке вулаҫҫӗ. Кӗнекесене типографире ҫаптараҫҫӗ. 3. Выљӑх курӑк ҫийет. Ҫемҫе курӑка выљӑх йурат са ҫийет. 4. Лампӑна краҫҫын йанӑ. Лампӑна халӗ илсе килнӗ краҫҫына йачӗҫ. 5. Колхозниксем уй ӗҫӗсене пӗтерсе кӗнӗ те вӑрмана кайнӑ. Вӗсем нумай йӑвӑҫ каснӑ, анчах кун пек пысӑк, тата ҫирӗп йӑвӑҫа курман. 6. Ӗҫлекенсем апат пӗҫерме Укахвийе суйларӗҫ. 7. Петӗр капкӑнпа мулкач тытнӑ. Мулкача киле вӗлермесӗрех ҫитерсе шӑллӗсене кӑтартнӑ. 8. Епӗ кантӑкран йӑмрасем, пӳртсем, ҫырмасем куратӑп. Вӑл йӑмрасене, пӳртсене, ҫырмасене епӗ краскӑсемпе ӳкеретӗп. 9. Кӑранташа ҫырасшӑн туса кӑлараҫҫӗ. 10. Оҫипӑв йулташа епӗ словар патӑм. Вӑл словаре Оҫипӑв йулташ тата тепӗр йулташа панӑ. 11. Комсомолӗссем конференци тунӑ. Конференцийе пилӗк кунта ӗртерсе йанӑ.

27. Текстра тӗл пулакан пару вӗҫлевӗнчи сӑмахсемпе тулли кӗлеткелӗ тӑву вӗҫлевӗнчи сӑмахсене кӑтартса тухӑр. Сӑмахӗсем ҫине кӗскен вӗҫлев йачӗсене ҫырӑр.

1. Епӗ Ивана куртӑм. Епӗ Ивана ҫыру патӑм. 2. Ачасем вӑрмана екскурҫийе кайнӑ. 3. Чухӑнпа вӑтам хресченсем колхоза кӗчӗҫ. Патшалӑх колхоза ҫӑмӑллӑхсем параҭ. 4. Курӑксене ӳсме ӑшӑ, сутӑ, ҫӑмӑр кирлӗ. Сатри курӑксене пӗтӗмпех ҫулса пӗтернӗ. 5. Кӑмакана кӑмакаҫӑсем тӑваҫҫӗ. Кӑмакана вутӑ хутаҫҫӗ. 6. Йалкор хаҫата статйа йанӑ. Вулав ҫуртӗнче пайан килнӗ хаҫата вулаҫҫӗ. 7. Кӗрешӗве йыхӑраҭ вичкӗн ҫил (*Тук.*). Илтнӗ-и ҫӗнӗ хыпара? (*Тук.*). Вӗҫтерет ешелон, состав савӑта, хапрӑка, хулана (*Ахт.*). 8. Хастарлӑ колхозсем тырра тирпейлерӗҫ. Ҫапнӑ тырра тийесе хулана ӑсатрӗҫ. 9. Аллӑ ҫул ӗлӗк, Мускавра, халӑха револуци тума хатӗрленӗшӗн аллӑ ҫынна сута панӑ. Вӗсенчен пӗри рабочи, Петӗр Алекҫейӗв, ҫапла каланӑ: „Ачаранпах епӗр, ӗҫлекен халӑх, килтен тухса, хырӑма тӑрантарса пурӑнма, хапрӑк-савӑтсене пиншерӗн ӗҫлеме кайатпӑр. Ӗҫ хакне хӑпартма ыйтсассӑнах, пире Ҫӗпӗре йараҫҫе“, тенӗ. 10. Ваңук вӑрмана кӗрсенех унтала-кунтала пӑхкаларӗ. Акӑ сукмак хӗрринче кукӑр-макӑр ват улмуҫҫи лараҭ. Ваңук ҫав улмасене татса кӑмакана хывса, пӗҫерсе шӑллӗсене ҫитерчӗ.

28. Текстри йапала йачӗсем мӗнле хисеприне, мӗнле вӗҫлеврине кӑтартса тухӑр.

Ваҫилйӗвкӑ колхозӗ—мӗлйунлӑ ҫарӑн пӗр пайӗ (*Тук.*) Ката хӗрринчен инҫе мар лараҭ ҫӗн савӑт симӗс тумтир пӗркенсе (*Лаш.*). Ҫатрака йӑмранӑн турачӗсем ҫинче хӗллене мухтаҫҫӗ пӗр кӗтӳ чана. Таҭук инкепе Микит кӑвак шуҫӑмлах тухса кайнӗҫ тумхахлӑ ҫулпала станцӑна. Ҫирӗм пилӗк ҫухрӑмра, Ҫарӑмсан шывӗн тепӗр йенче, лараҭ МТС (*Тук.*). Вӗҫтерет ешелон, состав савӑта, хапрӑка, хулана. Вакунсем вӗҫмеле инҫене тырӑпа, рудапа, кӑмрӑкпа (*Ахт.*) Мӗн чул револуцийе лайӑх хатӗрлеңнӗ, ҫавӑн

чул çĕнтерӳ пирĕн йенче пулĕ. (*Леинн*). Çĕнĕ пурнăçăн уççи сирĕн аллăрта (*Çавас*). Çанталăк йепле хăрушă пулсан та, шахтоpсем бараксенче хăраса лармаççĕ. Хăшĕ ĕçе кайаççĕ, хăшĕ еçрен таварнаççĕ.

Кĕлрен нумай усă курма пулать. Кĕлре йăвăç-курăксене кирлĕ йапаласем: кали, фосфăр, исвĕс нумай. Агрономсем сăнанă тăрăх, 16 килограм кĕл тымарçимĕççен тухăçне 80 килограм хăпартать. Çак чыхвартан кĕлĕн усси лайăх курăнса тăрать Кĕле шыв йурамасть, йĕпенсен вăл пăсăлать. Кашни хресчен хуçалăхĕ çулталăкра 4—5 центнĕр кĕл пуçтарма пултарать. 5 центнĕр кĕле çĕрулми ани çине сапсан, 25 центнĕре йахăн çĕрулми хушăнать. Хуратул улăм кĕлĕ пур кĕлсенчен те усăларах. Çĕре çĕнетнĕ чух, кĕлпе пĕрле ытти йапаласем те сапас-тăкас пулать. (*Парамонăв*).

29. Çак текста, скобкăра лартнă йапала йачĕсене кирлĕ вĕçлеве лартса, çырса илĕр. Çине кĕскенĕн вĕçлев йатне çырăр.

1. Едисон (кĕнексем) вулама йуратнă. Вунпĕр çула çитсен, вăл хулари тĕп (библиотекă) кĕрсе пăхнă. Шкапĕ-шкапĕпе (кĕнеке) тăнине курса, Едисон: Ку (кĕнекесем) пурне те вуласа тухас пулать ман, тенĕ. Вăл вара (шкап) тăракан (кĕнекесем) йĕркипе вулама тытăннă. 2 (Хресченсем) 1861 мĕш çулта („ирĕк“) кăларнă, анчах вĕсен пурăнăçĕ йусанман (Йал) темиçе сийе пайланнă. Чухăнсем татах начарланса пынă. Хăшĕсем (килĕсем) пăрахса (хула) (ĕç) шырама кайнă. (Хресчен) пурăнăçĕ питĕ йăвăр пулнă. Çĕр (улпучĕсем) нухайкки сахал авкаланман вĕсенĕн çурăмĕ çинче.... Çав (вăхăт) Разин Çтапанĕ (бурлаксем) пухса (улпутсем) хирĕç тăнă. 3. (Çитăр) Мирун (пăшалсем) (кайăк) карĕç.

4. Кĕске хӳре мулкачă
Сирпĕнтерчĕ (çырма),
Ытла сивĕ тивесрен
Кĕрт хушшине пытанма.

Кушак пуçлă тăмани
Икĕ куçне çутатса
Лăпсăртатрĕ (лупас),
(Çил-тăман) хăраса.

(Урамсем) пĕр çын çук,
(Йал) пĕр чун йулман пек:
Вылăх-чĕрлĕх (вите),
Ача-пăча ăш (пӳрт).

30. Пуплевсем çырса парăр. Çав пуплевсенче **Йакку, Кĕркури, Анна, тырă, пăтă пĕрчĕ** сăмахсем камăнлăхпа пару вĕçлевĕнче пулччăр.

31. Çак статйари йапала йачĕсем мĕнле хисеприне мĕнле вĕçлеврине кăтартса, тухăр.

## Трахомăпа кĕрешни.

Епĕр трахомăпа ăнăçлăн кĕрешмели майсене тупса кăлартăмăр, трахомăпа вирлĕн кĕрешсе пыратпăр.

Епĕр 4 çул хушшинче 150 пин çынна трахомăран хăтартăмăр. Иккĕмĕш пйатилеткăра трахомăна тĕппипех хăваласа кăларатпăр.

Епĕр трахомăпа мĕнле кĕрешмелине кăтартса патăмăр. Пирĕн опăт пур çĕре те сарăлать.

Парти Обкомĕн VI-мĕш пленумĕнче Мурзин профессăр акă мĕн каласа пачĕ:

„Чăваш республикинче трахомăна хирĕç кĕрешсе пысăк ĕçсем тунă. Трахомăпа кĕрешес ĕçĕн историнче епĕр кунта курнă пек примерсем хаљччен пулман.

„Чăваш республикин опăчĕсенчен тухса тăракан тепĕр тапхăр вăл—трахомăпа кĕрешес ĕçе тĕрĕс йĕркелени пулаť.

„Чăваш республикинче трахомăпа кĕрешес ĕçре çак тапхăр хăй çине çавăрăнса пăхтараť—кĕске вăхăтра шутсăр пысăк опăт туни, нумай материал пухни Ку таранччен пулман вăй-хăватпа кĕрешнĕ пирки, çак çĕнтерӳ пулма пултарнă, тесе каласшăн епĕ. Çак ĕçе хамăр куçпа курман пулсан, ăна ĕненме те хĕн темеле.

„Трахомăран пĕтĕмĕшĕпех сыватас ĕçе Чăваш республики пуçарса йачĕ, вăл тытăначчен кун пек ĕç пулман. Пирĕн Сойузри ытти республикăсемпе облăçсем трахомăпа кĕрешес ĕçре Чăваш республикин опăтне никĕсе хумала", тет профессăр Мурзин.

Чирковски профессăр та пирĕн ĕçсене ырăлаť. Вăл пире трахомăпа кĕрешме те хытă пулăшаť.

Епĕр сывă. таса куçшăн кĕрешетпĕр. Сывă куçшăн кĕрешни—социалисăмшăн кĕрешни.

С. П. Петров. „Иккĕмĕш пйатилеткăн пĕрремĕш çуракине болљшевикла иртерер".

## 31 §. Йапала йачĕсен камăннине пĕлтерекен форми.

32. Текстра камăннине пĕлтерекен сăмахсене уйăрса илĕр. Вĕсем хăш сăпатрине, мĕнле хисеприне каласа парăр.

Йапăш айĕн сыхланаť тăшману. Ан шиклен. Шикленмешкĕн ан пĕлтĕр чĕрӳ (*Пет.*). Епĕр çураки фронтĕнче тунă çитĕнӳ—Партипе Советсен тĕп çулйĕрĕн çĕнтерĕвĕ (*Тук.*). Парти! Мĕн пур сасăпа, мĕн пур мимери ăсăма паратăп сана сăввăмра (*Пет.*). Батрак ачи, кĕтӳç,—пайан инженер, инке „Канаш" вулаť, йăмăкăм техникă шкулĕнче, шăллăм—паллă ăста. Иртсе кайнă çулсен мĕлкине асăма тавăрма тăрăшатăп. Пулмасť пуљ ĕçсе, Алапит тиллĕм. Шăлса ĕçтерсе мана çаврас çук. Кайах, кирлĕ мар санăн шерпетӳ. Пулминччĕ пĕрреултавсăр чĕлхӳ! (*Ел.*). Йуратнă аттепе аннем! Кӳрĕр аллăра—чăмăртам. Тем пек ман сирĕн хушшăрта калаçса ларса, хамăн вĕрекен чĕреме уçса парас килет (*Кр Ас.*). Ӳсеççĕ савăт тăрписем, ӳкеççĕ чирĕк тăррисем (*Уйăп*). Парти ман алла кĕнеке, черťошсем, лаборатори хатĕрĕсем пачĕ (*Митр.*). Утар, утар пĕр харăссăн, Окťабĕр ачисем (*Мит.*). Хĕвел шевли вăйă выљаса тăнă чух, пуçа усса ларни килĕшмест.

Çӳлте, пĕлĕт айĕнче, тăри йурри илтĕнет (*К. Ив.*). Пирĕн йуррăмăр—хир те çаран (*Мит.*). Уй-хир йурри савăнăçлăн йанăраť, кĕтӳ ачи кĕнеке вуласа выртаť.

## 32 §. Сăпат сыпăкĕсем йапала йачĕ тĕпĕсемпе мĕнле пĕрлешни.

## 33 §. Сăпат сыпăклă йапала йачĕсем вĕçленни.

33. Текстри камăннине пĕлтерекен йапала йачĕсем мĕнле хисеприне, мĕнле вĕçлеврине, хăш сăпатрине кăтартса тухăр.

1. Шкул çуртĕнчен колхоз правленине инçе те мар. 2. Ĕç ачисем ĕçре хăйулă, вĕренӳре хастар. 3. Çуна çулĕ пĕтиччен коопе-

ратив вађђи тавар турттарса килес. 4. Салтак ачисен ĕлĕкхи пек салтак йуррисем йурласа, çĕмĕрсе çӳреме йурамасť. 5. Ĕне витине ăшă, çутă пулмала тунă. 6. Пайан Петĕр Йăванне куртăм, ачисене курма килнĕ. 7. Вулав çуртне лăках халăх тулчĕ. 8. Окťабĕр революцийĕ Раççей ĕçхалăхне чăн ирĕк пачĕ. 9. Музăкă сасси йанăраса кайрĕ, парти райкомĕн çекретарĕ митинг уçрĕ.

## Разин Çтапанĕ.

Пĕр 270 çул ĕлĕк Разин Çтапанĕ, хура халăх хутне кĕрсе, çĕр улпучĕсемпе патша влаçне хирĕç тăнă. Вăл хăйĕн çарĕпе Атăл çинчи виç-тăват пысăк хулана туртса илнĕ. Патша çарĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă. Хресченсем çĕр улпучĕсене хăйсене вĕлерме, вĕсен кил-çурчĕсене вут тĕртсе çунтарса йама пуçланă.

Патша çарĕ, темĕн чул тăрăшсан та, пăлханакан халăха чарайман. Йулашкинчен патша правитĕлстви лайăх, нимĕçле вĕреннĕ салтаксене йанă. Вара Ульйанăвск хули тĕлĕнче пысăк çапăçу пулнă. Ку çапăçура Разина тыткăна илнĕ. Çавăнтах ăна тимĕрлесе Мускава илсе кайса пуçне касса татгарнă. Анчах халăх Разина, унăн шухăшне манман, ăна хăйĕн йуррисенче мухтанă, унăн ĕмĕчĕпе пурăннă.

34. Текстри йапала йачĕсем мĕнле хисеприпе, мĕнле вĕçлеврине каласа кăтартмала. Сăпат сыпăкĕсем пулсан, йапала йачĕ хăш сăпатрине каламала.

## Çулйĕр строитĕлстви.

Çулйĕр строитĕлствине илер. Ĕлĕк ĕçхалăхĕ патша чиновникĕсенчен сĕм вăрмана, çырма-шырана тарса пытанса пурăннă. Халĕ çав выртăнсенче çатма пек такăр, социалисăмла çулсем тăватпăр. Ĕлĕк пушă урапапа пыма май пулман çĕрте пайан автомобилпе, трактăрпа кĕрлеттерсе пыратпăр. Совет правитĕлстви: Акă сире трактăр, акă сире автомобил, акă сире çилçуна, глиçĕр, анчах вĕсене çӳреме такăр çул тăвăр, шанчăклă кĕперсем тăвăр, терĕ. Епĕр: „пур!" тесе ответлерĕмĕр те, пĕр харăссăн ĕçе тытăнтăмăр, виçĕ çул хушшинче çулсăрлăха пĕтерсе хутăмăр. Республикăна урлă та пирлĕ такăр çулсемпе, дамбă çулсемпе, чул йе хăйăр сарнă çулсемпе кумса тухрăмăр. Çав çулсем сире, колхоз уй-хирĕсен паттăр, маттур ударникĕсене, Канашран Шупашкара 2—3 сехет хушшинче çитерчĕç. Автобус ăшĕнче кăмака çинчи пек ăшăра ларса килтĕр: çилĕ те вĕрмест, йур тăманĕ те çумасť, сулăнчăка та каймасť.

Çулйĕр строитĕлствипе пирĕн Чăваш республики пĕтĕм Совет сойузĕнче примерлă, кăтартулă республикă пулса тăчĕ. Çулйĕр çинчен калаçнă чухне пирĕн республикăран вĕренме сĕнеççĕ. Аван ĕçленĕшĕн Мускав пире куçса çӳрекен Хĕрлĕ йалав пачĕ.

Ку камăн ĕçĕ? Сирĕн ĕç, йулташсем. Парти организаци тĕрĕс йертсе пынипе тунă ĕç. Тăрăшсан, тĕлĕнтермеле ĕçсем тума пултаратпăр. Ӳркенме кăна йурамасť. Пĕтĕм ĕç хамăртан, тăрăшса ĕçленинчен килет.

С. П. Петров, „Иккĕмĕш пйатилеткăн çуракине боłшевикла иргерер"

## 34 §. Йапала йачĕ тăвакан сыпăксем.

35. Çак текстран иккĕмĕшле йапала йачĕсене çырса илĕр. Иккĕмĕшле йапала йачĕ тăвакан сыпăксене кĕске йĕрпе уйăрса кăтартăр.

Револ̧уцилĕ теорисĕр револ̧уцилĕ йухăм та пулма пултараймасť. Малта тăракан револ̧уцилĕ теори вăл—Маркспа Енгĕлс вĕрентĕвĕ—маркçисăм пулаť. Маркçисăм вĕрентĕвне Ленин татах малала йараť, çĕнĕ тапхăрти ыйтусене кĕртсе çĕнетет.

Пире пур йышши тишкĕрӳ кирлĕ мар. Пире рабочи класăн кул̧турлăхне хăпартакан, увăн хĕрӳлĕхне хăпартакан, ăна чăннипех çĕршывăн хуçи пулса тăма пулăшакан тишкĕрӳ кирлĕ.

*Сталин.*

Сылтăм сулăнчăкпа та, сулахай сулăнчăкпа та кĕрешни—пирĕн парти ӳсĕмĕн пысăк саккунĕ. Колхозник çĕр ĕçĕн тĕп фигурĕ, Совет влаçĕн йалти тĕп шанчăкĕ пулса тăчĕ. Ленинăн пурăнăçĕ—пирĕн парти историн чĕрĕ сăнĕ.

Чăвашсем икĕ пусмăр айĕнче пурăннă. Пĕр йенчен, Раççей улпучĕсемпе капиталисĕсем, патша чиновникĕсем, тепĕр йенчен—чăваш буржуйĕсем, кулакĕсем, пупĕсем, усламçисем, йумăçсем, асамçăсем пусмăрланă. *С. П. Петров.*

36. Ăш, шка, ске, кăн, мăш, ăк, кă, чăк, кăç сыпăклă йапала йачĕсене хăвăртан виçшер сăмах тупса çырăр.

## 36 §. Хал̧хи вăхăт.

37. Текстри ĕçхĕлсем мĕнле хисеприне, хăш сăпатрине кăтартса парăр.

Пирĕн çĕршыв хĕрсех çĕнĕ пурăнăç тăваť. Çĕнĕрен çĕнĕ хаппăрксем, савăтсем лартатпăр. Йалсенче колхозсем тăватпăр. Хамăр пурăнăça хамăр алăсемпе йусатпăр. Йут патшалăхри буржуйсем пирĕн пурăнăç йусанса пынине кураймаççĕ. Вĕсем пирĕн патшалăха тапăнса влаçа каллех буржуйсен аллине парасшăн. Пирĕнпе вăрçă пуçласа йарасшăн тăрăшаççĕ.

Епĕ лашасене йуратса пăхатăп. Есĕ те çавăн пекех пăхатăн: вăхăтра апат паратăн, шăваратăн, çĕрле те ик-виç хут тухса пăхатăн, канма пĕлместĕн. Тепĕри пур—пĕтĕмпех урăхла хăтланаť: вăрттăн кӳлсе кайаť, çул çинче хĕнесе пĕтерет, çитермест, йе вĕриле шăвараť те лашине урасăр туса хураť. Капла йурамасť.

Йепле пурăнатăр? Çулйĕре йепле пăхатăр? Есĕ ху йепле пурăнан? Мĕнле хаçатсем илсе тăратăн? Йулташсем мĕн вулаççĕ?

38. Çак статйана, паллă тунă пĕррелĕ хисепри йапала йачĕсемпе ĕçхĕлсене нумайлă хисепре туса, çырса илĕр.

### Хурçă лаша.

Пурăнăç хытă йухса пыраť. Плуг ĕмĕрĕ те иртет. Çĕнĕ пурăнăç тумашкăн персе çитрĕ хурçă лаша—трактăр.

Мĕн-мĕн кăна тумасť-ши ку трактăр!

Трактăр сухалаť, сÿрелет, акаť, вырать, çапаť, сăвăраť, авăртаť, тата ытгисене те тăваť. Хресченĕн пур йăвăр ĕçне пурне те тăваť.

Трактăра „хурçă лаша“ тесе, ахалех каламаççĕ пулĕ çав.

39. Çакăнти ĕçхĕлсене, пуплев пĕлтерĕшĕсене пăхса, йе пурлă формăлă, йе çуклă формăлă туса çырăр.

### Наборщчик.

Хăй вăл тăр..., пĕрмай тăр...
Кассă умне пуç тай...;
Выђа... алли, сылтăм алли,
Вăђт-вађт сик... саспалли.
Хура тăхлан тусанĕпе
Хурат... вăл аллине,
Саспаллине йуратнипе,
Сис... те хăй ырнине.
Хăй вăл тăр..., пĕрмай тăр...,
Кассă умне пуç тай...;
Умне пăх.., пĕрмай пăх...
Куçĕ тепле йăмăх...
Ир пул... те мĕн каçченех
Ĕçле... вăл! Ĕçле...! Ĕçле...!
Кашни кун кассă умĕнчех
Киввине тек çĕнет... *(Ахт.)*.

### 37 §. Пулас вăхăт.

40. Текстри ĕçхĕлсем мĕнле хисеприне, хăш сăпатрине кăтартса тухăр.

1. Епĕ пĕр-пĕр савăта ĕçлеме кайас тетĕп.—Есĕ кайăн та пирĕн тепле пурăнас вара?—Пурăнăр-ха: вутă пур, колхозра ĕç йăвăр мар. Ĕç çинче киле-киле кайăп тата.—Вара ик-виç çултан пире те илсе кайатăн-и?—Илсе кайатăп.—Йурĕ еппин. 2. Кăранташпа ан çырăр. Курăр ак—йышăнмасť учитĕл. 3. *Ача.* Епĕр социалисăм туса çитерĕпĕр-çитерĕпĕрех. *Амăшĕ.* Есĕр çитерĕр те çав, епĕр унччен пурăнаймăпăр.

4. Тытăпăр алла çил вăйне,
Кÿлĕпĕр ĕçе хĕвеле.
Алтăпăр тĕппĕн çĕр сийне,
Тăвăпăр çу майлăн хĕле.
Еп куратăп—çĕр сăнĕ улшăнаť (*Пет.*).

5. Атăл! Атăл!
Çĕршывăн илемĕ,
Хумлăн-хумлăн
Сикет умăмра.
Камăн чунĕ,
Пăхсассăн, çĕкленмĕ?
Кам çÿçенмĕ
Çак аслă вырăнтан! (*Мит.*).

6. Ак нумайах та каймĕ—пĕтĕм тĕнчипе революци тапранса капитала тымарĕпех кăкласа сирпĕнтерĕ. 7. Ленин йалавĕпе епĕр социалисăм строителствинче татăклă çитĕнӳсем турăмăр. Çав йалавпах епĕр пĕтĕм тĕнчери пролетари революцинче çĕнтерĕпĕр (*Сталин*). 8. Пролетари класĕ йертсе пынипе, Ленин тӳрĕ çулĕпе çитĕпĕр, йулташсем, çутă хĕвеллĕ тĕнчене (*Лаш.*).

41. Текстри ĕçхĕлсем мĕнле вăхăтрине, мĕнле хисеприне, хăш сăпатрине, тата пурлă йе çуклă формăлине кăтартса парăр.

1. Сталин йулташ пулас комунисăм общчĕствине çакăн пек характериçтикă парать:

„Комунисăм общчĕствин анатомине кĕскен илсен, вăл çакăн пек пулса тăмала:

а) Производствă орудийĕсемпе хатĕрĕсем уйрăм харпăрлăх аллинче пуласси пулмасть, общчĕствăлă, коллективлă харпăрлăх пулать.

б) Унта классем те пулмаççĕ, патшалăх влаçĕ те пулмасть, ĕççыннисен ирĕклĕ ассоциацийĕ пулса, економикăна тытса пыракан, индустрипе йалхуçалăхĕн ĕçлĕ çыннисем пулĕç.

в) Унта план тăрăх организациленĕ халăх хуçалăхĕ чи çӳлĕ техникă никĕсĕ çинче тăрĕ.

г) Унта хулапа йал, индустрипе йалхуçалăхĕ хирĕçле тăмĕç.

д) Унта ĕлĕкхи француз комунисĕсем каланă пек: кашни хăйĕн пултарулăхĕ тăрăх ĕçлĕ, продуктсене кашни хăйне кирлĕ таран илсе тăрĕ.

ж) Унта ăслăлăхпа искуствăна май пур таран сарăлса пымали условисем пурте пулĕç.

з) Етем çăкăр татăкĕшĕн тăрмашланассинчен, „тĕнчен вăйлă çыннисен“ кăмăлĕ майлă шутарса пырассинчен хăтăлĕ, вăл чăнчăн ирĕклĕ çын пулĕ, т. ыт. те“.

2. Совет сойузĕ тĕрлĕ патшалăхсемпе пĕр-пĕрне вăрçăпа тапăнмала мар пактсем тăвать. Мĕн вăл пакт тенĕскер? Каганович йулташ ун пирки çапла калать: „Дипломатла каласан, ăна пакт теççĕ, ахаль сăмахпа каласан, ăна çапла калама пулать: Есĕ пирĕн çĕр çине ан кĕр, епĕр сирĕн çĕр çине кĕмĕпĕр. Есĕ пирĕн çĕр çине кĕрсен, сана йанахран паратпăр тени“, тет.

## 38 §. Курса иртнĕ вăхăт.

42. Текстри ĕçхĕлсем мĕнле вăхăтрине, мĕнле хисеприне, хăш сăпатрине каласа парăр.

### б) Пахча çимĕççен тăшманĕсем.

а) Пирĕн шкул пахчинчи çимĕçсем сип-симĕс шăтса тухрĕç. Пăхма та аван. Анчах пахчана чăх-чĕпсем кĕрсе йăрансене пăса пуçларĕç. Кайăксем те пыра-пыра çамрăк калчана сăхса илеççĕ, тымарĕпех чавса кăлараççĕ. Чăхсене чарма пахча картине çӳлĕлетмеле пулчĕ. Тата вылăх-чĕрлĕх кĕресрен шкул картине йĕритавра çирĕплетсе тухрăмăр. Епĕ тата кайăксене хăратма йăран çине хуралçă лартрăм. Тин вара пирĕн йăрансене кайăксем тапăнми пулчĕç.

б) Пйатилеткăна тăватă çулта тултарас тĕлĕшпе промышлĕннăç йенчен мĕнле итогсем пулчĕç? Ку тĕлĕшпе çитĕнӳсем турăмăр-и епĕр? Турăмăр.

Пирĕн хура металлурги, çĕрпыва индустрилес ĕçĕн никĕсĕ, пулман. Вăл халĕ пулса тăчĕ.

Електрицă енергийĕ тăвас тĕлĕшпе епĕр чи кайри выранта тăнă. Халĕ епĕр малти выррăнсенчен пĕрне тухса тăтăмăр...

Çаксем вĕсем пурте çакăн патне илсе пычĕç: пирĕн çĕршыв аграрлă çĕршывран индустрилĕ çĕршыв пулса тăчĕ.

*Сталин.*

43. Текстри хальхи вăхăтри ĕçхĕлсене курса иртнĕ вăхăтри ĕçхĕлсем туса вуласа тухăр.

Рабочи клас, хресченсемпе сойуз тытса, комуниссен партийĕ йертсе пынипе, пролетари диктатурĕ туса хурать. Капиталиссенчен хапрăк-савăтсене, чугун çулсене, рудниксене, банксене, çĕр-улпучĕсенчен, монастырсенчен çĕрсене туртса илет, вĕсене халăх пурлăхĕ тăвать. Интервентсене, шурă бандитсене хăваласа йарать, Совет влаçне çирĕплетет. Çĕршыва индустрилет. Сыхлăх ĕçне тĕреклетет. Çак никĕс çинче йалта колхоз йĕркине те çирĕплетет.

Хресченсен тĕп йышĕ çакна аван ăнланать. Анчах кулаксем, клас тăшманĕсем пролетариат хресченсене йертсе пынине кураймаççĕ: вĕсем хăйсене вилĕм хатĕрленине сисеççĕ. Кулаксем колхозсене хирĕç тăраççĕ, анчах çĕнтерейменççĕ. Хăйсемех пĕтеççĕ.

## 39 §. Курмасăр иртнĕ вăхăт.

44. Çакăнти курмасăр иртнĕ вăхăтри ĕçхĕлсене кăтартса тухăр.

Тăватçĕр çул ĕлĕк пĕр Коперник йатлă вĕреннĕ çын пурăннă. Вăл: Çĕр хĕвел тавра çаврăнать, тесе вĕрентме пуçланă. Пупсем урăхла вĕрентнĕ. Вĕсем: Çĕр пĕр выранта тăрать, хĕвел ун тавра çаврăнать, тесе вĕрентнĕ. Пупсем Коперник вĕрентнине пĕтĕмпех чарса лартнă.

Пĕр çĕр çул иртсен, Галилей йатлă тепĕр вĕреннĕ çын Коперник вĕрентнинех вĕрентме тытăннă. Пуп тавращĕсем ăна тĕрмене хупса лarттарнă та асаплантара пуçланă, ăна хăйсем вĕрентнине йышăнтарасшăн пулнă. Çитмĕл çулхи Галилей тӳсеймен: пупсем хатĕрлесе хунă хут çине алă пуснă, тата пĕтĕм халăх умĕнче чĕркуççи çине тăрса: Çĕр пĕтĕм çутçанталăкăн варри, вăл тапранмасăр тăрать, тенĕ.

Унтан чĕркуççи çинчен тăнă. Тăрсанах хăйĕн сывăх йулташне каланă: „Кирек мĕн тутарсан та, çапах та çĕр çаврăнать“, тенĕ.

45. Текстри курса иртнĕ вăхăтри ĕçхĕлсене курмасăр иртнĕ вăхăтра туса калăр.

а) 1807-мĕш çул, августăн 7-мĕш кунĕнче, пĕтĕм Нйу-Йорк çынни Гудзон шывĕ хĕррине тухса тулнă. Чылайĕшĕ ĕненесшĕн мар пулнă: „Каймасть те каймасть!“ тенĕ.

Пăрахут шăхăртса йачĕ—свисток пачĕ. Вырăнтан тапранчĕ. Урапisем, шапăлтатса çаврăнма тытăнчĕç. Вăл шыва хирĕç тăвала шуса кайрĕ.

Халăх малтанах тĕлĕнсе хытсах кайрĕ. Унтан савăнăçлă çухăрса, алăсем çупса, çыран хĕррипе пăрахут хыççăн чупма

тытăнчĕ. Тата ытларах курса йуласшăн ку тĕлĕнмеле йапала шыв тăрăх чупнине. Анчах... çитме çук. Пăрахут хыгăран хутă кайма тытăнчĕ. Курăнми те пулчĕ.

б) 1931-мĕш çул. Пĕчĕк пуху. Турхан йалĕ. Колхоз организациленĕ те, ăна мĕнле йат парасси çинчен шутласа ларaççĕ. Чылайччен ларнă хыççăн:

— „Партизан“ йат парас, терĕ йалти сарлакарах та çÿлĕ çарă учитлĕ Петров.

— Çук, апла мар,—тесе чарчĕ ăна Мурашкин. Вăл урăхла йат хума шухăшласа хунă пулнă мĕн.

— Мĕнле?—тесе ыйтрĕç сасăсем.

— „Комбинат“,—терĕ вăл пысăккăн. Унтан тата малала калама пуçларĕ.

— Пирĕнтен инçе мар, Çĕмĕрлери гигант комбинат мĕн пысăккĕш сарăлса ÿссе ларчĕ. Вăт савăтпа йаланах епĕр çыхăну тытатпăр. Вĕсем промышлĕннăç таварĕсем тăвaççĕ, епĕр йалхуçалăх продукцийĕсем.

— Чăнах та!

— Тĕрĕс!

— Пирĕн колхоз та комбинат пек пысăк пултăр.

Çакăн пек каласа, Турхан йалĕнче колхоза „Комбинат“ йат парса хăварнăранпа нумай вăхăт та иртмерĕ. Çапах та вăл çак кĕске вăхăтрах пысăк, çĕнтерÿлĕ çитĕнÿсем турĕ.

Паллах, вăл çитĕнÿсем пурте ударлă ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшнипе пулса пычĕç. *Ив. Моиç..*

46. Текстри ĕçхĕлсем мĕнле вăхăтрине, мĕнле хисеприне, хăш сăпатрине кăтартса парăр. Çуклă формăсем пулсан, вĕсене те кăтартса парăр.

а) Ĕлĕк, патша Раççейĕнче, трактăр савăчĕсем пулнă-и? Пулман. Комбайн савăчĕсем пулнă-и? Пулман. Вĕсем çинчен тĕлленмен те. Ку тĕлĕшпе йăлтах çын куçĕнчен пăхнă. Йут патшалăх аероплан паратĭ—аван, памасты—аптрашки.

Ворошилăв йулташ сиесăн делегачĕсене вĕçмели йапаласем тăвакан савăта илсе кайса кăгартнă. Унта вара колхозниксен куçĕсем чарăлса кайнă. Вĕсене унга темĕн тĕрлĕ машинăсем кăтартнă: сывлăшра та вĕçeççĕ, çĕр çинче те чупaççĕ. Епĕр вăрçă хатĕрĕсене, кирлĕ пулсан, хамăрăн хурçăпа тимĕртен, хамăрăн специалиссемпе, хамăрăн рабочисемпе пиг йышлă тума пулгаратпăр.

1929-мĕш çулта империалиссем пире хыпашлакаласа пăхрĕç те. Китайри Хĕвелтухăç чугун çул çинчи конфликта астăватăр пулĕ. Ун чухне пире хирĕç пĕр Китай генералĕсем кăна мар тапăнма пăхрĕç. Китай генералĕсем анчах пулсан, вĕсен пирĕн çине тапăнма вăй, хăйу çитмĕччĕ. Китай генералĕсем хыçĕнче тĕнче империалисĕсем тăнă. Совет сойузĕ, унăн Хĕрлĕ çарĕ мĕнле ха, тен советсем сăмахпа çеç мукtанаççĕ, тен вĕсене çара алăпах илме пулатĭ, тесе шухăшларĕç пулас империалиссем. Хĕрлĕ çар вĕсене хăйĕн вăй-хăватне кăтартрĕ. Кĕскен каласан, Хĕрлĕ çар вĕсене хытă шаккарĕ, тăн кÿртрĕ.

*С. П. Петров.*

б) 31-мĕш ĕçри ку тарăнччен вĕреннĕ ĕçхĕлсен формисене кăтартса тухăр. Вĕсем мĕнле хисеприне, мĕнле вăхăгрине, хăш сăпатрине калăр.

## 40 §. Хаљхи умĕнчи вăхăт.

47. Текстри ĕçхĕлсем мĕнле вăхăтрине, мĕнле хисеприне, хăш сăпатрине каласа парăр.

Кашкăр ĕшни тесе калаттăмăр ĕлĕк, револуциччен, вăл вырăна. Сарăлса ларатчĕ унта Çеливан арманĕ. Майĕпен çаврăнатчĕ арман урапи. Тикĕт пек хура шыв майĕпен йухатчĕ валака. Çĕрĕн-кунĕн кĕмсĕртететчĕ арманĕ. Çĕрĕн-кунĕн арман патĕнче тăратчĕç лавсем. Пурăнатчĕ кунта сарăлса чаплă хуçа Çеливан. Еметчĕ вăл, ерешмен йевĕрлĕ, чухăнпа батракăн, вăтамăн йунне. *Лашман.*

### Гурий Плетњов.

Музăкăна йуратаканскер, Гурий Плетњов кĕсле, тăмра, хуткупăс калама пит ăстаччĕ, урăх пахарах инструмент калама вĕренесси çинчен шухăшламастчĕ. Вăл чухăнччĕ, начар тумланатчĕ, анчах унăн шăмăлă ўчĕ çивĕччĕн хускалкалани мана килĕшетчĕ.

### Петропавлăвск крепăçĕнче.

Пўлĕмри çын мĕн тунине коридорти часовой кирек-хăçан та курма пултаратчĕ. Вăл йуман алăк çинчи шăтăкăн хупăлчине час-часах уçса пăхатчĕ. Ман алăк патнеле упала йăпшăнса пынă вăхăтра унăн аттисем йаланах хытă чакăргагатчĕç. Епĕ часовойпа калаçма пикенкелеттĕм. Анчах шăтăк хупăлчи çавăнтах хупăнса ларатчĕ. Пĕр ик минутран каллех чăкăртатнă сасă илтĕнетчĕ. Пĕр сас-хура та урăх илтĕнместчĕ.

*Кропоткин.*

*
* *

Урăхлаччĕ авал тăван йалăм,
Тек вăрçатчĕ агте манпала
Хăш чухне епĕ ăна калаттăм:
Хĕн-хур пулмĕ,--тесе—малала.

48. Çак пуплевсене, паллă тунă сăмахсене хаљхи умĕнчи вăхăтра туса, çырса илĕр.

Пушă вăхăтра епĕ кĕнеке *вулапăп*, *çыркалатăп*. Ун пек чух есĕ мĕн *тăватăн?* Киноиа *кайатăн-а?* Агăл çине шыва кĕме *çўретĕн-е?*

Пирĕн Анук илемлĕ *ача*. Хăй *хурарах*, пуçĕ *кăтра*. Куçĕ *хура*. Кунĕ-кунĕпе пўртре *чупат*, *выљат*. Хăйех пўрт *тултарат*. Атте, анне, йăмăксем—пурге ăна *йуратпăр*. Хăй те пĕрин, тепĕрин патне пыра-пыра *ыталат*. Темĕнле хытă чĕрелĕскере те хăй йенне *çавăрат*. Пĕчĕк чĕлхе-çăварĕпе çу пек *чĕпĕлтетет*.

## 41 §. Иртнĕ умĕнчи вăхăт.

48. Текстри иртнĕ умĕнчи вăхăтри ĕçхĕлсене кăгартса парăр.

Пурăнатчĕ çапла Ваçça çĕнĕ пурăнăçпахăйĕн пĕчĕк пўртĕнче. Хăйĕн йатне те çырма вĕреннĕччĕ ĕнтĕ. Вунна çитиччен тутарла

та, вырăсла та сума вĕреннĕччĕ. Шкула кайса тата тепĕр тетрат те илсе килнĕччĕ, картинкăлă кĕнеке те илнĕччĕ. Пурăнатчĕ Васса сĕнĕ тĕнчере савăнса, выљаса, вĕренсе, анчах сак хуткăранташ, кĕнеке тытса савăнни унăн нумайа пымарĕ. Васса чирлесе ўкрĕ (*Лаш.*).

Ура сине тăчĕс те—вăрман витĕрех, вар урлă чикĕлĕх каснă просĕкпа утрĕс. Ку чикке пĕлтĕр кĕркуннех каснăччĕ. Вăрман ăсти виç-тăват сул ĕлĕкрех 125 га кăкласа уй тумала акт сырнăччĕ. Малтанах унта Москаран уйрăлса тухас текенсем пулнăччĕ. Пĕр 20 кил ытла хатĕрленнĕччĕ сав „Хула вар" вĕсне куçса ларма (*Пет.*).

Тутăрăма... сухатрăм. Атте анчахрах пасартан илсе килнĕччĕ... Кăвак тĕслĕ, чечеклĕччĕ. Епĕ малтанхи хут сыхнăччĕ, сухатрăм.

*М. Горки.*

## 42 §. Ĕмĕт форми.

50. Ĕсхĕлсем мĕнле вăхăтрине, мĕнле хисеприне, хăш сăпатрине кăтартса парăр.

1. Чипер тасатса сĕрсе хунă пулсан, тутăхмĕччĕ ак вăл (*Ал.*). 2. Ай, манăн та педагогикă техникумне вĕренме кайасчĕ!—Кайăттăм та—КСШ вĕренсе тухмасăр илмессĕ-ха. 4. Сăрт самкисене, сырма-сатрасене сат лартса тухсан, пирĕн сĕршыв сăнĕ те илемленĕччĕ, хусалăхра тупăш та ытларах пулĕччĕ. 5. Есĕ електрицă лампине сĕмĕрсе пăрахман пулсан, епĕр халĕ тĕттĕмре ларман пулăттăмăр. 6. Империалиссем пирĕн сине вăрсăла пит килĕччĕс те, анчах Хĕрлĕ сар вĕсене каллĕ-маллĕ шухăшлаттарат.

*
* *

Машинăсенĕн йурриие
Манăн чунăм йуратрĕ.
Ех, еп хам та пайан кун
Савăт ывăљ пулăттăм.
Ах, станокăм, ай, ан кул:
Сан патнах еп йулăттăм,
Санпалах еп йурлăттăм!

51. Текстри ĕсхĕлсем мени вăхăтрине, мĕнле хисеприне, мĕнле сăпатрине каласа тухăр.

а) Совет правителстви лăпкă саманашăн сине тăрса кĕрешет. Совет сойузĕ пулман пулсан, капиталиссем тахсанах вăрсăпа сыхăнса ўкнĕ пулĕччĕс. Анчах вĕсене вăрсă пусарса йама ССРС чарса тăрат. Женевăра вăрсă хатĕрĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пухăннă конференци текенни пырат. Сак конференцийе темисе сул хушши хатĕрленчĕс. Малтан темĕн вăхăт конференцине усма турткаланса тăчĕс. Унтан конференцийе усрĕс. Вăл усăлни султалăк ытла ĕнтĕ. Анчах вăрсă хатĕрĕсене пĕтерес ĕс пĕр пусăм та малала кайман. Пирĕн делегаци вăрсă хатĕрĕсене йăлтах пĕтермеле тесе ыйту лартрĕ. Ку ыйтăва йышăнмарĕс. *С. П. Петров.*

б) Савăт синчен епĕ нумай илтнĕ. Рабочисен пурăнăсĕ синчен нумай вуланă. Анчах ку таранччен те хам куспа савăта кĕрсе

курманччĕ, рабочисен ĕçĕ мĕн йăвăрăшне хам хулпуççи çинче тайтарса курманччĕ. Халĕ савăта хам килсе, хам куçпа куртăм. Рабочисен ĕçĕ тайăмĕшне хам хулпуççи çине хурса виçсе пăхрăм. Парти, Ленин партийĕ рабочи класа асла хурса хисепленине, революцисенче малти ĕрете тăратнине çирĕп ăнланса илтĕм.

Пирĕн хресченсем хушшинче час-часах:

— Ей, рабочисен пурăнăçĕ мĕн вăл. Кунне 7 сехет анчах ĕçлеççĕ пулин те, шалуне темĕн чул илеççĕ. Есĕ пур, кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек ĕçлетĕн, çемйӳне хĕл каçмалăх та ĕçлейместĕн!— тенине илтме пулатчĕ. Вĕсем ӳпкелешетчĕç, хăйсен ĕçне ылханатчĕç. Çук, пайан апла мар. Пайан чухăнсемпе вăтамсем пĕрлешсе, кулаксене çĕмĕрсе тăкса, ушкăнлă хуçалăхсем туса хучĕç. Трактăрсемпе ĕçлеççĕ. Анчах çапах рабочисемпе колхозниксем хушшинче пысăк уйрăмлăх пур-ха.

## 43 §. Килĕшӳ формисем.

52. Текстри килĕшӳ формипчи ĕçхĕлсене кăтартса парăр.

1. — Еп сана, турă çук тесен, çăпата та хуçса памастăп!—тет аслашшĕ.

— Памăсăн. Еп хам хуçма вĕренетĕп,—тет ачи.

2. — Еп ачана текех пăхмастăп. Ху пăх, анне. Манăн кино курма каймала. Ачана пăхмастăп!—тет Павăл.

— Пăхмăсăн. Акă манăн Таруç луччă пăхат,—тет амăшĕ, тахшинпе калаçса тăраканскер.

3. *Шкул ачисем.* Анне, анне! Епĕр иксĕмĕр те ударлă ĕçлеме çырăнтăмăр! Йурат-и?

*Амăшĕ.* Çырăнăсăр тата, пуççавăрмăшсем!

4. — Ай, ăçта улăхса кайнă! Ӳксе аманан!—тенĕ Верук шăнкăрч йăви лартакан шăллĕне.

— Аманăпин. Вăрçа кайсан пĕрех аманмала, тенĕ лешĕ. (Çакăн пек сăмаха империалисăмла вăрçă вăхăтĕнче час-часах каланă).

5. — Ах, йĕпенетĕрçке ĕнтĕ есĕр!

— Йĕпенĕпĕрин-ха. Типĕпĕр. Çăмăр çунă чух тата йепле пĕртте йĕпенмесĕр.

6. Хăшпĕр колхозниксем иртнĕ çулсенче тулли лавпа та ларса çӳретчĕç...—Ывăнĕçин!—тетчĕç вĕсем лашисене. Хаљ ун пеккисем, колхоз пурлăхне хисеплеменнисем, сахал ĕнтĕ.

* * *

Вуникĕ шăллă урапа
Пĕр йĕр çинчен кусинччĕ.
Кинĕм хастар çын пулинччĕ,
Пĕр ăс çинче тăринччĕ.

Вăрман вигĕр тухнă чух,
Пĕр йăвăça куç хыврăм.
Касса çын—лайăхчĕ,
И, касĕçин касĕç хаљ—
Вăрманта йăвăç пĕтмен хаљ.

Утса-утса пынă чух,
Ура калла шуминччĕ;
Йарăнса-йарăнса ӳснĕ чух,
Пуçăм сайа кайминччĕ.

*Ĕлĕкхи халăх йуррисем.*

* * *

Киле йсе те ларинччĕ часрах çулйĕр ахтăтурĕ! (*Ваç.*). Ӳсеççĕ тигант савăтсем. Буржуй ытларах курайманĕ. Кураймин: пирĕн ĕççынни хăрамасĕ.

## 44 §. Хушулă формăсем.

53. Текстри хушулă формăсем мĕнле хисеприне, мĕнле сăпатрине кăтартса парăр.

*Чакка*: Ак кĕç куланай ый аççĕ каллех —
Пуç сыв пуласса ан кĕт ун чух.
Киле пăрахам та тарам ак халех...
Ак килеç кунга хусах таркăнсем.
Кайам вĕсемпе—ирĕкре çӳрем.

Кăвак утаман хăйпе йунашар
Сĕтел хушшине лартаĕ Чаккана.
—Манран ан хăра, пулле, паллашар,
Тесе вăл хавас пуçлаĕ халапа. (*Елк.*).

— Пире те илĕр... пионера,—терĕ Микул... Виктăр ачасене пăхса çавăрăнчĕ.

— Мĕнле шуглатăр, ачасем, е?
— Илес! —терĕ пĕри.
— Ан вăрçтăр туђккă!—терĕ тепĕри
— Пионерсен саккунĕсене пăхăнтăр!

1 Çул çинчен кайсамччĕ есĕ, хĕрĕм. 2. Пыгангăрччĕ вăл, каласчĕ ăна. 3. Çĕкленсемччĕ, чун-хавал. 4. Ей, тухсам, ĕççынни, тух—йалав чĕнет. 5 Ара, ес те кайса çисем ĕнгĕ, хĕрĕм. 6. Вăт сана помошниксем... Есĕ вĕсене вĕренг, ĕçлегтер, вĕрент,—терĕ маçтăр пирĕн рабочисене (*Çав.*) 7. Чĕнтерем-и çавна? — Чĕнтер (*Тук.*) 8. Шутлă поемăн çунгăр сăмах, хурçăнăн çивчĕ пултăр чĕлхе (*Пет.*). 9. Лайăхрах вĕренĕр. Ăслăлăхăн тĕп никĕсне çĕнсе илĕр! 10. Ăслăлăхпа техникăва, куђтурăн мĕн пур çитĕнĕвĕсене социалисăм тăвас ĕçе пăхăнтарар.

Револђуцилĕ клас сисĕмне вăйлагар! Пионер, рабочи клас ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр пул! Вăрçа хирĕç пухăннă пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конгресĕ сывă пултăр! Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

---

Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр!
Пирĕн вăй вăл, пирĕн ирĕк, пирĕн влаç.
Пур вăйранах, комунарсем, кĕрешĕр,
Тăшмана хĕрхенмешкĕн йурамасĕ.

Ĕççыннисем, хĕç пăшал хађ алла илĕр,
Тăпăлгарар палачсене тĕпренех,

Тĕнчипех, пролетарисем, пĕрлешĕр.
Çĕнтерĕр те, хĕвел пăхĕ хĕрӳрех.

---

„Пур савăт, хусканăр!
Пĕр харăс пуçтарнăр.
Тухăр çапăçмашкăн,
Вăрçмашкăн, вăрçмашкăн.

Пăшал авăрла,
Ес тĕлле лайăхрах.
Кĕреш, пролетари,
Ĕçӳшĕн хăвах".

*„Трактăр"*.

---

54. Çак пуплевсене, ĕçхĕлсене, хушу формине, тата, кирлĕ вырăнта, йапала йачĕсене те нумайлă хисепре туса, çырса илĕр. Сăпачĕсене ан улăштарăр.

Совет çĕршывĕн сыхлăхне çирĕплет
Тунă йăнăшсене тӳрлетме пĕл.
Рабочи клас ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр пул.
Хăйулă пулам, сыхă тăрам
Ударнике çырăнам, ĕçе вăхăтра тăвам.
Таса пурăнам, сывлăха çирĕплетем.
Тĕн тĕшмĕшĕ пăчлантăр.
Пĕтĕм тĕнчери рабочи сывă пултăр.
Наукă сарăлса пытăр,
Социалисăм ситĕнĕвĕн хăвăртлăхĕсене ӳстергĕр.
Актив ытларах уçăлă сĕнӳ тугăр.
Пĕлĕт çинче аероплан вĕçтĕр,
Шыв айĕнче шызай кимми иштĕр.

## ĔÇХĔЛСЕНЕ ВĔРЕННИНЕ ÇИРĔПЛЕТНИ.

55. Текстри ĕçхĕлсем мĕнле вăхăтрине, мĕнле хисеприне, хăш сăпатрине каласа парăр.

1. Пит нумай пулат, çав тери нумай, астуса илме те хĕн. Епĕ ун чухне çирĕм пĕр çула кайнăччĕ. Сирĕн аçусем ун чухне урам тăрăх лашала вылйаса çӳретчĕç.

Çак именире кийаç пурăнатчĕ. Тискер çынччĕ вăл. Иминичен, кайăка кайассисĕр пуçне, ниçта та тухмастчĕ. Крепăсла çынсене вăл питĕ хытă тытатчĕ. Епĕр унăн аллинче пулнă. Вăл пирĕнпе мĕн тăвас тенĕ, çавна тунă. Вăл питĕ нумай çынна лутăркаса, амантса пĕтерчĕ. Вилес патне çитиччен саламатпа хĕнеттеретчĕ. Тата хăшне-хăшне йăтăсемпе ĕскĕртсе пĕтеретчĕ. Нумайĕшĕсем вăрмансене кайса пытанчĕç. Унта вĕсем, вăрă-хурах туса, тăранса пурăнатчĕç. Епĕр ун патĕнче ернере улттăр кун ĕçлеттĕмĕр.

### Ă с а т у.

Пионер клубне мана
Ăсатнă чух,
Мĕн пур кӳршĕ карчăксем
Пухăнчĕçĕ.
„Ăçта кайан ес, ачам,
Ăçта кайан?
Пионер клубне кайан,
Усал çурта.
Вăл клуб пирĕн кăмăла
Пĕртте каймаст:

Унта çамрăк пухăнаť—
Чăрсăр халăх.
Мĕн курман есĕ унта?
Мĕншĕн кайан?
Чиркĕве кайасчĕ сан,
Кĕлтăвасчĕ.
Ӳсĕнччĕ есĕ, ачам,
Лăпкă пулса.
Ирттерĕнччĕ ĕмĕрне
Ӳпкелевсĕр“.
Карчăксен сăмахсене
Еп итлерĕм,
Вĕсене хирĕç çапла
Еп каларăм:
„Пионер хĕрлĕ клубĕ
Пирĕн ĕç вăл;
Уншăн епĕр тăрăпăр
Кăкăрсемпе,
Турă райĕ пирĕншĕн—
Суйа сăмах;
Çĕр çинче хамăра рай
Тăвăпăр-ха.
Пире телей турăсем
Параймĕçĕ,
Хамăр алăсем анчах
Пулăшĕçĕ.
Комунăпа пурăнма
Вĕрентĕçĕ,
Вара пирĕн пурăнăç,
Чаплă пулĕ“.

---

— Ну, хĕрсем, пуçлăр йурă!
— Пуçла ху. Мĕн çынна тархаслатăн!
— Пуçлама пĕлеп пулсан, сирĕнтен ыйтса та тăмăттăм.
— Чăнах та йурлăр, хĕрсем. Мĕн тархаслаттаратăр тата!
Антун майлă тата тепĕр хĕрача пулчĕ. Кăшт тăрсан, чăнах та йурă пуçланчĕ:

Йуратсах пайан ĕçлерĕм
Епĕ колхозăн хирĕнче, хирĕнче...

— Вот! кăшкăрчĕ Антун.
Анчах ун сасси пуçланнă йурра çĕнтереймерĕ. Темиçе сасă пĕрле пулса, йурă çийеле тухрĕ. Илемлĕ йурă йанраса, шăранса катана, катана саланаť. Илтет ăна ĕçхалăхĕ. Илтет уй-хир, кĕççеленнĕ улăх, йем-йешĕл, илемлĕ, симĕс тумлă вăрман. Савăнаť хавасланаť унпа пĕрле мĕн пур чĕрĕ чун.
Çавăн пек хавасланса вырнипе вĕсем хăйсен ĕçĕсене манмаççĕ. Вĕсен пĕр ĕçкунлĕх 150 кĕлте вырмала пулсан, нумайĕшĕ 200 кĕлтене çитереççĕ. Ир вăхăтра ĕçе тухнă çын пĕри те 150 кĕлтене çитерменни çук. (*Ив. Моиç.*).

## 45 §. Ĕçхĕлсене тăвакан сыпăксем.

56. Çак сăмахсенчен иккĕмĕшле ĕçхĕлсем туса парăр.

Шухăш, сăмах, пуç, тĕвĕ, вĕрен, организаци.
Пăр, йун, пыл, чипер, иккĕ, шик, хур.
Йĕпе, типĕ, сивĕ, ăшă, кăвак, çывăх, йешĕл.
Çĕнĕ, шурă, сарă, çутă, йака, таса, хĕрлĕ.
Ах, нăй, чик, пăшăл, йăлтăр, шалтăр.
Çур, сир, кас, тăс, çĕт, тат, çĕмĕр, сар, уç.

57. Çак ĕçхĕлсене çакăн пек тăвата пайа уйăрса çырса илĕр: тавăрăну ĕçхĕлĕсем, темиçе хут пулу ĕçхĕлĕсем, тутарттару ĕçхĕлĕсем, хире-хирĕç ĕçхĕлĕсем. Çырса илнĕ чух сыпăкĕсене кĕске йĕрпе уйăрăр.

Çырăн, çыхăн, тытăн, парăн, тутар, вулаттар, çыртар, çыхтар, çыркала, çыхкала, тыткала, тыттар, сутлаш, тавлаш, тупăш, тупăн, шыраттар, кăларттар, ӳкеркеле, ӳкерттер, тапăн, тапкала,

таптар, пăрăн, пăркала, пăртар, хир, хирĕн, хиркеле, хирĕç, çапăн, çапкала, çаптар, çапăç, кĕреш, кĕрĕш, килĕш.

58. Çак ĕçхĕлсенче мĕнле-мĕнле сыпăксем тĕл пулнине кăтартса парăр.

Çырăнкала, çыртаркала, тавлашкала, тавлаштар, сăмахлантаркала, шиклентеркеле, тасалкала, сыхланкала, тугарттар, вăйлантар, пĕтĕçтер, парăнтаркала.

## 47 §. Çумсем.

59. а) Текстри çум пулакан сăмахпа çум йышăнакан сăмахсене çырса илĕр. Çумсене айалтан тӳрĕ йĕрпе туртăр, çум йышăнаканнисене кукăр йĕрпе туртăр.

1. Хĕвел хытă хĕртет. Час-часах ăшă çăмăр çăвать. Çăра, хурасимĕс сăнлă калчасам хăвăрт, тикĕс ӳссе хăпараççĕ. 2. Хастарлăхăм кирлĕ çĕнĕ пурăнăç тума. 3. Кĕрле, çĕнĕ савăт, йанра, хурçă сасă! 4. Çĕнĕ пурăнăç тума пур ĕçхалăхне те Аслă Октябĕр пысăк ирĕк пачĕ. 5. Пайанхи кун епĕр, вунпилĕк çул хушшинчи ӳсĕмсене хисепе илсе, малашнехи пурăнăç çулне хăватлăн палăртса хуратпăр.

б) Пуплевсем çырса парăр. Çав пуплевсенче „ăслă“, „аван“, „хитре“, „сапсарă“ сăмахсем йапала йачĕ çумĕ те, ĕçхĕл çумĕ те пулччăр.

## 48 §. Паллă йачĕсен уйрăмлăхĕпе вĕсен пĕлтерĕшĕсем.

60. Текстри паллă йачĕсене кăтартса тухăр. Вĕсен пĕлтерĕшĕсене, ыйтăвĕсене калăр.

Çулĕ такăр,
Каçĕ çутă,
Тулли уйăх кулкалать.
Йĕс таканлă
Тимĕр утăм
Вĕттĕн-вĕттĕн йурткалать.

1. Çак кĕске вăхăтрах ачасен выртмари пурăнăçĕ йалтах урăхланчĕ. Выртмари пурăнăç хаъ пĕртте пĕлтĕрхи, виçĕм çулхи пек мар (*Аг.*) 2. Катрашкалă тĕтре тăрăх шуса пырать çутă уйăх. Салху выртакан уçланкă çине хуйхăлă ӳкерет çуттине. Хĕллехи салху çулсем тăрăх ыткăнса йуртать виç лаша. Пĕр сасăлă шăнкăрав халтан йарать сассипе. Йамшăк тăсăмлă йурă йурлать, йурри чĕренех пырса тивет (*А. Пушкин*). 3. Çурçĕр Кавказ крайĕнчи Ростов районĕнче вуник çулхи пионер Митă Гордийенко колхоз тыррине вăрлакансене тытнă (*Митр.*).

Умра акă пĕчченлĕ масар —
Выртать пĕр йатсăр комиссар...
— Çук, çук,
Ес йатсăр мар:
Ес пирĕншĕн—
Сӳнми кăвар... (*Мит.*)

## 49 §. Паллӑ йачӗсен пуҫламӗш формипе вӑйлӑ форми. 50 §. Паллӑ йачӗсен танлаштару форми. 51 §. Паллӑ йачӗ тӑвакан сыпӑксем.

61. Текстри паллӑ йачӗсен пуҫламӗш формине, вӑйлӑ формине, танлаштару формине кӑтартса тухӑр. Вӑл формӑсем мӗнле пулнине калӑр.

1. Ҫулахи ӗҫсене уйра та, фермӑ участкинче те пӗтерне. Халӗ кӗрхи суха тӑвасси чи кирлӗ ӗҫ пулса тӑрат. 2. Ытла та усалччӗ ун ашшӗ. Манӑн чип-чипер аппана ҫавӑн ашшӗ ҫирӗ, шӑпӑрлан, тенӗ мулкач ҫурисенчен пӗри, кашкӑр ҫурине курсан. 3. Кӗрен лаша йухса йуртат (*Ухсай Й.*). 4. Ак Ишлӗкасси йалӗ. Ак ун пӗчӗк, лутрарах, улӑм калпак тӑхӑнса ларнӑ ҫурчӗсем. Ҫак йалӑн анатала анакан урамӗпе утса пынӑ ҫӗртех пӗр пӗчӗкрех ҫаврашка питлӗ, пӑтӑр-пӑтӑр кӑтрарах, сарӑрах сухаллӑ ударник, Пучков, чӗлӗмне паклаттарса, пӗр пӗчӗк пӳртрен пире хирӗҫ тухрӗ (*Ив. М.*). 5. Ех, ыраш! Вӑрӑм, йаштака кӗлеткелӗ ҫынран та ҫӳлӗ. Ирхи ҫанталӑкӑн лӑплӑхӗпе ачашланат вӑл. Чӑшӑртатаҫҫӗ ун ҫӗреле усӑннӑ пӗр шит тӑрӑшшӗ йӑвӑр пуҫахӗсем. 6. Парти хушнисене пурӑнӑҫа кӗртессишӗн пӗтӗм ҫамрӑк вӑй ҫитнӗ таран ӗҫлетпӗр (*Сӳп.*). Сарӑ-сарӑ чечексем илемлетрӗҫ улӑха, шурӑ-шурӑ чечексем сӑн пачӗҫӗ ҫарана. 6. Митӑ Гордийенко социалисӑмла пурлӑха сыхлас ӗҫе ӑнланса, геройла, кӑтартулӑ, чӑн-чӑнах пионерла ӗҫ турӗ (*Митр.*). 7. Тусем, сӑртсем хупхура, йурӗ кайса пӗтнӗрен; тухат курӑк ҫӑп-ҫӑра, хӗвел хытӑ хӗртнӗрен (*К. Ив.*). 8. Ех, аванҫке уйра! Лӑпкӑ, ӑшӑ. Кӗҫ-вӗҫ инҫетри тусем хыҫне тарса пытанас пек тӑракан хӗвел, уйри сип-симӗс калчасен тӑррисене кӑштах кӗрен тӗс парса, калама ҫук илемлетет. Нихӑҫан ывӑнма пӗлмен тӑрисем тӑ ҫта ҫӳлте, йанк уйар пӗлӗтре, йуррисене шӑрантараҫҫӗ (*Аг.*). Хӑрушӑ самана пулнӑ ун чухне. Чӑваш чухӑнпа вӑтам хресчене капитал сӑнчӑрӗ калама ҫук хайар кушара тытса усранӑ (*Сп.*). Ӗлӗкхи вак-тӗвек предприйатисем выраӑнне Чӑваш республикинче темӗн пек пысӑк гигантсем ӗҫлеҫҫӗ (*Сп.*). Совет сойузӗнче рабочисемпе хресченсем историре нихҫан пулман чаплӑ, калама ҫук паттӑрлӑ ӗҫсем тӑваҫҫӗ. Ҫак пысӑкран та пысӑк строительствӑ ӗҫӗсене клас тӑшманӗ йаланах хирӗҫ тӑрат (*Сп.*).

## 51 §. Пайташсем.

62. Текстри пайташсене кӑтартса тухӑр, вӗсем мӗнле вӑхӑта пӗлтернине калӑр. Ҫырса илнӗ чухне, пайташсем ҫине кӗскенӗн вӗсем мӗне пӗлтернине ҫырӑр: х. в.—хальхи вӑхӑт, ир. в.—иртнӗ вӑхӑт п. в.—пулас вӑхӑт, т. п.—тумалине пӗлтерни.

1. Пусмӑрпа тӗн танатинче пӑчланса, асапланса пурӑннӑ рабочи клас ирӗке тухрӗ, вӑрҫӑсемпе, выҫлӑхсемпе суранланса йулнӑ хуҫалӑха йусама тытӑнчӗ. Халӗ вӑл ку таранччен историре пулман хӑвӑртлӑхсемпе социалисӑм тӑват. 2. Ӗмӗртенпе ним усӑсӑр йухса выртакан пысӑк Волхов, Днепр шывӗсене пӗвелесе, вӑйлӑ електрицӑ станцисем тӑватпӑр. Унта та кунта тимӗр-тӑмӑр ӗҫлекен пысӑк савӑтсем туха тухса лараҫҫӗ. 3. Вӑтампа чухӑн хресченсем уйрӑм, сапаланчӑк хуҫалӑх йӗркине пӑрахса, ушкӑнпа, машинӑпа ӗҫлекен хуҫалӑха куҫаҫҫӗ. Епӗр тунӑ ӗҫсенчен пирӗн

тăшмансем те тĕлĕнеççĕ, анчах пирĕн тумали тата нумай. 4. Тарăна кайнă кризиспе чĕтренсе тăракан капиталисăм тĕнчи пирĕн ўсĕмсенчен хăраса тăрать, социалисăм тăвакан Совет сойузне хирĕç вăрçа хатĕрленет. 5. Анчах пирĕн çĕнтерўлĕ вăрçăсенче çирĕпленсе çитнĕ Хĕрлĕ çар хатĕр тăрать, тата капиталиссене хăйсен револјуци çулĕ çине тăнă, кунран кун ўссе пыракан пролетариачĕ те хăратать. 6. Ленин йалавĕпе, коммуниссен партийĕ тĕрĕç йертсе пынипе, епĕр пĕтĕм тĕнчипе пулас пролетари револјуцинче те çĕнтĕрĕпĕр. Пĕтĕм тĕнчипе пулас Октăбĕр хăвăртрах çиттĕр. 7. Кĕрешўре ĕçлекенсем çĕнтереççех, мĕншĕн тесен буржуази халăхăн ытла та пĕчĕк пайĕ анчах пулса тăрать (*Ленин*).

63. Пуплевсене çырса илĕр. Пăнчăсем вырăнне, пĕлтерĕшне пăхса, пайташ сыпăкĕсенчен пĕрне лартăр.

Анаткасри колхоз çамрăкĕсен шкулĕнче вĕрен... ачасен пухăвĕнче йышăн... протоколран. *Итлене*: Турăсăрсен йачейки председатĕлĕн отчотне. *Йышăн...*: 1. Йачейкă туса иртер... ĕççене ырăлас. 2. Малашне пурнĕн те тĕн тĕшмĕшĕсемпе кĕреш... 3. Тĕнпе кĕреш .. „Безбожник" журнала малала та илсе тăр... 4. Килтисем хушшинче турра ĕнен... сем пулсан, вĕсене тĕн суйине, сийенлĕхне ăнлантарма тăрăш...

Кашни кун темиçе çĕр трактăр, комбайн кăлар... савăтсем ĕçлеççĕ. Граждăн вăрçи вăхăтĕнче, выçлăх çулсенче пул... сурансене пурне те тўрлетрĕмĕр. Колхозсем туни—Ленин партийĕ кăтарт... çулпа пыни. Вăрлăха срукра ак... Вăрлăха малтан тасат... Аксан сўре... çум курăкĕсене пĕтерсе пы... 3. Кил таврашĕнче кĕл пул... çĕре çĕнет... йапаласемпе пуринпе те усă курар.

## 54 §. Виççĕмĕш сăпат сыпăкĕпе с к е р сыпăка йышăннă формăсем.

64. Виççĕмĕш сăпат сыпăкне, тата скер сыпăка йышăннă паллă йачĕсене йе пайташсене кăтартăр. Вĕсем мĕнле хисеприне, мĕнле вĕçлевре не, мĕнле вăхăтрине (пайташсем пулсан) кăтартăр.

1. Пĕве пĕвелеççĕ. Пĕвелеме килнисенчен хăшĕ: „Çук, ку пĕвене тем чул тăрăшсан та, çуракиччен пĕтересси пулас çук, тенĕччĕ пайанччен. Пайан вĕсен вăй-хал пĕтĕмпех хăпарса кайрĕ йыш хушăннипе. Пайан курма та нумай аннă. Ўсĕртереххисем те килсе курса кайаççĕ. Курма килнисем хăшĕ ĕненмеççĕ те пулĕ. Анчах ĕç умрах пайан, тунсан та тунма çук. Йыш тытăнни пулатех. 2. Пуçтарăнаççĕ пур маттур: сарри, хури — пурте пур. Çынсем, шала йулнисем, тĕлĕнсе хытса кайнăскерсем, пĕрне-пĕри куçран пăхса илчĕç. 3. Манăн икĕ йулташ: пĕри Ваççа, пилĕк çултанпа тăлăх ўснĕскер, килĕнчен вуннăра чух тарнăскер; тепĕри поладак хĕрĕ Анна, Мускавра артистсен шкулĕнче вĕреннĕскер. 4. Шереметсем! есĕр мар-и çав вĕçĕ хĕррисĕр тĕнчене хăвăра пăхăнтарас текенскерсем! —Ийа, епĕр тĕнчене пăхăнтаратпăр текенскерсем. Пăхăнтарăпăр та. 5. Пулса çитнĕ ыраш уйĕ, ылттăн пек сап-сарăскер, тинĕсри пек хумханать. 6. Çул урлă сукмаксем) пўкле çўремелисем, каçа-каçа кайаççĕ. 7. Сирĕн, Хĕрлĕ çара кайасскерсен, ăса-пуçаваскасах çивчĕлетмеле. 8. Ĕлĕк ĕçлекенни пĕри пулнă, çийекенни тепри пулнă. 9. Чĕрĕ Совет çĕрĕ хăвăрт çитĕнни, унта çĕнĕ пурăнăç хытă çĕкленни капитал тĕнчин чунне

хускатаТ. 10. Ачасем пĕр минут хушшинче йĕркеленсе тăчĕç. Салтаксенчен пĕртте кайа мар: пысăкраххисем сылтăмра, пĕчĕккисем сулахайра (*Агак.*). 11. Епĕр çавнашкал пысăк угăмсемпе ӳссе пыни комуниссен партин тĕп çулйĕрĕ ĕçе тĕрĕс йертсе пынинчен килет (*Сп.*). 12. Ворошилăв йулташ, т. ыт. хĕрлĕ командирсем йертсе пынипе, пирĕн Хĕрлĕ çар шуррисене, симĕссисене, т. ыт. пĕтĕмпех çĕмĕрсе такрĕ. Хăрама пĕлменскер, Ворошилăв йулташ вăрçăра самăй хăрушă вырăнсенче пулнă. Вăл хăйули, хăраманни хĕрлĕ салтаксен хастарлăхне хăпартса пынă.

## 55 §. Ĕçхĕл çумĕсем. 56 §. Ĕçхĕл çумĕсен пулăвĕ.

65. Ĕçхĕл çумĕсене кăтартса тухăр. Вĕсем йепле пулнине асăрхăр.

1. ПеТанăн куçĕсем йăлтăрах çуталчĕç. Тути илемлĕн кулса илчĕ. Йăпăр-йапăр шыв ăсса кĕртсе лартрĕ те, сăхманне çакса йарса, сиккипе шкулала вĕçтерчĕ. 2. Татах çапаТчĕ, аран тарса хăтăлтăм, тесе аллисене чăмăртаса, алăкăн-тĕпелĕн уткаласа çавăрăнчĕ Петĕр (*Чал.*). 3. Тĕлĕ-тĕлĕпе шыв типсе çитрĕ. Çарăмсан çинче çап-çутă пăр йăлтăртатса выртаТ (*Тук.*). 4. Лашасем пăвансенчен ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ. 5. Çапла вара вĕсен урапи кутăн-пуçăн, ӳпне-питне, чикĕм-чакăм çĕр сирпĕтсе, кустăрмисем хăй тĕллĕн, туртисем хăй тĕллĕн, михĕсем хăй тĕллĕн çырма тĕпне çитрĕç (*Сӳп.*). 6. Çĕршерĕн, пиншерĕн, çĕршер пинĕн тĕрлĕ машинăсем çак савăтран тухса Совет уй-хирĕсене тултарĕç. 7. Фермă, пĕрре урараи ӳкнĕскер, каллех уралана пуçларĕ. 8. Кунĕн-çĕрĕн ывăнмасăр ĕçлеççĕ. Хастарлăх пур. Хуллен пулин те, пĕве хăпарса пыраТ. 9. Талккишĕпех колхоза куçар. Кулака тĕппипех пĕтерер. Колхозсенче ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пырар. 10. Йăвашшăн та, хайаррăн та, хăрушшăн та туллашаТ вичкĕн çил (*Тук.*). 12. Епĕр йăпăр-йапăр кĕреçесем илсе тăпрасене ывăтма тытăнтăмăр (*Çав.*)13. Вырăна ларнă-ларманах пире апат пырса пачĕç (*Çав.*). 14. Çитĕ!.. Нумай чăтса ларнă!.. Чăваш ĕççынни, есĕ тек чура мар, çултан çула чаплăн чысла уйавна! (*Елк.*). 15. Ирсерен физкультурă вăййи туни сывлăха çирĕплетет. 16. Пионерсем пĕр минута та ахаль сухатмаççĕ (*Сӳп.*). 17. Тĕппипех улшăннă поçолкă пурăнăçĕ... Хĕрарăмсем те тăтăшах çӳреме пуçларĕç Совета. 18. Иртен илсе каçченех шаккаТ ват тимĕрçĕ (*Тук.*). 19. Конюхсем ĕнтĕ паçăрах лашасене шăварса сĕлĕ парса тухрĕç (*Пач.*). 20. Ирхине, кăнтăрла, çĕрле мăн шыв пăрахмасТ ĕçе (*Ахт.*). 21. Пионер организаци ĕçĕн кашни çĕнĕ тапхăрĕ рабочи класăн кĕрешĕвĕпе, тата унăн çĕнтерĕвĕсемпе йаланах тачă çыхăнса тăраТ (*Йак.*). 22. Капиталисла патшалăхсенче ачасене експлоатацилесси халĕ тата ытларах сарăлса пыраТ (*Йак.*). 23. Суту-илӳ хуçисемпе хапрăк-савăт хуçисем вальли (çĕр улпучĕсем вальли ĕçленинчен) тăрăшарах ĕçленĕ. Хамăр вальли пирĕн тата тăрăшарах, тата лайăхрах ĕçлес пулаТ (*Ленин*).

## 57 §. Ĕçхĕлтешсем.

66. Текстри ĕçхĕлтешсене кăтартса тухăр. Вĕсен пĕлтерĕшĕсене, вĕсем йепле пулнине асăрхăр.

1. Хĕвел кулса тухрĕ. 2. Ик бригадă кĕлтене ăмăртсах вĕт çыхса тухрĕç. 3. Утсем, уй-хир ирĕкĕпе савăнса пулас, хăйсемех

çилхисене чарса, сиккипех тапрана-тапрана кайаççĕ. хыççăн тăпра муклашкисем ут таканĕсем çумĕнчен сирпĕне-сирпĕне пыраççĕ. Вăрмана çитесне çул тачкалана пуçларĕ: ут урисем тачка хура тăпра ăшне йăвăрăн пута-пута анаççĕ.

4. Йăлтăртатать сар хĕвел,
Кунран кунах ăшăтать.
Сисмесĕрех сивĕ хĕл
Çур ăшшине парăнать.

5. Кулса тăнă йеверлĕ,
Перне пĕри хăваласа,
Пыра-пыра капланса,
Кĕперленсе кĕрлесе,
Йалтăр-йалтăр куранса,
Çырмасенче пăр кайать. (*Шел.*).

6. Выртмара лашасене тăлласа, шăнкăрав çака-çака йараççĕ. Çĕр каçиччен таçта та каймалах пур вĕт. Тăлласа, шăнкăравсем çакса йарсан—шанчăклă, часах тупма пулат (*Аг.*). 7. Кĕркунне, вĕренме пуçласанах, кунсем ăшаччĕ. Ваçук шкула пĕр сиктермесĕр çÿретчĕ. Сивĕсем çитсен, Ваçук шкула çÿреме пăрахрĕ. Тумтир çелесе париччен çÿреймерĕ. Çĕлесе парсан, каллах çÿре пуçларĕ. 8. Епĕ хулана каймассерен кинона кĕретĕп, хуларан тавранмассерен кĕнекесем илсе килетĕп. 9. Кĕнекесем хума епĕ хутаç çĕлеттертĕм, каранташсем хума коробка турăм.

67. Пуплевсем çырса парăр. Çав пуплевсенче иччен, сассăн, маçсерен, са, ма, машкăн сыпăклă ĕçхĕлтешсем пулччăр.

**58 §. Сум йачĕсен уйрăмĕсемпе вĕсен пĕлтерĕшĕ. 59 §. Шут сумĕсен пулавĕ. 60 §. Йĕрке сумĕсен, валеçÿ сумĕсен пулавĕ. 61 §. Сумсем сапат сыпакĕсене йышанни.**

68. Çак чыхвăрсемпе çырнă сумсене сăмахпа çырса парăр.

6, 17, 17 литр, 8, 81, 81 центнĕр, 215, 2215, 30189, 2000284, $^{5}/_{8}$, $3^{3}/_{5}$, 0,15.

69. Текстри сумсем мĕне пĕлтернине кăтартса парăр: шут сумĕ, йĕрке сумĕ, валеçÿ сумĕ. Ирекле сумсем пулсан, весем мĕнле вĕçлеврине калăр.

| | |
|---|---|
| 1. Пĕр бригадăн | „Пилĕкшер çĕр |
| Хĕрĕх çын — | Кĕлте çых" — |
| Пурте хавасланнă. | Çавăн пек лозунг панă. |

2. Хĕвел анас умĕн бригадир кам миçе кĕлте çыхнине шуга илсе çÿрет. Пилĕкшер келтепе тунă тĕмсене шутласа илет те, хайĕн хыт хупăлă кĕнеки çине паллă туса хурат:

Сарра Марйе 550 келте çыхна; Рукавишникавă—500; Мурашкина—530; Симесава—450; Муравйова—509; Шукайĕва—400 келте. 350 кĕлтерен кайа çыхакансем сахал. Çукпа пĕрех. Хушăран çеç ир ирех тухманнисен 250 келте тесе çыранать (*Ив. М.*) 3. Ленин пин те сакăрçĕр çитмелмĕш çулта апрелĕн 22-мĕшĕнче çуралнă. 4. Октабĕр револуцийĕ пин те тахăрçĕр вунçиччĕмĕш çулта октаберĕн 25-мешенче, çĕнĕ çтилпе, нойаберен 7-мĕшенче пулнă. 5. Вăтам шкулра вĕрене-

кенсен хисепĕ 1928 çулхи мĕлйун та ултçĕр пинтен 1932-мĕш çулта тăватă мĕлйун та виççĕр аллă пине çитнĕ. 6. Пĕрремĕш пилĕкçуллăхра промышлĕннăçа 23 миллиард та 300 мĕлйун тенкĕ укçа хывнă. Вĕсенчен 20 миллиардне шултăра промышлĕннăçа хывнă. 20 миллиардран 3 миллиард та çуррине машинăсем тăвакан промышлĕннăçа хывнă. 7. 1928-мĕш çулта йалти кино Чăваш республикинче 11 пулнă; 1932-мĕш çулта йалти киносен шучĕ çитмĕл пиллĕке çитнĕ. 8. Иккĕмĕш пйатилеткăн иккĕмĕш çуракине большевикла иртерер. 9. 250—пинĕн чĕрĕкĕ. Сакăрçĕртен çитмĕл пиллĕк кăларсан, çичçĕр çирĕм пиллĕк йулаť. Çĕрпе сакăрвуннă хушши—çирĕм. Вăтăрта—ултă пиллĕк, çирĕмре—тăвату пиллĕк.

## 64 §. Ылмаш уйрăмĕсемпе вĕсен пĕлтерĕшĕсем. 65 §. Ылмашсен пуплеври вырăнĕ. 66 §. Ылмашсем вĕçленни.

**70. Текстри ылмашсем хăш уйрăма кĕнине, мĕнле хисеприне, мĕнле вĕçлеврине кăтартса парăр.**

1. Пĕрре, шкултан таврăнсан, Пеťа пĕчĕк витрепе урамри çăла шыв ăсма тухрĕ. Çав çăл патĕнче кўршĕ арăмĕ те шыв ăсса тăраť.

— Пăх-ха, лешĕ вăрман касса килет,—терĕ вăл Пеťана, аналла кăтартса.

Чăнах, анат йенчен Уксак Маркка, йал хуралçи, пĕр çыхă турат çĕклесе хăпараť.

— Ăçта тупрăн ку икерчĕ вуттине?—тесе ыйтрĕ хĕрарăм, вăл çăл тĕлнеле çитсен.

— Тупатăп епĕ,—терĕ лешĕ:—хуллен кăштăртатса çўресех тупатăп. Киремет лупашкинчи йумансене иртрĕм. Ахалех сайа кайса лараççĕ вĕт. Кама кирлĕ вăл? Мана—пыраť (*Аг.*).

2.— Акă мĕн,—терĕ Виктăр, ачасем каллех уçланкăна хăпарса вут патне пырсан.—Çакăн пек аташни вăл ниме йурăхсăр йапала. Ниме йурăхсăр... Тем курма пулаť, капла хăтлансан. Пыраť, Унтрейĕн алли хуçăлман. Çакнашкал тĕмескесем урлă сĕтĕрнĕ чух, пĕтĕмпе суранланса пĕтме пулаť.

— Унашкаллисем пулкаланă вĕт,—терĕ Антун.

— Пулмасăр. Темĕн те пулма пултараť. Пĕтерес пулаť вырттмари ун пек киревсĕр йăласене. Тахçантанпах пуçланса кайнă та вĕсем, халĕ те пĕтмеççĕ-ха. Кама усă вĕсенчен? Сийен кăна.

— Ку тĕрĕс!—терĕç ачасем (*Аг.*).

* * *

1. Михал шухăша кайнă: çемйи вĕсен пысăк, пурте вĕтĕ-шакă, чи пысăкки—вăл хăй. 2. Хăй йулташне Карпухина курнă, вăл унран пĕр çул çамрăк. 3. Ташкента кайăпăр, тăраниччен çийе пуçлăпăр. Сахал пулсан, епĕ сана хамăн тўпене парăп. Епĕ сана хĕрхенместĕп-и вара? Ав манăн хутаçра курăкран тунă çăкăр татăкĕ пур. 4. Ăçта санăн хутаççупа çăпату? 5. Ку пирĕн йалсем, манпа пĕрле çав йалтанах пыраť. 7. Пирĕн пеккисене урăхла йурамасť те хăш чух, кирлĕ мар çĕреле кĕрсе кайатпăр. 8. Пуç тĕлĕнче тахăшĕ йĕрет.

71. Пуплевсене çырса илĕр. Скобкăри ылмашсене кирлĕ вĕçлевре лартăр Çине кĕскен вĕçлев йатне çырăр.

1. Пĕтĕм тĕнчери пролетариат калаť: „Совет сойузĕ вăл—(епĕр) çĕршыв, Мускав—(епĕр) хула, тет. 2. „(Епĕр) трактăрсем парăрччĕ!“ тет йал: тыррине епĕр (вăл) паратпăр“, тет. „(Епĕр) çĕркăмрăкĕ парăрччĕ!“ тесе кăшкăраť савăт: „чугунне епĕр паратпăр“, тет. 3. (Епĕр) партă таса, çирĕп. (Есĕ) партă мĕнле? 4. Вĕрентекен (епĕ) сăвă вуласа тухма хушрĕ, (есĕ) ăна пăхмасăр калама хушрĕ. 5. (Есĕр) йăтă тивмест, епĕ (вăл) хăрамастăп. 6. (Епĕр) ĕне кунне икĕ четвĕрт сĕт параť, епĕр (вăл) лайăх апат çитеретпĕр. 7. Кăçал (епĕ) пиччене Хĕрлĕ çара илчĕç. (Вăл) Ленинграда йачĕç. Епĕр (вăл) час-часах çыру илетпĕр. 8. Ентип малтан ытла та тирпейсĕр çӳретчĕ, (епĕ) (вăл) ларас та килместчĕ. 9. (Епĕ) куçлăхсем çинчен суйа суйса анчах кăтартрĕç. Çӳç пĕрчи чухлĕ те (вĕсем) усси çук, тет упăте. 10. Кам (епĕр) пĕрле? Кам (епĕр) майлă?

## 67 §. Хыççăмахсем.

72. Текстри хыççăмахсене кăтартса тухăр. Вĕçленекен хыççăмахсем пулсан, мĕнле вĕçлеврине, хăш сăпатрине калăр.

1. Епĕр, 6-мĕш отрйадри пионерсем, Совет сойузĕнче мĕнле вĕреннипе ĕçлени çинчен каласа парас тетпĕр. Парти хушнисене пурăнăça кĕртессишĕн пĕтĕм çамрăк вăй çитнĕ таран ĕçлетпĕр... Йут патшалăхри рабочисемпе хресченсен ачисен пурăнăçне тĕплĕн пĕлес килнĕ пирки, епер сирĕн пата çыру çырас тесе шутларăмăр... Хăварăн пурăнăçăр çинчен çырса пĕлтерĕр (*Сӳп.*).

2. Акă Нйу-Йоркри пионерсен вожатăйĕ, Харбер йулташ, пристăнь патĕнче телеграммă çырмали сĕтел çине хăпарса тăрса митинг уçса, сăмах калама тытанчĕ (*Сӳп*).

3. Комсомолĕссем пионерсемпе пĕрле пыраççĕ. 4. Пуйан Павăлран пуçне никам çинчен те шухăшлама пултараймастăп епĕ ку ĕçре. 5. Петĕртен пуçне никам та пултарас çук колхоз правлени председателĕ пулма—çавнах суйлас пулаť. 6. Вĕçĕнет состав хыççăн состав, вакун хыççăн вакун, цистернă (*Ахт.*).

7. Вăрçă хыççăн капиталисăмăн пĕтĕм тĕнчери кризисĕн тапхăрĕ пуçланса кайрĕ. 8. Пĕтсе пыракан капиталисăмлă йĕркепе йунашарах социалисăмла йĕрке уссе, аталанса пыраť. 9. Совет йерки хуçалăха план тăрăх тытса пыраť, план тăрăхах хăйне валльи запассем пухса пыраť. 10. Капиталисам рабочисене хуçисене хирĕç кĕрешесси патне илсе пыраť. 11. Патша カларнă саккунсем тăрăх, рабочисене пур йенчен те хĕсĕрлене. 12. Михĕ хыççăн михĕ, лав хыççăн лав колхоз арманне туртанаť. 13. К. Ç. шкулĕпе урам урлă йăвăçсем ăшне путнă тимĕр витнĕ çуртсем куранса лараççе. 14. Вуншар километр ытла çӳрет рабочи çер айенче. Çер айĕнче етеме хăтаракан тусĕ—хунарпа алаксем. Хунар çутă параť, алаксем витер сывлаш пыраť. 15. Найансем валльи колхозра çакăр татăкĕ те, кетес те пулмала мар. 16. Шур кăкăра çĕмĕрсе пульă тухрĕ ман витĕр.

## 68 §. Пĕтĕçтерӳсем.

73. Малтан пĕр йышши членлă пуплевсене çырса илĕр. Унтан хутлă пуплевсене çырса илĕр. Пĕтĕçтерӳсене айалтан туртăр.

1. — Ăçта çӳрет-ши ку Йакур пичче? Тĕплĕн пĕлесчĕ те, вара епĕ те ун патне вĕçтерĕттĕм,—терĕ Петĕр, Марйепе йунашар ларса.

— Пĕлместĕп. Тухса кайнăранпа киле килсе курман. Те чăн, те суйа тайгара çӳреççĕ, тесе калаçкалаççĕ çынсем,—терĕ Марйе хуллен (*Чал.*).

2. Йе вилĕм, йе пурăнăç пире! (*Кр. Кĕç.*).

3. Епĕ ку кĕнекене васкаса вуларăм, çавăнпа ăна тĕплех ăнланаймарăм. Тепĕринче васкамасăр вулăп, вара аванах ăнланăп. 4. Çуркуние пулас вăхăт та çитнĕ, çапах кунсем сивĕ тăраççĕ-ха. 5. Пайан темле ăнман кун пулчĕ: пĕрре хĕвел йалтăр çутатса йарать, тепре куç-пуç кăлармн çил-тăман килсе сирпĕтет.

4. Суккăр çын нихăçан та картинăсем ӳкерме пултараймасть, мĕншĕн тесен вăл курмасть. Анчах суккăрсем те йапаласене пит хитре тума пултараççĕ. 5. Çак ерешменсем хресченсен, тата рабочисен йунĕпе самăрланса пурăннă. 6. Епĕр çураки кампанийе темиçе те иртернĕ ĕнтĕ, çапах та кăçалхи çураки кампанийĕн хайĕн уйрăмлăхĕсем пур. 7. Совет влаçĕ мĕншĕн-ха колхозсене льготăсем парать, ытларах пулăшать?—Мĕншĕн тесен колхозсене ытларах пулăшни чухăнсемпе вăтам хресченсене пулăшнин чи тивĕçлĕ форми пулать,—тет Сталин йулташ (*Спасăв*). 8. Историре пĕр клас та хайен политикă çулпуçĕсене кăлармасăр пуç пулса тăракан пулман (*Ленин*). 9. Те татăлчĕ теврĕш, те укрĕ лаши— тӳннĕ пек туйăнчĕ пурăнăç урапи: вилчĕ, теççĕ, Ленин (*Ваç.*).

10. Йертсе пырас искусствă—йăвăр ĕç. Йухăмран кайа йулма йурамасть, мĕншĕн тесен кайа йулни—массăсенчен уйăрăлса кайни пулать. Анчах малала чупса кайма та йурамасть, меншĕн тесен малала чупса кайни—массăсемпе çыхăну çухатни пулать. Кам та кам йухăма йертсе пырас тет, тата çав хушăрах мĕлйунлă массăсемпе çыхăнсах тăрас тет, çав çыннăн икĕ фронтпа—кайа йулнисене хирĕç те, малала чупса кайакансене хирĕç те кĕрешес пулать (*Сталин*).

## 69 §. Татăсем.

74. Çакăнти татăсене кăтартса тухăр. Вĕсен пĕлтерĕшĕсене калăр.

1. Днепр шывĕ-и, Дон-и, чараймасть—каçатпăр. (*Пет.*). 2. Ху ывăнна-и, лашу-и—канма вăхăт мар. 3. Кам унта? Буржуй-и?!— Айта, хăвалар! (*Пет.*) 4. Итле-ха! тенĕ Лђавук, пăртак чĕнмесĕр тăнă хыççăн.—Мĕн есĕ? Сана мĕн пулнă? хĕнерĕç-им? Иртсе кайĕ-ха! 5. Ара, есĕ ун чухне ху та килтеччĕçке. 6. Ара, ĕçлеме пуçлама вăхăт ĕнтĕ. 7. Йурать еппин, терĕ Виктăр: ырантанах ĕçлеме тытăнатпăр, терĕ! 8. Пур çĕрте те йан та йан хурçă машинă шавĕ. 9. Пит илемлĕçке пайан çĕнĕ ĕç пуçлавĕ (*Ив. М.*). 10. Пирĕн колхозăн пахча шăп 2 гектар. 11. Пĕвере шыв лап мăй таран. 12. Савăнса хĕпĕртенĕ Варвари Праскийе те каласшăн пулчĕ. Çавăнпа та вăл васкаса кӳршине каçрĕ.

— Праски кин! Мён калам-ши!—тесе сывлăш çавăрнă хыççăн, алăк патĕнчи кутник çине ларчĕ.

— Мĕн тата?!

— Çырахвирен çыру илтĕмĕр. Ухмах ача таçта шыва кайса вилчĕ пулĕ, тесе пурăнатпăр. Мĕн чухлĕ куççуљ тăкмарăмăр-ши уншăн. Шыраман кĕтес йулмарĕ вĕт.

— Хыпар килним?

— Ара. Шкула вĕренме кĕнĕ, тет. Вĕт пăх та калаç ку чухнехи хĕр-упраçпа. Епер ĕлĕк хулана мар, йалтан тухма хăранă. Пĕр пĕччен вĕт, ашшĕ-амăшĕнчен ыйтмасăрах! Мĕн калас тетĕн-ха çавсене! Йĕместĕп ĕнтĕ, çитет, нумай йĕтĕм (*Кр. Ас.*).

13. Пĕрлешсе, ертеллешсе, йулташлă ĕçленипе кăна епĕр çак тĕнче вăрçи хуса кĕртнĕ шăтăкран тухма пултарăпăр (*Ленин*).

14. Уйра та, анкартинче те, кĕлетре те, ăçта колхоз тырри пур, çаванта пур çĕрте те тырра сыхлас ĕçре пионерсен пулăшăвĕ пулмала. 15. Сана çеç пайан кун сума еп сăвап, ес пур хăватран та хăватлă хăват. 16. Кам пĕлмест-ши, кам тўсмен-ши касамат пек пурăнăçа?

### 71 §. Чĕвĕсем. 72 §. Чĕвĕсене тĕрĕс çырасси.

75. Çак пуплевсене çырса илĕр. Чĕвĕсене айалтан туртăр. Вĕсем хыççăн мĕнле паллă лартнине, мĕншĕн ун пек паллă лартнине асăрхăр.

1. И-и, мăнтăр сыснасем! Буржуйсен йăттисем! (*Чал.*).

2. Е-ей! револљуци ыйтать пулăшма.
Е-ей! револљуци хушать çапăçма... (*Кр. Кĕç.*).

3. Ай-ай! Вĕлертĕн вĕт ачана! Вĕлертĕн! тесе арăмĕ тулала виркĕнчĕ (*Труб.*). 4. Ех, мĕн чул, мĕн чул куççуљ вăл тăктарнă çынсене! 5. Ых! Сивĕ. 6. Ай, Ваљук, йепле çитрĕн, ачам? 7. Ну, атăр! Карăмăр! Но-о! тесе тилкепипе туртрĕ бригадир лашине. Но, ата!... Ну, Ваçка!... Ата, Маљкă! тенĕ сасăсем.

9. У-ух! Йара пар!
Шерепине мана пар!
Упăшкасенчен йулас мар,
Ăмăрту йалавне пăрахас мар! (*А. Пач.*).

10. Ах, хăрушă! 11. Ой! Темскер пур!

12. Ай-у-уй! Мĕн ку? Йероплан çĕр çийĕпе чупать. Е-ех, çунатти-ши?... çаврăна-ать.

13. Ей çĕршыв, йанăра, кĕрле! (*Ахт.*).

### 73 §. Йевĕрлев сăмахĕсем. 74. Иевĕрлев сăмахĕсене тĕрĕс çырасси.

76. Иевĕрлев сăмахĕсене кăтартса, вĕсене мĕне йевĕрлесе каланине, мĕнле çырнине асăрхăр.

1. Шатăрт! тăвайса турат хуçăлать (*Елк.*).

2. Лăст та ласт! хура çўç пуçне (*Елк.*).

3. Ачасем хĕпĕртенипе йалт-йалт! сиккелеççĕ.

4. Çĕрле. Кĕрлеттерсе аслати аватать, тупă пенĕ пек, шарт та шарт! тутарса аçа çапать. Тĕттĕм сывлăш ăшĕнче йăлтăр та йалтăр çиçĕм вучĕсем вĕри çĕлен пек йавкаланса вĕçсе илеççĕ...

Ши-и-и! туса, çил çанталăкпа туллашаť (*Чал.*).

5. Ту-у-у-у!... шурă пăс кăларса савăт çухăраť.

— Хашт! хашт! хашт! хашт! савăт ĕçлег.

— Чаш! чаш! чаш! чаш!... Пăчкăсем сикнĕ майĕпе йăвăçĕ хăйех куçса пыраť.

6. Вăрнар станцийĕ. Вокзал çурчĕ.

— Тут-тут! Хăш-хăш! хăш-хăш-ш-ш! пăш-ш-ш! чарăнчĕ правус. Шăнкăр-шанкăр! Шăнкăр-шанкăр! перĕнчĕç пĕр-пĕрне буферсем.

7. Правус хуранĕ чашларĕ сывлăшпа. Урописем хускалчĕç вăй илсе. Пĕренесем, вут сыпписем сирĕлчĕç çул çинчен. Халăх никам йулмарĕ ирĕке.

— У-у-у-у-у! кăшкăртрĕ правус савăнса. Унăн сасси йанрарĕ вăрмана. Хуллен те çинçен çухалчĕ катана.

— Тăпăрт-тăпăрт! тăпăрт-тăпăрт! ташларĕç вакун урописем правус хыççăн.

— Ши-и-и! шăхăртса кăна йулчĕ тимĕр çул.

Сарă йаштак хырсем пуç тайрĕç пуйăса. Кăтрапуçлă хурăнсем авăнчĕç пилĕкрен. Çатăлти ăвăссем ала çупрĕç савăнса.

— Ырă çул пултăр! Ырă çул пултăр!—ырă сунчĕç пуйăса.

— У-у-у-у-у! тав турĕ правус тепĕр хут. Унăн сасси каллех йанратрĕ вăрмана. Каллех хуллен те çинçен çухалчĕ катана.

---

## КАЙРАН КАЛАНИ

Çак чăваш челхи грамматикин „Морфологине" ЧАССР Халăх çутĕç комиссариачĕ 5-мĕш вĕренӳ çулĕ валљљи 1933-мĕш çул туса йышăннă тăван чĕлхе программи тăрăх çырса кăларнă. Анчах ку кĕнекере программăран уйрăммисем те пур. Вĕсем пуринчен ытла программăри грамматикă материалне çирĕпрех çиçтемăна кӳнинчен килнĕ.

Чăваш шкулĕнче чăваш чĕлхи грамматикине, тата вырăс чĕлхи грамматикине вĕренеççĕ. Чăваш чĕлхипе вырăс чĕлкинче пĕр пек пулăмсем, пĕр пек тапхăрсем пур. Çак икĕ грамматикăна вĕренес ĕçе çăмăллатас тесе, икĕ чĕлхенĕн пĕр пек тапхăрĕсене вырăс шкулĕсенче вырăс чĕлхине вĕрентме йышăннă *А. Б. Шапиро* „Грамматика. Часть первая—Морфология" йатлă кĕнекипе килĕштерсе çырма тăрăшнă.

Хăнăхтару материалĕсене пухас ĕçре Т. П. Парамонăвпа А. В. Василйĕв йулташсем хутшăнса ĕçленĕ.

1933-мĕш çул, çентабĕр.

*Автăрсем*

---

## *АВТĂРСЕН ФАМИЛИСЕНЕ КĔСКЕН ÇЫРНИ.*

Агакăв—*Аг.*
Алакĕр—*Ал.*
Ахтупай—*Ахт.*
Васанкка—*Вас.*
Елкер—*Елк.*
Иванов К. В.—*К. Ив.*
Йакăвлĕв—*Йак.*
Краснов (Кĕç.)—*Кр. Кĕç*
Лашман—*Лаш.*
Мĕтри Васлейĕ—*М. В.*
Митта В.—*Мит.*
Митрофанăв—*Митр*
Петтоки—*Пет.*
Спасăв Л. С.—*Сп.*
Сӳпинкке—*Сӳп.*
Çавас—*Çав.*
Тукташ—*Тук.*
Трубина—*Труб.*
Уйăп Мишши—*Уйăп.*
Ухсай—*Ух.*
Чалтун—*Чал.*
Шелепи—*Шел.*

## „Морфологири“ хӑш-пӗр терминсем.

асӑрхамали—примечание.
аслӑ член—главный член.
ӑнлантару сӑмахӗ — пояснительное слово.
вак сумӗсем—дробные числительные
валеҫӳ сумӗсем—разделительные числительные.
вӑйлӑ паллӑ йачӗсем—прилагательные превосходной степени.
вӗҫлев—падеж.
вӗҫле—склонять.
вӗҫленӳ—склонение.
вырӑн вӗҫлевӗ—местный падеж.
ӗмӗт форми — условно - желательная форма.
ӗҫхӗл—глагол.
ӗҫхӗл ҫумӗ—наречие.
ӗҫхӗлтеш—деепричастие.
иккӗмӗшле сӑмах—производное слово.
ирӗклӗ паллӑ йачӗ—самостоятельное прилагат. (с аффикс. 3 л.).
ирӗклӗ пайташ—самостоятельное причастие (с аффикс 3 л.).
иртнӗ вӑхӑт—прошедшее время.
иртнӗ пайташ—прошедшее причастие.
иртнӗ умӗнчи вӑхӑт—предпрошедшее время (предварительное прош.).
йалан йанӑракан хупӑ сасӑсем — сонорные согласные.
йанӑравлӑх—звонкость.
йанӑракан хупӑ сасӑ—звонкий согласный.
йанӑраман хупӑ сасӑ—глухой согласный.
йапала йачӗ—имя существительное.
йат вӗҫлевӗ—именительнй падеж.
йатмар вӗҫлев—косвенный падеж.
йат пуплев—назывное предложение.
йевӗрлев—подражание.
йевӗрлев сӑмахӗсем—подражательные слова.
йӗрке сумӗсем — порядковые числительные.
йут сӑмахсем—чужие слова.
калав—глагол.
калав ҫумӗ—пояснительное слво к сказуемому (примыкание к сказуемому).
калаҫу органӗ—орган речи.
калу—выражение, изречение.
калулӑ пуплев — повествовательное предложение.
камӑннине пӗлтерекен формӑсем—притяжательные формы.
камӑнлӑх вӗҫлевӗ—родительный (притяжат.) падеж.
кӑтарту ылмашӗ—указательное местоимение.
кӑшкӑру палли—восклицательный знак.
кӑшкӑрулӑ пуплев—восклицательное предложение.
кӗске йӗр—черточка.
кӗске формӑ—краткая форма.
кӗҫӗн член—второстепенный член.
килӗшӳ ҫыхӑнӑвӗ—связь согласования.
килӗшӳ форми—уступительная форма.
курса иртнӗ вӑхӑт—прошедшее очевидное.
курмасӑр иртнӗ вӑхӑт—прошедшее неочевидное.
кӳртӗм—введение
мӑшӑрлӑх—парность.
мӑшӑр сӑмах—парное слово.
мӗнелӗх—назначение.
мӗнлелӗх—качество.
мӗнлев—определение.
нумайпӑнчӑ—многоточие.
нумайлӑ хисеп—множественное число.
пайӑр йат—собственное имя.
пайташ—причастие.
паллӑ йачӗ—имя прилагательное.
паллӑмар ылмаш—неопределенное местоимение.
пару вӗҫлевӗ—дательный падеж.
пӑнчӑ—точка.
пӗлтерӗш—значение.
пӗррелӗ хисеп—единственное число.
пӗрпулу вӗҫлевӗ—совместный (творит.) падеж.
пӗтӗмлетӳ—обобщение.
пӗтӗмле формӑ—общая форма.
пӗтӗҫтерӳ—союз.
пирке—причина.
пулас вӑхӑт—будущее время.
пулас пайташ—будущее причастие.
пулмала пайташ—причастие долженствования.
пулӑм—явление, событие.
пулӑшу ӗҫхӗлӗ—вспомогательный глагол.
пуплев—предложение.

пуплевле хуҫа—предложениеподобное подлежащее.
пуплевле член—предложениеподобный член.
пурлӑ формӑ—положительная форма.
пусӑм—ударение.
пуҫламӗш формӑ—начальная форма.
сасӑсен йунашарлӑхӗ—сочетание звуков.
сасӑсен килӗшӗвӗ—гармония звуков, сингармонизм.
сасӑсем пӗрпекленни—уподобление, ассимиляция звуков.
сасӑсем ылмашни—чередование звуков.
сӑмах майлашӑвӗ—словосочетание.
сӑмах тӗпӗ—основа слова.
сӑмах сыпӑкӗ—аффикс.
сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ—связь между словами.
сӑмах татӑкӗ—слог.
сӑмахсен ушкӑнӗ—часть речи.
сӑпат—лицо.
сӑпатла—спрягать.
сӑпатлав—спряжение.
сӑпат сыпӑкӗсем—личные аффиксы (имен и глаголов).
сӑпат ылмашӗ—личное местоимение.
сунӑм—желание.
сум йачӗ—имя числительное.
сыпӑк—приставка, аффикс.
ҫемҫе сӑмах—мягкозвучное слово (с гласными переднего ряда),
ҫемсе уҫӑ сасӑ—мягкий гласный (гл. переднего ряда).
ҫуклӑ формӑ—отрицательная форма.
ҫуклӑ ылмаш—отрицательное местоимение.
ҫум—примыкающий второстеп. член (к имени и глаголу).
ҫум ҫыхӑнӑвӗ—связь примыкания.
танлаштару форми—сравнительная форма.
татӑ—частица.
татӑк—слог.
тӑву вӗҫлевӗ—винительный падеж.
тӗллев—цель.
тӗп вӗҫленӳ—основное склонение.
тӗп сӑмах—простое слово.
тӗслӗх—пример, образец.
тулли пуплев—полное предложение.
туллимар пуплев—неполное предложение.
тулли формӑ—полная форма.
туху вӗҫлевӗ—исходный падеж.
тытӑнсатӑран—управляемое слово.
тытӑм ҫыхӑнӑвӗ—связь управления.
чарӑну палли—знак препинания.
чӗвӗ—междометие.
уҫӑ сасӑ—гласный звук.
уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ—парность гласных.
уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ—гармония гласных.
уҫӑмлӑ ылмаш—определительное местоимение.
хаҧхи вӑхӑт—настоящее время.
хаҧхи пайташ—настоящее причастие.
хаҧхи умӗнчи вӑхӑт—преднастоящее вр., прошедш. многократное.
хупӑ сасӑ—согласный звук.
хуҫа—подлежащее.
хуҫасӑр пуплев—безличное предложение.
хутлӑ пуплев—сложное предложение.
хутлӑ сӑмах—сложное слово.
хутӑш сӑмах—разнозвучное слово.
хушу форми—повелительная форма.
хӳрелӗ пӑнчӑ—запятая.
хыҫсӑмах—послелог.
хытӑ уҫӑ сасӑ—твердый гласный (гл. заднего рода).
хытӑ сӑмах—твердозвучное слово (с гласн. заднего рода).
ыйту палли—вопросительный знак.
ыйтулӑ пуплев—вопросительное предложение.
ыйту ылмашӗ—вопросительное местоимение.
ылмаш—местоимение.
шут сумӗсем—количественные числительные.

# ТУПМАЛИ


Кӳртӗм . . . . . . . . 3

Пуплев.

1 §. Пуплев ҫинчен кӗскен калани. 3
2 §. Пуплев уйрӑмӗсем . . . . 4
3 §. Пуплевсем хыҫҫӑн чарӑну палли лартасси . . . . . 5
4 §. Пуплевӗн хуҫипе калавӗ . . . 6
5 §. Ӑнлантару сӑмахӗсем . . . . —
6 §. Пуплеври сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ 7
7 §. Тулли пуплевпе туллимар пуплев . . . . . . . . 7
8 §. Хуҫалӑ пуплевпе хуҫасӑр пуплев . . . . . . . . . 8
9 §. Йат пуплев . . . . . . . —
10 §. Хутсӑр пуплевпе хутлӑ пуплев —
11 §. Хутлӑ пуплевсене тӗрӗс ҫырасси . . . . . . . . . 9

Сӑмах.

12 §. Сӑмахсен пӗлтерӗшӗ . . . . 9
13 §. Сӑмахсен пӗлтерӗшлӗ пайӗсем: а) хутсӑр сӑмахсем, ик хут калакан сӑмахсем, мӑшӑр сӑмахсем, б) сыпӑксӑр сӑмахсемпе сыпӑклӑ сӑмахсем . . . . 10
14 §. Сӑмахсене тӗрӗс ҫырасси . . 12

Фонетикӑ.

15 §. Сасӑсем. Алфавит . . . . . 12
16 §. Уҫӑ сасӑсемпе хупӑ сасӑсем 13
17 §. Сӑмахри сасӑсен килӗшӗвӗ: а) Хытӑ уҫӑ сасӑсемпе ҫемҫе уҫӑ сасӑсем . . . . . . . 14
б) Хытӑ сӑмахсемпе ҫемҫе сӑмахсем . . . . . . . . . —
в) Уҫӑ сасӑсен мӑшӑрлӑхӗ . 15
г) Хупӑ сасӑсен хытӑлӑхпа ҫемҫелӗх мӑшӑрлӑхӗ . . . . 16
18 §. Ианӑракан хупӑ сасӑсемпе йанӑраман хупӑ сасӑсем . . . —
19 §. Сасӑсем пӗрпекленни . . . . 18
20 §. Сасӑсен йунашарлӑхӗ . . . . —
21 §. Хупӑ сасӑсем вӑрӑмланни . . 19
22 §. Сасӑсем ылмашни . . . . . 20
23 §. Сӑмах татӑкӗсем . . . . . 20
24. §. Сӑмах пусӑмӗсем . . . . . 21
25 § Сасӑсен уйрӑмлӑхӗсенчен килекен орфографи правилисем.

Морфологи.

26 §. Сӑмах ушкӑнӗсем ҫинчен кӗскен калани . . . . . . . . 22

Йапала йачӗсем.

27 § Йапала йачӗсем ҫинчен кӗскен пӗтӗмлетсе калани . . 23
28 § Вӗҫлевсем. Вӗсен пӗлтерӗшӗ . —
29 §. Йапала йачӗсен тӗп вӗҫленӗвӗ. 26
30 §. Вӗҫленӳри тӗрлӗ уйрӑмлӑхсем. 27
31 §. Йапала йачӗсен камӑннине пӗлтерекен форми . . . . 28
32 §. Сӑпат сыпӑкӗсем йапала йачӗ тӗпӗсемпе мӗнле пӗрлешни . 31
33 §. Сӑпат сыпӑклӑ йапала йачӗсем вӗҫленни . . . . . . . —
34 §. Йапала йачӗ тӑвакан сыпӑксем . . . . . . . . . . 32

Ӗҫхел.

35 §. Ӗҫхелсем ҫинчен кӗскен пӗтӗмлетсе калани . . . . . . . 33

Ӗҫхелсем сӑпатланни.

36 §. Хаљхи вӑхӑт . . . . . . . 34
37 §. Пулас вӑхӑт . . . . . . 35
38 §. Курса иртнӗ вӑхат . . . . 36
39 §. Курмасӑр иртнӗ вӑхӑт . . . . 37

ЧӖ сыпӑк хутшӑннипе пулнӑ вӑхӑтсем.

40 §. Хаљхи умӗнчи вӑхӑт. . . . 38
41 §. Иртнӗ умӗнчи вӑхӑт . . . . 39
42 § Ӗмӗт форми . . . . . . . —
43 §. Килӗшӳ форми . . . . . . 40
44 §. Хушу форми . . . . . . . 41
45 §. Чӗ сыпӑк тӗрлӗ ушкӑнри сӑмахсенче хутшӑнни . . . . 44
46 §. Ӗҫхел тӑвакан сыпӑксем . . —
47 §. Ҫумсем. . . . . . . . . . 45

### Паллă йачĕсем.


48 §. Паллă йачĕсен уйрăмĕсемпе вĕсен пĕлтерĕшĕсем . . 46
49 §. Паллă йачĕсен пуçламĕш формипе вăйлă форми . . . . 47
50 §. Паллă йачĕсен танлаштару форми . . . . . . . . . 48
51 §. Паллă йачĕсем вĕçленни çинчен . . . . . . . . . . 49
52 §. Паллă йачĕсене тăвакан сыпăксем . . . . . . . . 49
53 §. Пайташсем . . . . . . . —
54 §. Виççĕмĕш сăпат сыпăкĕпе скер сыпăка йышăннă формăсем . . . . . . . . . 51


### Ĕçхĕл çумĕсем.


55 §. Ĕçхĕл çумĕсен уйрăмĕсемпе вĕсен пĕлтĕрĕшĕсем . . . 52
56 §. Ĕçхĕл çумĕсен пулăвĕ . . . —
57 §. Еçхĕлтешсем . . . . . . 53


### Сум йачĕсем.


58 §. Сум йачĕсен уйрăмĕсемпе вĕсен пĕлтĕрĕшĕсем . . . 55
59 §. Шут сумĕсен пулăвĕ . . . —
60 §. Йĕрке сумĕсен, валеçӳ сумĕсен, вак сумĕсен пулăвĕ . . 57
61 §. Сум йачĕсем сăпат сыпăкĕсене йышăнни . . . . . . . —
62 §. Сум йачĕсен пуплеври вырăнĕ, тата вĕсем вĕçленни . . 58
63 §. Сум йачĕсене тĕрĕс çырасси. —


### Ылмашсем.


64 §. Ылмашсен уйрăмĕсемпе вĕсен пĕлтерĕшĕсем . . . . . . 58
65 §. Ылмашсен пуплеври вырăнĕ. 60
66 §. Ылмашсем вĕçленни . . . . —


### Хыççăмахсем.


67 §. Хыççăмахсен пулăвĕпе пĕлтерĕшĕ . . . . . . . . 61


### Пĕтĕçтерӳсем.


68 §. Пĕтĕçтерӳсен пĕлтерĕшĕ . . 63


### Т а т ă с е м.


69 §. Татăсем мĕне пĕлтерни . . 64
70 §. Татăсене тĕрĕс çырасси . . 65


### Ч ĕ в ĕ с е м.


71 §. Чĕвĕсен пĕлтерĕшĕ . . . . 65
72 §. Чĕвĕсене тĕрĕс çырасси . . 66
73 §. Йевĕрлев сăмахĕсем . . . . —
74 §. Йевĕрлев сăмахĕсене тĕрĕс çырасси . . . . . . . . . 67
Кайран калани . . . . . . . . 103
Автăрсен фамилисене кĕскен çырни. . . . . . . . . . . —
Морфологири хăшпĕр терминсем . 104


---


Редактор В. Егоров. Техредактор Н. Степанов
Корректуру вели Н. Андреев и М. Алексеев.
Поступило в производство 26/IX 1933 г. Подписано к печати 17/X—1933 г.
Уп. Чувашлита № 1687. Чувашгиз № 181. Заказ № 892. Тираж 25.000 экз.
Инд. У—2. Ст. ф. б. 62×94/16 Об'ем 6,75 п. л. 73.723 зн. в п. листе.

Отпечатано в типографии № 1 Чувашгиза, г. Чебоксары, Канашская, 16.

Цена 1 руб.
Переплет 35 к.

8107
Чув.
3-157/1

Т. М. МАТВЕЕВ и Ф. Т. ТИМОФЕЕВ

**Грамматика чувашского языка**

Часть I. Морфология

5-й год обучения

Чувашгиз 1933 Чебоксары